84.09
К Х98
151343

Петр Хузангай

# ЧӖРЕ ЮРРИ

Национальная библиотека ЧР
00151343
...ЕРЕНО
1959
151343

ПЕТĔР ХУЗАНКАЙ

ПРОВЕРЕНО
20 ю

Х9 Д

# ЧĔРЕ ЮРРИ

*Сăвăсемпе поэмăсем*

15/343 обяз.-экз.

ПРОВЕРЕНО
20 07 СЕН 2017

Чувашская
Государственная
БИБЛИОТЕКА
им. Н. Гоголя

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1952

## *И. В. СТАЛИНА*

*Пур халăх кĕтнĕ паттăртан—пĕр паттăр.*
*Пĕр вăй пулса эс килтĕн тĕнчене.*
*Санра этемлĕх шанчăкне куратпăр,*
*Санра куратпăр Çĕрĕн телейне.*

*Ĕмĕртенпе пуçтарăннă ăс-хакăл*
*Сан сăмаху пулса халь çĕнелет;*
*Сан куçунта йăлтăртатать ялан вăл,*
*Хĕвел пек сарăлать пур еннелле.*

*Ытараймасăр, юратса, хаваслăн*
*Сана пурин те тав тăвас килет.*
*Мĕнпур калас сăмахсенчен те аслă*
*Пире эс панă ырлăхпа тивлет.*

*Пур халăх та хăй чĕлхипе „эс пурăн!*
*Эс пурăнсан—эп сывă!“ тет сана.*
*Чи витĕмлĕ, чи пархатарлă юррăн—*
*Чĕре юррин чĕри—пĕр эс кăна.*

*Историе санпа кĕрет çак тапхăр:*
*Ку—Сталин самани!—тет халь тĕнче.*
*Сана сума сăватпăр, аслăлатпăр*
*Пур аслă çутçанталăк умĕнче.*

*Сан пурнăçу вăл—çĕнтерӳ кун-çулĕ,*
*Эс сыпăнтартăн ĕмĕтĕмĕре.*
*Асран кайми яту мухтавлă пулĕ*
*Кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех!*

СТАЛИНШĂН,
ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН,
МИРШĔН!

## Халăхсен Ашшĕне

Çеçенхир илемĕ—
Шур сухаллă аккăн,
Чăнкă сăртлă-туллă
Аулти ашуг
Саншăн чи янравлă
Юрăсем хурасшăн,
Унтан пысăк чыс та,
Савăнăç та çук.

Сивĕ-сивĕ тинĕс
Хĕрринчи сунарçă,
Ăшă-ăшă тумлă
Ватӑ кайăкçă,
Пулăçă та—пурте
Сана ыр сунаççĕ:
„Çĕр çул мар, пин çул вăл
Пурăнайĕнччĕ!“

Çӳпçере усраннă
Çутă кĕмĕл майлă
Авалхи былина
Кĕввисем çумне
Карчăксем хушаççĕ
Çамрăк чунхавallă—
Саншăн халаланӑ
Çĕнĕ çеммине.

Пархатарлă Грузи
Янратать чонгури,
Кăмăллă Карели
Кантеле калать,

Ылттăн Украинăн
Ĕмĕрхи бандури,
Туркменсен дутарĕ
Сан ятна мухтать...

Эп те уçă саслă
Кĕслеме тытам-и,
Ĕнерсе пăхам-и
Хĕрĕх хĕлĕхне.
Ирĕк тăван халăх
Ячĕпе мухтам и
Халăхсен юратнă
Аслă Ашшĕне!

1951

## Вата колхозник юрри

Халиччен эп Мускавра пулманччĕ,
Сарлака иккен урамĕсем!
Пинĕн-пинĕн кĕрлесе чупаççĕ
Утсăрах капмар ураписем.

Халиччен эп Кремльре пулманччĕ,
Кисренми иккен ун хӳмисем,
Пилĕк юплĕ çăлтăрсем çунаççĕ
Сӳнми шанчăк евĕр хĕмленсе.

Эп мавзолее кĕрсе курманччĕ,
Тахçанах асра пулсассăн та:
Çап-çутах-мĕн Ленин сăн-сăпачĕ,
Тĕрĕс шухăш евĕр çап-çутах.

Халиччен эп Сталина курманччĕ,
Ĕмĕтре пурнаттăмччĕ савса.
Халь мана çулпуçăм ала пачĕ—
Пĕр-пĕрне нихçан та манмасса.

1933

## Тавтапуç

Тавтапуç сана, юратнӑ Сталин!
Сан тивлетӳпе эпир пуян.
Пирӗн халӑх, ыттипе пӗр танлӑн,
Саламлать сана пӗтӗм чунтан.

Тавтапуç, ӗççыннисен çулпуçӗ!
Сан ӑс-халупа çӗршыв тӳлек.
Халь пире пур алӑк та яр уçӑ,
Ӗмӗтсем çунатлӑ кайӑк пек.

Тавтапуç сана, пур халӑх тусӗ!
Эс пире çӗклерӗн тӑванла.
Халӑхсен пӗр шухӑшлӑ Союзӗ
Арканми тӗреклӗ санпала.

Тавтапуç, çарпуçӗ, аслӑ маршал!
Сан хастарупа эпир хастар.
Çак телейлӗ çутӑ саманашӑн
Пӗр салтак пекех тӑратпӑр кар.

Тавтапуç, Çӗр кӗтнӗ Улӑп паттӑр,
Пирӗн шанчӑк, тус, вӗрентекен!
Сан сӑмахупа çӗнсе пыратпӑр,
Сан яту тухмасть чӗресенчен.

Тавтапуç! Пур халӑх та хӑй майлӑн
Çавӑрса юрлать халь çак юрра.
— Тавтапуç сана, мухтавлӑ Сталин!—
Тӗнчипех янра, янра, янра!

1935

## Мухтав аслă Ленина!
## Мухтав аслă Сталина!

Тĕнĕрен хĕвел кĕрсе курман,
Çутатман;
Кĕреке туман пире кăна.
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Ленина!
Çутă, тутă пурнăçшăн чунтан
Мухтав аслă Сталина!

Пирĕн юрă тĕнчене тухман,
Янраман,
Макăрашнă çырмара кăна.
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Ленина!
Халь йĕри-тавра вăл кайрĕ ян:
Мухтав аслă Сталина!

Саплăк пекчĕ тупăшсăр ана,
Выç ана,
Хытхура хупланăччĕ ăна.
Халь йăрансăр тулă хумханать:
Мухтав аслă Ленина!
Халь йăрансăр тулă хумханать:
Мухтав аслă Сталина!

Хамăр ял та ютчĕ хушăран,
Тарăхсан;
Вăрмана тартатчĕ самана.
Халь пире пур халăх та тăван,
Мухтав аслă Ленина!
Халь пире пур халăх та тăван,
Мухтав аслă Сталина!

Кунсерен ҫӗршыв хӑватланать.
Асланать,
Ырлӑхне сарать пур таврана.
Ҫӗр чӗлхе пӗр саслӑн янратать:
Мухтав аслӑ Ленина!
Ҫӗр чӗлхе пӗр саслӑн янратать:
Мухтав аслӑ Сталина!

1940

## Суйлавра

Çитейрĕç киле салтаксем.
Янрать котелок шăнкăр-шанкăр.
— Ыр курччăр ачам-пăчамсем!—
Тесе сасă пачĕ ак паттăр.

Мĕн илнĕ ĕçпе, хĕçпеле,
Тертпе, тӳсĕмпе илнĕ эпĕр—
Çав пурте паян кĕмелле
Пĕр хамăр çурта, иксĕлмесĕр.

Çаплах вăл пулать, ĕненсен:
Пур халăхпала шанса лартнă
Советăмăра кĕрекен
Хĕçе пăшала намăслатмĕ.

Чĕре варрине чи малтан
Пĕр ят çырса хутăмăр анлăн.
Çав ят çулăмра та çунман,
Шыврa та пире путарман,
Çĕнтертĕмĕр çав ятпалан:
Вăл—Сталин.

1946

## Çамраксен маршĕ

Вутран та шывран эпир тухрăмăр сыввăн,
Çĕнтертĕмĕр, Сталин чĕнсен.
Паян ĕçпеле çĕнтеретпĕр—çĕршывăн
Хастарлă, патвар ачисем.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр—
Комсомолла!

Эпир çĕнĕрен хуласем ÿстеретпĕр,
Лартатпăр садсем пушхирте.
Эпир ту вататпăр, шыва пĕвелетпĕр,
Штурмлатпăр кăвак пĕлĕте.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр—
Комсомолла!

Эпир вăл Матросов, Гастелло та Зоя,
Стаханов, Российский—эпир.
Эпир—çамрăк гварди, малашлăх геройĕ,
Пире ыранхи çутă ир.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр—
Комсомолла!

1947

## Студентсен ăсату юрри

Шăнкрав пире шăнкăртатса
Тек йыхăрмĕ хаваслăн.
Анчах çав усă, ян сасса
Нихçан та эс манаймăн.

Атăл, Днепр е Нева
Илĕртет куçа—
Пĕлĕте, çĕре, шыва
Халь эпир хуçа!

Сасартăк уçăлчĕ хапха,
Умра çул йышлă пирĕн.
Ку та паха, леш те паха,
Суйла та ут: эс—ирĕк.

Пĕрне-пĕри телей сунар,
Яш ĕмĕт çутă пултăр.
Аслисене асрах тытар:
Тавах, пире çын турăр!

Ан тив, ан илтĕнтĕр пире
Хавас шăнкрав йыхравĕ:
Асра вăл юлĕ ĕмĕре,
Вăл—çамрăклăх шăнкравĕ.

Атăл, Днепр е Нева
Илĕртет куçа—
Пĕлĕте, çĕре, шыва
Халь эпир хуçа!

1948

## Пурлăх юрри

Хумхан, йăрансăр тырă-пулă,
Çĕклен çĕмел çумне çĕмел.
Хуна, нумай пучахлă тулă,
Çĕнелнĕçем, çĕршыв, çĕнел.
Хăватлă улăп çарĕ евĕр
Çĕклен капан çумне капан.
Ан тив, тертлентĕр, вĕчĕрхентĕр
Пире ютран юнан тăшман.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

Кашла, çеçенхирти юманлăх,
Ан яр тип çиллĕ шăрăха.
Çанталăка çĕнтерчĕ халăх,
Тĕп турĕ сĕмсĕр выçлăха.
Кĕрле, шавла, пар çутă, Атăл,
Пĕрлеш, уй-хир, ӳс, ял-хула.
Ватти—яшлан, яшши—ан ватăл,
Тесе юрлар çултан çула.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

Тивĕçлипе кĕрсе ларатпăр—
Пĕр тан телей кĕрекине,
Куç пек курка ăсса йăтатпăр
Пĕрлешнĕ ĕç перекетне.
Ешер, ешер тулли пахча пек,
Юратнă çĕрĕмĕр, ялан.
Совет çыннин мухтавĕ-чапĕ
Пурне те курăнать таçтан.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

1948

151343.

## Мухтав юрри

Ялтан та яла, хуларан хулана
Янра, юрӑ, пур таврана.
Мухтатпӑр чи ҫывӑх, юратнӑ ҫынна,
Ҫӗршыв ҫуттине—Сталина.

Санпа эпир тухнӑ вутран-ҫулӑмран,
Ҫӗнтернӗ мӗнпур асапа.
Ялан эс асра, чӗрере эс ялан,
Телейлӗ пур халӑх санпа.

Тайма пуҫпалан, пур таса кӑмӑлтан
Сунатпӑр чи савӑк кун-ҫул:
Ҫулпуҫӑмӑр, тусӑмӑр, аслӑ тӑван,
Чакми вӑрӑм ӗмӗрлӗ пул!

Ӗҫпе те хӗҫпе, юнпала, чунпала
Сана эпир тунӑ тупа.
Чул урлӑ, хум урлӑ малтан малалла
Утать харсӑр халӑх унпа.

Мӗнпур ӗҫ тӗнчи ҫӳлерен ҫӳлерех
Ҫӗклет сан таса ялавна.
Ҫултан та ҫула, ӗмӗртен ӗмӗре
Янратӑр мухтав Сталина!

1949

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

## Таван çĕршыв

*(Лебедев-Кумач кĕввипе)*

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Çын пырать—маттур, ĕçчен те харсăр—
Ленин—Сталин уçнă çулпала.
Çын пырать, чăрмав-мĕнне пăхмасăр,
Кунсерен малтан та малалла.
Пĕринчен тепри хăватлă тинĕс,
Сăрт-тусем—кăвак тӳпе таран.
Ĕмĕрхи вăрманăмăр сип-симĕс,
Çеçенхир вĕçне никам курман...

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Ман çĕршывăн анлăшне тухмашкăн
Çăмăл мар çунатлă кайăка.
Ирĕк çын хастарлăн та сулмаклăн
Кайăкран та кайрĕ аякка.
Пăрлă тинĕс парăнчĕ сăмахсăр,
Пушхирсем ешерчĕç пахчалла.
Тăшмана тĕп турĕ ирĕк паттăр,
Асăнтарчĕ ĕмĕр манмасла.

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.

Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Варкăшать çӳлте çĕршыв ялавĕ
Таврана хĕвел пек çутатса.
Ирĕк çыннăн вилĕмсĕр мухтавĕ
Çĕнтерӳ ялавĕ пек таса.
Çын пырать—маттур, ĕçчен те харсăр—
Ленин—Сталин уçнă çулпала.
Çын пырать, чăрмав-мĕнне пăхмасăр,
Çывхарса килен Коммуналла.

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

1949

## Кěреке юрри

Тěтре-и, хура пěлěтсем-и,
Çут çăлтăр сӳнмест тӳпере.
Октябрь уявěн илемě
Ялан ялтăрать чěрере.

Сив çил-и, пăрланнă тумхах-и,
Хаваслăх çěклет кăмăла.
Çунать хуранайěн вучахě,
Хăна пухăнать каçпала.

Ěçлерěмěр ěç, ывăнмасăр,
Уйра тěттěмччен хăш чухне.
Курка туллирех тултарсамăр,
Пěрремěшě—Сталин ятне!

Антив, тапхăр-тапхăр кěрлетěр
Çанталăк тăман кăларса.
Тепрер тултарар-ха, пěртен-пěр
Тăван партие тав туса!

Вара, пěр çавра юрласассăн,
Тултарăпăр виççěмěшне.
Ăна эпир çěклěпěр танлăн—
Çуралнă çěршыв телейне!

1949

## Эпир Российăра пурнатпăр

Салтак винтовкине çакса,
Нумай çĕре эп çитсе куртăм.
Ăшра—нихçан та манмасса—
Пурнатчĕ пĕр хăватлă туртăм.
Ăна сисетĕн пĕрмаях—
Хаваслă-и, хаяр-и тапхăр.
Ăна пĕлтерĕ виç сăмах:
Эпир Российăра пурнатпăр.

Ют пылчăк ерчĕ те атта
Часах хăпса ӳксе тасалчĕ.
Кирек хăçан, кирек ăçта
Тăван çĕршывăмăр асраччĕ.
Асраччĕ кăмăллă чĕлхе,
Ун илемне ăçта туятпăр?
Ĕмĕртенпе, ĕмĕрлĕхе
Эпир Российăра пурнатпăр.

Сенкер куçпа çиçен славян—
Ачаранпах мана вăл çывăх.
Вырăспала эп пĕр тăван,
Ун хӳттипе хальччен эп сывă.
Çĕршывăмшăн унпа танах
Хăюллă пултăм, пултăм паттăр.
Ăшра янратчĕ яланах:
Эпир Российăра пурнатпăр!

1950

# Аслă çулпа

*(Чăваш АССР 30 çулне)*

Паян эс историн мăн çулĕ çинче
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен.
*Халăх поэчĕ С. Эльгер.*

Вăтăр çул... Вăйпитти этем пек
Эс тăратăн, çуралнă çĕршывăм.
Нихăçан та кун пек илемпе
Çĕкленменччĕ эс паттăррăн, сыввăн.

Вăтăрта вăтăр ĕмĕр таран
Ярса пусрăн эс, ирĕклĕ халăх.
Ăс-халу та, мулу та паян
Сахал мар çынсене кăтартмалăх.

Кӳршĕпе, тус-йышпа пĕр канашлăн
Эс ларан кĕреке хушшине.
Чунунти сăмахна эс калатăн,
Асăнан чи паха ятсене.

Ачаран чăваша курса ӳснĕ
Аслă Ленин асра чи малтан.
Ачаран йывăр тансăрлăх тӳснĕ
Аслă Сталин паян санпалан.

Çулпуççем, пуринпе тан туса,
Кĕреке варринех сана лартрĕç.
Пуянсем сана, юттăн курса,
Ĕмĕрсен тăршшĕне мăшкăллатчĕç.

Çĕлĕкне хул айне хĕстерсе,
Тĕпеле иртеймесĕр тăраттăн.

Тӳсейми ҫиллӳпе кӗвӗлсе,
Час-часах пӑтӑрмах тапрататтӑн.

Вырӑспа юнашар кар тӑрса,
Виҫӗ хут революцие тухрӑн.
Сӗм хура пӳртсенчен хӑтӑлса,
Коммунизм ҫуртне алӑк уҫрӑн.

Ик ҫулпуҫӗ тыттарнӑ декрет
Пулчӗ сыхлӑх та чӗрӗлӗх хучӗ.
Ылттӑнпа ҫырӑнса, ӗмӗрех
Вӑл чӑваш кун-ҫулне кӗрсе юлчӗ.

Кӳршӗпе, тус-йышпа пӗр тӑванлӑн
Кӗреке умӗнче ларнӑ чух
Чун панчи сӑмаха эс калатӑн,
Каламасӑр тӳсме те хал ҫук.

Авалхи сӑмахпа каласассӑн:
Юхтӑр чул, путса лартӑр хӑмла,—
Ҫав-ҫавах вырӑсран татаймастӑн
Пирӗн чун-чӗрене, кӑмӑла.

Ак тӑвата ҫӗр ҫул аслӑ халӑх
Хӳтӗлет пире хӑй шӑллӗ пек.
Кӗрешӳ, ҫӗнтерӳ, терт, хаваслӑх—
Пурте унӑн пӗрле пирӗнпе.

Сывӑ пултӑр ҫӗнелнӗ Россия!
Аслӑ туслӑхӑн ҫурчӗ—Мускав.
Варкӑшайтӑр Чӑваш ҫӗрӗ ҫийӗн
Пур йӑха пӗрлештернӗ ялав!

Сывӑ пултӑр та уттӑр хастарлӑн
Ирӗк халӑхӑм аслӑ ҫулпа!
Сывӑ пултӑр ҫулпуҫӑмӑр Сталин—
Пирӗн шанчӑк, телей те тупа!

1950

## Салам, Мускав!

Каçсерен вуник сехет çапать,
Çĕнĕрен çĕн кун вăл çывхартать
Пур çĕршыв та аслă Мускавпа
Тĕрĕслет васкавлă вăхăта.

Мускав, Мускав—тĕнчере пĕр хула!
Таçтан, таçтан эс çĕклен кăмăла.
Мускав, Мускав! Яланах санпала
Васкать çĕршыв малалла, малалла.

Сан сассу хăватлăн янăрать,
Ĕç тĕнчи итлет ăна савса.
Каçсерен пире вăл туйтарать
Кунсерен эпир вăйланасса.

Кăнтăрла та, каç та çап-çутак
Мускавра çунаççĕ çăлтăрсем.
Мускава хавассăн, пур чунтан
Саламлаççĕ ирĕк чăвашсем.

Мускавра çĕршыв ĕçне тăвать
Чи юратнă сыннăмăр—çулпуç.
Тавтапуç пĕртен-пĕр Мускава,
Аслă Сталин, ĕмĕр тавтапуç!

Мускав, Мускав—тĕнчере пĕр хула!
Таçтан, таçтан эс çĕклен кăмăла.
Мускав, Мускав! Яланах санпала
Васкать çĕршыв малалла, малалла.

1950

## Эп—Советлă Союз гражданине

*Чĕррисемпе пыракан*
*Владимир Маяковские.*

Çавракан çĕр тавра сахал мар çĕршывсем,
Кĕçĕнни те, асли те тĕл пулĕ.
Елĕкрен-авалтан тĕрлĕ-тĕрлĕ çынсен
Хăй чĕлхи, хăй йăли, хăй кун-çулĕ.
Анчах эп хапсăнмастăп ютри çĕрсене,
Эп кунта кун курса çынна çитнĕ.
Ак каллех харсăр săвăç сасси илтĕнет:
Эп—Советлă Союз гражданинĕ!

Хăш çĕрте эп пулман? Мĕнле тинĕс-сырман
Хĕрринче ман йĕрсем курăнмаççĕ?
Корольсем, патшасем пăхрĕç ман куçăмран,
Йăпăлтатрĕ баронĕ те князĕ.
Тарçăсем, чурасем çунакан чунпала
Кĕтсе илчĕç мана, ирĕк килнĕн.
Вĕсем шаннă, ĕненнĕ... Кама шанмалла?
Эп—Советлă Союз гражданинĕ!

Çав çунатлă сăмах çĕкленсе янрасан,
Пĕтĕм кивĕ тĕнче сехĕрленчĕ.
Çĕр çинче е çӳлте, е шывра çул тытан—
Чĕрене çав сăмах çĕклентерчĕ.
Кам пулсан та—сухаçă, шахтер е салтак,
Украинец, чăваш, армянин-и—
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп—Советлă Союз гражданинĕ!

Ман çĕршывăн тӳпи кăвакран кăвакрах,
Хĕрлĕрен хĕрлĕрех ун хĕвелĕ.
Чи пахи, чи хаклисвăл асра яланах—
Танлăхпа çак çĕрте эп телейлĕ.
Коммунизмăн çуртне хăвăртрах тăрлама
Кун-çĕре шăнăçми ĕç эп илнĕ.
Аслă Сталин шанать ман чакми вăйăма:
Эп—Советлă Союз гражданинĕ!

1950

## Çĕнтерӳ

Çĕнтерӳ! Паян мар вăл çуралчĕ,
Çук: „Аврора“ туппин залпĕпех
Кĕрхи Питĕр çинче вăл çуталчĕ,
Шар çурса, аслати çапнă пек.

Броневик тăрринчен тăснă алă
Çул кăтартрĕ пире ун патне.
— Ленин!—терĕмĕр те, асăнмалăх
Чĕрене çыртăмăр ун ятне.

Çĕнтерӳ! Ирĕк çĕр çурма выççăн,
Çарамас тенĕ пек, вăрçнă чух
Ун вăйне ĕнентерчĕ Царицын,
Пĕр çын кĕртрĕ пире çĕнĕ чун.

Пăшала чăмăртарăмăр хыттăн,—
Пулчĕ çимĕç те, тум та унпа.
— Сталин!—терĕмĕр те, çăкăр тытнăн
Эпир турăмăр aслă тупа.

Çĕнтерӳ! Днепрпа Волхов шывĕ
Çĕр çинчех çăлтăрсем çутиччен,
Магнит ту ăшĕнчи тимĕр—шĕвĕ
Чугун-хурçă пулса юхиччен,

Горькири заводран минутçемĕн
Çĕн машина куçса тухиччен,
Мускаври метропа пин-пиншерĕн
Каллĕ-маллĕ этем хутличчен

Яланах пирĕнпе пултăн эсĕ,
Çĕнтерӳ—çĕмĕрен пек сăмах!

Атăл çуннă çула асилес-и?
Эс унтаччĕ—кашни окопрах.

Çав çултан, çĕршыв шанчăкĕ евĕр,
Хытăран хытăрах янăрать
Тĕнчене тĕлĕнтернĕ пĕртен-пĕр
Нихăçан манăçми Сталинград.

Сталинград. Вут, тусан, йӳçĕ эрĕм
Ишĕлет çӳл тӳпе, çĕр чĕтрет.
Çын кăна чĕтремен. Чĕтремерĕм
Эпĕ те—тимĕрччĕ пирĕн рет.

Ĕмĕрте тĕрлине курма килĕ,—
Сарлака тетпĕр ун саккине.
Анчах кам, кам манран тытса илĕ
Вутлă Атăл чĕрин таппине?

Вăл—юнра. Кирлĕ чух вăл варанĕ.
Икĕ пинмĕш çулсем хыçĕнчен
Сталинградăн патвар ветеранĕ
Хăй патне пин-пин çын пухĕ, тен.

„Мĕнпеле çиеле тухрăр?—тейĕç
Çутă куçлă яшсем ун чухне,—
Штыка штык, туппа тупă, хĕçе хĕç
Хирĕç тăнă-çке-ха пĕр-пĕрне..."

Аслă тĕрĕслĕх! Акă мĕскерччĕ
Хул çумне чĕрĕ вăй хушакан.
Ни сивви, ни выççи, ни чун терчĕ
Хутлаймарĕ пире унпалан.

Пуç усми ветеран, çирĕм пĕрмĕш
Ĕмĕре çитсе кĕнĕ салтак!
Тав сана! Сан яту çĕрте çĕрмĕ,
Хăвăнне эсĕ тунă йăлтах.

Тав сана, ни граната, ни пуля
Çĕнеймен пĕр çарти тусăм ман!
Тен, сан çурăм çинче çыртăм пулĕ
Йĕп-йĕпе окопри сăввăма.

Тен, санпа траншейра каçăн-ирĕн,
Кукленсе тăп-тăвăр хушăка,
Пĕр хуран пăттине эпĕ çирĕм,
Шăлнă пек çуласа кашăка.

Тен, санпа, çĕрĕпе куç хупмасăр
Ракетсем çуннине сăнаса,
Эп çĕклентĕм ирех, сансăр-мансăр
Çĕнтерӳ çуккине ăнланса.

Тав сана, Сталинград ветеранĕ!
Канлĕ пултăр сан тимлĕ чĕрӳ.
Санпала юнашар вăл чысланĕ—
Çиçĕм куçлă таса Çĕнтерӳ.

Çĕнтерӳ! Плащпалатка уртса вăл,
Каскă айĕн пăхса çивĕччĕн,
Пычĕ—тӳсĕмлĕ, тертлĕ, те савăк—
Атăлтан Рейн хĕрне çитиччен.

Тăхланпа хурçă айĕн пĕр шиксĕр
Вăл çул тытрĕ Берлин варрине.
Ĕçпе мир ялавне çулăм витĕр
Вăл хăпартрĕ рейхстаг тăррине.

Паян кун тава тивĕçлĕ паттăр
Нефть уçлать, тăрмашать шахтăра.
Çеçенхир варринче те куратпăр,
Тайгара та эпир паттăра.

Сарă хăйăр çинче ешĕл йывăç
Ӳссе ларĕ, хумханĕ вăрман.
Тарăнланĕ кӳлли, юханшывĕ,
Гранитпа карлăкланĕ çыран.

Мускавран, Хусантан, Урал урлă—
Инçетри Çĕпĕртен, кăнтăртан
Çĕн ăста, çĕн машина, вăй-пурлăх
Асанать Атăлпа аната.

Ман республика та—Атăл çĕрĕ:
Шупашкар, Куславкка, Çĕмĕрле
„Сталинград!" терĕ, „Куйбышев!" терĕ,
Ĕç вĕрет, шăранать, кĕр-кĕрлет...

Ҫĕнтерӳ! Тĕнчери ҫак пĕртен-пĕр
Ĕмĕрлĕх тăвакан ҫурт-йĕре —
Коммунизм кил-ҫурчĕ вăл тетпĕр,
Ун тӳпи курăнать халь пире.

Ҫав тӳпе тăрринче пур пĕр паллă,
Пур ҫĕнтерĕвĕн тĕрĕс палли:
Вăл — тӳрех малалла тăснă аллă,
Аслă Сталинăн хурҫă алли.

1951

## Миршӗн!

Миршӗн! Пӗр сӑмахпа ят хуратпӑр
Эпир ҫак сӑвӑсен пуххине.
Мир пулсан—пурте пулӗ: Ҫын-Паттӑр
Паллайми тӑвӗ ҫӗр сӑн-питне.

Ҫӗнӗрен тинӗссем кӗмӗлленӗҫ,
Ӳссе ҫитӗ тин лартнӑ вӑрман.
Пучахсем шӑрӑхпа вӗтеленмӗҫ,
Тарӗҫ типӗ ҫилсем пусӑран.

Пушхирсем ешӗл сад пулса ларӗҫ,
Ҫывӑхланӗҫ инҫе ҫул-йӗрсем.
Ҫӗнӗрен заводсем сасӑ парӗҫ,
Лӑпкӑ пурнӑҫшӑн ӗҫлӗҫ вӗсем.

Лӑпкӑ пурнӑҫшӑн, хамӑр телейшӗн:
Ҫак хӗвел айӗнче кашни ҫын
Кӑмӑл туртнӑ ӗҫе ӗҫлемешкӗн
Хавхаланӗ вара чун туллин...

Миршӗн! Пӗр сӑмахпа палӑртатпӑр
Эпир ҫак сӑвӑсен шухӑшне.
Унпала юнашар асӑнатпӑр
Аслӑ ҫыннӑн мухтавлӑ ятне.

Тӳрӗ чунлӑ ҫынсем йӑлт пӗр саслӑн
Пухӑнаҫҫӗ халь ҫав ят тавра.
Ҫавӑнпа, мир сӑмах вуласассӑн,
Сталин тетпӗр эпир шухӑшра.

1951

## Пултăр мир!

Тĕрлĕрен чĕлхепе кĕрлесе, шавласа
Пĕр сăмах халь çӳрет тĕнчере.
Кам ăс-пуçĕ уяр, камăн чунĕ таса,
Кам чĕри чултан мар—чăн чĕре,
Çав илтмесĕр юлаймĕ çĕкленнĕ сасса:
Пултăр мир, пултăр канлĕх çĕре!

Тин кăна пур киревсĕр, хурах этемсем,
Çын çинче ашкăнса пурнакан
Лавккаçсем, хуçасем, пĕтеймен патшасем
Чыхăнтарчĕç çĕре юнпалан.
Çав харам пырсене çĕнĕрен иртĕхсе
Юн тăкма парар мар паянтан!

Тĕрлĕ ӳтлĕ çынсем—саррисем, хурисем
Тинкереççĕ пăхса кунталла.
Негр, индус е китаец—мĕнпурĕ вĕсем
Сасăлаççĕ пĕр пек чунпала:
— Пултăр мир çĕр çинче!—Пулĕ мир, ма тесен—
Совет çĕрĕ тăрать хурала.

Атомпа хăмсарса антăхан тăшмана
Ман çĕршывăм тытать аллинчен.
Ырăпа вăл хушать: „Ан хăтлан, кĕр тăна,
Вăйлăран эп калап кун çинчен.
Паян тин каялла чакас çук самана,
Çĕнни пăхмĕ киввин куçĕнчен!“

Çак сасса илтекен пур чăваш та пĕрле
Пат татсах пĕлтерет шухăшне.
Хăй тăван чĕлхипе пур тĕнче илтмелле
Сасăлать, ал пусать хут çине.
Вăл тăрать—аслă Сталин çӳлтен çӳлелле
Çĕклекен мир ялавĕ айне.

1950—1951

## Мир юрри

Аслă Атăл юхать сарлакан
Ыранхи чапĕпе савăнса.
Атăл пек сарлака кăмăлтан
Мир юрри çĕкленет вăй пухса.

Халăхсем! Пурте пĕр чунпала
Мир ялавĕ тавра пухăнар!
Çĕр çинче пултăр мир яланах,
Вăрçа хирĕç, вăрçа хирĕç карах тăрар!

Пирĕн лăпкă, уяр тӳпене
Хупăрлаймĕç хура пĕлĕтсем.
Мир хăвачĕ куллен ӳсĕнет,
Миршĕн пур тӳрĕ чунлă этем.

Тĕнчене вут тĕртме хыпăнса
Аллине вутпуççи тытакан—
Илтнĕ пултăр вăл пирĕн сасса:
Ан хускал, ав тапран вырăнтан!

Аслă Атăл юхать сарлакан,
Ĕмĕрех пулĕ вăл мухтавра.
Атăл пек сарлака кăмăлтан,
Мир юрри, янăра çĕр тавра!

Халăхсем! Пурте пĕр чунпала
Мир ялавĕ тавра пухăнар!
Çĕр çинче пултăр мир яланах,
Вăрçа хирĕç, вăрçа хирĕç карах тăрар!

1951

## Тинĕсрен тинĕсе

Тинĕсрен тинĕсе—
Пирĕн аслă держава.
Сарăлать çĕкленсе
Мирлĕ ĕç кĕрĕ-шавĕ.

Çĕр çинче, шыв çинче,
Пĕлĕтре те мухтавлă
Пирĕн ирĕк, ĕçчен,
Парăнми паттăр халăх.

Хураллать паттăра
Хĕçпăшаллă хуралçă.
Аякри вахтăра
Матроссем куç хупмаççĕ

Халапласçĕ вĕсем
Çĕр хута темĕн те пĕр.
Паттăрсен ячĕсем
Чĕлхисен вĕçĕнчех-тĕр.

Сахал мар аваттан
Чаплă тинĕс кĕтесĕ:
Ленинград та Кронштадт,
Севастополь, Одесса...

Хура тинĕс çине
Пынă чи аслă флагман.
Унăн ăшă куçне
Нихăçан та манаймăн.

Моряксем хушшинче
Вăл хăна пулса ларнă,

Аслă туслăх çинчен
Каласа ăнлантарнă.

Вăл кашни матроса
Тăван ашшĕ пек пулнă;
Хушăран шӳт туса
Çынсемпе пĕрле кулнă.

Хальчченех ун ятне
Асăнать чаплă крейсер.
Ун кашни сăмахне
Вăл усрать ялав евĕр...

Канлĕ тинĕс кăвак—
Матроссен çухи тĕслĕ.
Ырă куншăн тавах:
Хăй ĕçне халăх ĕçлĕ.

Чи паха океан
Пултăр вăл Лăпкă ятлă.
Анчах вăл кăтăрсан,—
Унтан эпĕр хăватлă.

Мĕнле çил е тĕтре
Халь пире пăхăнтарĕ?
Чĕрене витĕрех
Витнĕ тинĕс тăварĕ.

Çĕр çинче, шыв çинче,
Пĕлĕтре те мухтавлă
Хамăр тунă тĕнче,
Парăнми улăп-халăх.

Сарăлать çĕкленсе
Мирлĕ ĕç кĕрĕ-шавĕ.
Тинĕсрен тинĕсе—
Пирĕн аслă держава!

1951

## Репродуктор умĕнче

Пĕлĕтре уяр тĕнче.
Юлашки март каçĕ.
Репродуктор умĕнче
Çынсем шăп тăраççĕ.

Илтнĕ сасă инçетрен
Витерсе каларĕ:
Йӳнелет татах çынсен
Çăкăрĕ-тăварĕ...

Юлашки сăмах таран
Халăх илтсе юлчĕ.
Халь те вăйлă, паянтан—
Вăйлăрах вăл пулчĕ.

Шăкăл-шăкăл калаçса
Пурте хĕпĕртеççĕ:
— Тавтапуç хамăр влаçа,
Сталина тав!—теççĕ.

1952

# Урама тухар хаваслан

Урама тухар хаваслăн,
Салтакла утар,
Уçă саслăн, савăк саслăн
Юрăсем юрлар.

Салтакла утса пыратпăр
Çапăçушăн мар:
Канăçа сыхлать çак паттăр,
Ĕçпе писнĕ çар.

Пĕттĕр юнлă вăрçă-харçă!
Пултăр çирĕп мир!
Çын çынна ан пултăр тарçă!—
Тетпĕр халь эпир.

Ялавсем çӳлте вĕçеççĕ
Сулхăнрах çилпе.
Ачасем чĕвĕлтетеççĕ
Май чĕкеçĕ пек.

Ашшĕ-амăш савăнаççĕ
Вĕсене курса.
Ваттисем пăхса сăнаççĕ
Айккине тăрса.

Ывăнсан вĕсем канаççĕ,—
Тивĕç пур канма.
Туртатех Май кунĕ-каçĕ
Шавлă урама.

Ачасен хавас куллишĕн
Çĕкленетпĕр кар.
Канлĕ ватăлăхшăн, пилшĕн
Мир ĕçне тăвар.

Уй-хирти кашни пучахшăн
Сас парар паян:
Кил-çуртпа ăшă вучахшăн
Кайтăр юрă ян.

Пултăр мир!—Чĕнет янравлă,
Хĕпĕртен Мускав.
Ырă кăмăллă, хастарлă
Çынсене мухтав!

Чикĕ урлă пирĕн харсăр
Тантăш-тус, тăван
Мускава пĕр сывламасăр
Вăл итлет ялан.

Кĕр-кĕрлет Мускав парачĕ,
Уртăр тек тăшман:
Мирлĕ юрă янраттарчĕ
Халăх Мускавран.

Çак уяв та çак парад вăл—
Шанчăк ĕç тĕнчин.
Мавзолей çинче тăрать вăл—
Тĕнче шаннă çын.

1952

## Чарар!

Нумай пулмасть эп Мускавра
Мир Конференцинче пулсаттăм.
Çав кунсенче ман пуç тавра
Пĕр шухăш çаврăнатчĕ: атом...

Тап-такăр сарлака урам,
Тин лартнă йывăç, çĕнĕ палăк
Е вăтăр хутлă çурт курам—
Çав шухăшах памастчĕ канлĕх.

Ăсталăх, ăслăлăх, илем,
Музей, театр, академи...
Епле çакна вут тĕрттерем
Эп—ирĕклĕ çĕршыв этемĕ!

Метро... Ун илемне çырма
Нимле сăмахăн сăрĕ çитмĕ.
Анчах сасартăк асăма
Килсе кĕретчĕ Хиросима.

Минутпа мар—секундпалан
Унта çĕршер пин халăх вилнĕ.
Çав атом амаланасран
Эпир хурал тăмашкăн килнĕ.

Метрон пĕр çĕнĕ станцинче
Мачча çине пăхса тинкертĕм;
Ытараймасăр чылайччен
Унти картинăпа килентĕм.

Ав Александр Невский, ав
Паллатăп Дмитрий Донскоя.

Кунта сума сăвать Мускав
Мининпала Пожарские,

Лере Суворов: симĕс тум,
Вĕçет фельдмаршал шурă çÿçĕ.
Кунта Кутузов: паллă ун
Йăлтах куран пĕртен-пĕр куçĕ..

Пăхатăн та—тухать умма
Пĕтĕм Российăн кунĕ-çулĕ.
Художниксем çакна тума
Мĕн чухлĕ тимлĕх хунă пулĕ!

Эп куртăм ват рабочие,
Вăл та çав маччанах сăнарĕ;
Куçне шăлса, хăйне хăех
Чĕтрен сассипеле каларĕ:

„Çакна, çакна ăссăрсене
Çĕмĕрттерес-и ĕнтĕ?!" терĕ.
Мĕнпурĕ пăхрĕç ун çине.
Çĕршыв хуçи пек вăл çÿрерĕ.

Эп çавăн пек çынна пайтах
Мир Конференцинче сăнарăм.
Вĕсем ак халь те ман умрах—
Кăвак сухал, яш çын, хĕрарăм...

Çине тăрса, вĕриленсе
Калаçрĕ йыш. Чĕлхемĕр тĕрлĕ.
Анчах пурне те, итлесен,
Пĕрлештерет пĕр аслă пĕрлĕх:

Çав атом вăрçинчен эпир
Тăван çĕре те, ыттине те
Сыхлас тесе—виç кас, виç ир,
Виç кун сас патăмăр та ĕнтĕ.

Эп астăватăп: пур вăя
Пĕрле чăмăртаса пуçтарнăн
Тухса калаçрĕ Хан Сер Я—
Корея ывăлĕ—хастарлăн.

Ятве кăна каларĕç-ха—
Кĕç алă çупса ячĕç пурте.
Асаплă, паттăр халăха
Çав çын сăнарĕнче йыш курчĕ.

Тăрса трибуна патнелле
Утма кăна вăл ак пикенчĕ—
Пур зал ăна куçпа тĕллет,
Унтан пĕр харăс вăл çĕкленчĕ.

Ўссех, ўссех тăчĕ кĕр-шав,
Темччен çав тăвăл лăпланмарĕ:
„Корея халăхне мухтав!
Паттăрсене урра!“ янрарĕ.

Паян çав парăнми çĕре,
Çав халăха çĕнтереймесĕр,
Тĕнче хурахĕ чир-чĕре
Вăрçа кĕртет ак йĕрĕнмесĕр.

Чума пăрçи, халер шăни,
Тиф пыйтисем ун... Намăс, намăс!
Цивилизаци самани,
Ăçта кайса пырать халь сан ăс?!

Ăçта эс, Линкольн, Эдисон,
Уолт Уитмен çĕрĕ-шывĕ?
Çакна тўсме епле халь сан
Вăю çитет, ĕçчен хĕр-ывăл?

Чарар! Ан ашкăнтăр вăл пит
Хура вăрă-хурах, усламçă,
Пин хут ылханнă Уолл- стрит!
Чарар!—Çапла чĕнў пусланчĕ.

Америкăри ĕççынни—
Хура ўтли те, шур ўтли те!
Илтĕнтĕрех сана чĕнни:
Чарар! Улталанмашкăн çитĕ!

Китай, Корея кăшкăрать,
Вĕсемпеле пĕрле пур Ази:
„Урма ан парăр кашкăра!“
Тесе мир çыннисем хушаççĕ.

Пур халăх писнине кура,
Ниçта кайса ним тăваймасăр,
Хурт-кăпшанка тытать тара
Çын сăн-питне çухатнă варвăр.

Чарар! Çав намăс-мăшкăла
Никам та ырăпа çĕклеймĕ.
Чарар! Этемлĕхе калла
Ан турттăр чул ĕмĕр этемĕ!

1952

## Çак кунсенче

1

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Ĕçсем çĕклерĕç пур тăван çĕре.
Çĕнтерӳпе хăватлăланнă халăх
Хăй партине калать: „Ак ман чĕре!

Ак манăн ĕмĕт-шухăшăм, ман чунăм,
Сăмахăм тӳрĕ пултăр умăнта.
Ăшра сӳнмест эс чĕртнĕ çутă çулăм,
Чакармăп эс кĕртен вăй-хăвата.

Санра эп хамăн телее куратăп,
Сан шухăшу—ман шухăшăм пулать.
Санпа çĕнтертĕм пур хура-шура та,
Санпа çĕнетрĕм хамăн кун-çула".

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Пуçланнă аслă пĕр ăмăртура
Мĕн çырнине часрах тума—пур халăх
Хăй партине сăмах парса хурать.

2

Тăван хуламăр! Шурă Шупашкар та,
Ват Шупашкар та терĕмĕр сана.
Куç умĕнче ак халĕ урăх карттă,
Чи çамрăк курăнатăн эс мана.

Эс Коммунизм çĕршывне хăватлăн,
Чĕрĕ сăпатлăн кăтартан хута
Тĕнче вуламалла халь çырăнатăн,
Час пур çĕршыв тинкерĕ ак кунта.

Ăван хуламăр! Çумăнти мăн Атăл
Паллашрĕ пилĕк тинĕс шывĕпе.
Йăмра хулли чĕтренмĕ çăтăл-çатăл,—
Кипариссем ешерĕç хĕлĕпе.

Çыран тăрăх каштан кашласа ларĕ,
Магноли, пальма куçĕ кăнтăртан.
Тем тĕрлĕ сиплĕ çимĕç пархатарĕ
Йăхăмăра çĕнетĕ тымартан.

Тăван хуламăр! Виç-тăватă хутлă
Карап сана сас парĕ савăнса.
Проспект çуталĕ, пĕрене пӳрт-çуртлă
Урамусем час юлĕç манăça.

Кĕленчерен те хурçăран çĕкленĕ
Куçа шартса яран хĕвеллĕ çурт.
Сăртран сăрта кĕперĕ чĕнтĕрленĕ—
Бетон та тимĕр никĕслĕ, çап-çут.

Поэтăмăр хавхаланса сăнланă
Интернационал кĕперĕ пек
Ĕмĕрлĕхех вăл ялтăрĕ тăванла
Пур халăхсен таса туслăхĕпе.

3

Пайтах юрланă пирĕн халăх юрă
Таçти тинĕссене аса илсе,
Халь хăйĕн çĕрĕнчех ăна вăл курĕ—
Шухăшĕнче шавлан çав тинĕсе.

Çав тинĕс хулара, ялта, уйра та
Тĕпрен çĕнетĕ пирĕн кунсене.
Ак эп электротракторсем куратăп,
Илтеп электропоезд сассине.

Тирпейлĕ, çутă килсене кĕреп кĕç—
Нӳхреп те çук-мĕн, валашка та çук:
Электросивĕткĕç, кĕпе вĕреткĕç,
Электрохачă, электроутюг...

Куратăп: Ленин каласа хăварнă
Çунатлă сăмахсем çĕршыв çинче
Тем пысăкăш саспаллипе кăваррăн
Çунса тăраççĕ лăпкă каçсенче.

Илтетĕн: Кремльте сехет çапсассăн,
Хăватлă гимн каллех пур халăха
Кĕрешĕве чĕнсе кар тăратассăн
Ян янраса каять тавралăха.

Çапла! Çук чарăну: ăс-хакăл вирлĕн
Пырать малтан мала, малтан мала!
Çут тĕнчене пĕлнисĕр—халĕ пирĕн
Ăна урăхлатма васкамалла.

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Пĕр чарăнми хастар ăмăртура—
Мĕн çырнине часрах тума—пур халăх
Хăй Çулпуçне сăмах парса хурать.

1952

## Горкари çуртра

1

Ял. Вырăс ялĕ. Унăн ячĕ
Халь паллă пĕтĕм тĕнчипех.
Унта эп халиччен пулманччĕ,
Ялан чун парăмлăччĕ пек.

Мир Конференцинчен тухсассăн,
Ильич патне пĕр саманта—
Ăна курман енчен курасшăн—
Кĕрсеттĕм эпĕ çавăнта.

Ăна кашни хресчен паллано,
Хăй те вăл пĕлнĕ кашнинех.
Ав çав пӳртре сăмах калана,
Итленисем пур хальччenex.

Шур мрамăр çапнă асăнмалăх
Тултан пӳрт пĕрени çумне.
— Ильич вăл хамăрăн!—тет халăх,
Çав сасă янрĕ ĕмĕрне.

2

Ял. Вырăс ялĕ. Ленин ячĕ
Ăна çĕклерĕ тӳпене.
Кунта эп халиччен пулманччĕ,
Килсе курманшăн ӳкĕнеп.

Пĕр хут çеç мар çырма пикентĕм,
Куçа тинкертрĕм ун çине.
Килсе кĕнĕ-кĕмен имentĕм:
Тупман-ха эпĕ ун сăнне.

Тупаймасассăн—ĕмĕр шырăп,
Нихçан та усмăп аллăма.
Тăн сӳннĕ чух та уншăн çырăп
Чи юлашки сăмахăма.

Инçе каять-и, мар-и сассăм,
Çав çул хурланнă çынсемпе
Пĕр кăкăртан сывларăм ассăн,
Çыратăп çав тивĕçĕмпе.

3

Сĕм чăрăшсем сĕнксе лараççĕ
Сулмаклă юр пуснипеле.
Çав январех астутараççĕ,
Çав сывлăш пӳлĕннĕ хĕле.

Унччен пулман ун пĕк çанталăк:
Пăрланнă пĕлĕт айĕнче
Чĕнмесĕр тăтăмăр. Самантлăх
Кăн хытрĕ пĕтĕм çут тĕнче.

Ӳкет çунатлă кайăк. Йывăç
Шатăртатать. Çуна йăслать.
Чĕре кăна—хăй хăрах ывăç—
Сикет ниçта шăнăçмасла.

Ана пĕрех: пăрпа, вутпа тĕк,—
Куç хупнă Ленин—ак чăнни.
Нимле сăмах витми тупа пек
Пуç тайрĕ шăппăн ĕççынни.

4

Сĕм чăрăшсем сĕнксе лараççĕ,
Лăсси çинче сулмаклă юр.
Çав январех-и ку? Çав каç-и?—
Кунта халь вилĕмсĕрлĕх пур.

Çак паркăн, çак пахчан, çак çуртăн
Кашни кĕтесĕ Ленина—
Ĕнер кăна кунта вăл утнăн—
Усрать халь чĕррĕн ялана.

Ав вăл каима юратнă вырăн:
Сăрт, йывăç сак, çулла—çерем.
Кунтан хир курăннă: е вырнă,
Е сухаланă хресченсем.

Кунтан тем анлăш тавракурăм—
Р о с с и я—курăннă куçа.
Сăрăлтатса чĕтрет çан-çурăм,
Кив сăнлăх кăмăла хуçать...

5

... Пиншер, çĕршер пин саплăк-саплăк,
Ситрелчĕк, ансăр анасем.
Пейзаж юратаканшăн „чаплă,
Улăшăнми“ картинăсем.

Анчах пейзажшăн мар çав тапхăр
Çунса тинкернĕ çын хире:
Малтанлăха пĕр çĕр пин трактор
Парасчĕ, тенĕ вăл, çĕре.

Хура хăйчиккипе сĕмленнĕ
Мунча пек хăрăмлă пўрте
Хĕвел кĕртме вăл ĕмĕтленнĕ,
Çав ĕмĕт халĕ çитрĕ те!

Историшĕн нимех те мар та
Пĕр вăтăр-хĕрĕх çул, пăхсан—
Халь çур планетăн çĕнĕ карттă,
Ку—Ленин чунĕ çуннăран.

6

Вăл çуннă. Нимĕскер хуплаймĕ
Çил-тăвăл кун сан кăварна.
„Из искры возгорится пламя!“
Çав çулăм хыпнă таврана.

Вăл çуннă, ĕмĕрех вăл çуннă;
Терт, шар тухах тăнă таçтан.
Пурне те аяла вăл тунă—
Çĕре çавăракан титан.

Эсир, çĕр аллăшар, икшер çĕр
Султан иртсе пурнас çынсем!
Ан манăр: сирĕншĕн тем те пĕр
Тӳссе ун чакнă кунĕсем.

Çур ĕмĕртен кăна вăл иртнĕ;
Вăл курнă хĕн-асап, инкек,
Чăрмав, нуша—пин çынлăх çитнĕ,
Пĕччен вăл пин Прометей пек.

7

Пĕр кун та хăйшĕн пурăнман вăл:
Кĕске самант канусăн та—
Çынпа калаçнă, пулнă хапăл
Ĕçпе килекене кунта.

Ват юмана вăл кăмăлланă:
Леш—тантăш-мĕн Мускавпала!
Ак ку аллейăра вылянă
Çамрăксемпе вăл чушкăлла.

Лере ир-ирĕн е каç-каçăн
Вăл тухнă шăллĕн ачипе.
Ав çаватса пырать хавассăн
Ăна вăл çăмăл уттипе.

Калать-и тем е куларах вăл
Итлет ача калаçнине...
Çапла ӳкернĕ фотографи,
Çапла вăл паллă тĕнчене.

8

Гараж. Таçтан ютран кӳртернĕ
Машина.—Хамрăн çукчĕ-шим?—
Пулман. Ильич ларса çӳренĕ
Пĕр ĕмĕтпе: тăватпăр, чим!..

Эй, халь курсанччĕ куçма-куçăн
Минутсерен кусса тухан
Машинăмăрсене çулпуçăм,
Комбайн ĕçленине курсан!

Электротрактора курсанччĕ
Е улăп-экскаватора!..

Ун ёмĕчĕ, вăл хывнă шанчăк
Куллен чăна тухса тăрать...

Ав ун çуни, унпа çӳренĕ
Вăл çывăх ялсене тухса.
Ав ун кимми, мăшăр кĕсменĕ,
Хăй ишнĕ вăл, шыва пăхса.

9

Ăçтан пĕлен: тен, лăпкă кӳлĕ
Аса илтернĕ хумсене...
Тен, Атăла вăл курнă пулĕ
Е Чĕмпĕр тухнă куç умне.

Ачалăх тусĕсем тĕрленнĕ.
Тем тĕрлĕ халăх, тум, йăла...
Нумай чĕлхепеле сĕрленĕ
Вăл çитĕннĕ чăпар хула.

Тутарĕ, вырăсĕ, чăвашĕ,
Ирçи, мăкши... Вăл ун чухне
Сăнанă, çуннă ăнланасшăн
Çав тĕрлĕ халăхсен чунне.

Вĕсен танмарлăхĕ, хисепсĕр
Кун-çулĕ, мăшкăлĕ, нуши—
Ачаранпах негатив евĕр
Ун асĕнче пулмарĕ-ши?

10

Вăл асĕнчех усранă, ахăр,
Хăй чăваша вĕрентнине;
Çăпатапа пулин те, харсăр
Чăваш çутта туртăннине.

Анчах вăл, ахăрнех, пĕлмен-тĕр
Çав халăхăн пĕр йăлине:
Охотников хăй ывăлне те
Владимир ятлă хунине...

Кайран, пур пусмăра вăл харăс
Ĕмĕрлĕхех çапса ватсан,

Негативран унтах уяр ăс
Ӳкерчĕк тунă ялтратса.

Вара—пур халăхшăн, чĕлхешĕн
Пĕртанлăх, ирĕклĕх!—тесе
Çут тĕнчене йăлт çĕнетмешкĕн
Пире тăратрĕ вăл чĕнсе.

11

Çуртне кĕретĕп. Кашни пусăм
Ильич йĕрне усрать кунта.
Çак карлăкран тытса çулпуçăм
Хăпарнă ак çӳлти хута.

Ав ятсăр маçтăр авнă кресло,
Çӳçе хунавĕнчен кăна.
Вăл халь пурне те интереслă,
Кашни ачах паллать ăна.

Ав шурă сăрпала сăрланă
Пукан—нихçан манмалла мар:
Унта чи тивĕçлĕ çын ларнă,
Чи çывăх тусĕ, юнашар.

Тинкеререх пăхан та халĕ
Çав креслăпа пукан çине—
Каллех сăмах хушас пек Сталин,
Илтетĕн пек ун сассине.

12

— Политика çинчен ан пуплĕр,—
Тет имĕш врач пĕрре. „Пит шел!
Эпир—политиксем-çке, тухтăр,
Кремль сывлăшĕ—таса эмел...“

Çапла шӳтленĕ те пупленĕ
Ик аслă çын пĕр чунпала.
Кресли çумне таяннă Ленин,
Ун ал сехечĕ çуталать.

Ун еннелле пуç тайнă ăшшăн
Ялан кĕтнĕ хăна та тус:

Вăл тем калать пулас йăвашшăн,
Ун аллинче çунать пирус.

Çапла ун чух та, халь те, ĕмĕр
Пупленĕ, пуплĕç—халăхсем
Пĕрле те, уйрăм та Аттемĕр
Тесе чĕнен çав ик этем.

13

Тата кама çак çурт-йĕр курнă?
Тирпейлĕх, çăмăллăх ăна
Кўрекенни—ялан вăл пулнă
Надежда Константиновна.

Кунне-çĕрне йăлтах вăл маннă:
Куç хупанки йывăрланса
Сиккеленми пуличчен ларнă,
Чунтан-вартан ăшталанса.

Вăл темле ырă кил хўтти пек,
Çапла куратăп яланах:
Ыйха çĕнтернĕ куçĕ типĕ,
Тути çинче ăшă сăмах.

Вăл ларнă çепĕç няня евĕр
Аллисене умне тытса,
Çынна хурлантарас темесĕр
Куççуллине аран çăтса.

14

Приют ачи-пăчи—таçтанччĕ?—
Çыру çитернĕ ун патне:
„Надежда асанне, сыхлаччĕ,
Упра Ильич асаттене..."

Çав çырăва, тĕрленĕ евĕр,
Чăпта çине çиппе çырса
Ăсатнă ачасем; халь эпĕр
Ăна вулатпăр куç шăлса.

Упранă вăл, куç пек сыхланă,
Самай пек пулнă вăхăтра
Кĕнекесем вуласа панă,
Хыпар пĕлтернĕ хаçатран.

Ĕшеннĕ чĕрене пуласлăх
Çĕкленĕ çутă инçетрен.
Самант та татăлман ун аслă
Ăс-хакăлĕ çак тĕнчерен.

15

Тата кама çак çурт паллані?
Çулпуçăмпа пĕрле кунта
Çын чунĕн инженерĕ ларнă,
Чи чаплă инженер-ăста.

Вăл Горький пулнă.—...Çăра чейĕ,
Чечек çыххи сĕтел çинче...
Балконĕ айĕпе Россия
Иртет ик çын куç умĕнчен.

Вĕсем ăна утса хутланă
Енчен енне, вĕçрен вĕçе.
Пĕр çул пĕтсен тепри пуçланнă—
Йĕрлев, тĕрме те ссылка çеç...

Ютра та уншăн пăшăрханнă,
Ыратнă халăхшăн чĕре.
Сасартăк Капри сăнарланнă,
Аса илсессĕн ют çĕре...

16

Вĕсем тĕл пулнă куçма-куçăн.
Пĕрле ӳссе, пĕр хĕн тӳссе,
Пĕр аслă чăнлăхпа яр уççăн
Çутăлтарсан пур кĕтессе.

Хĕрсе тавлашнисем те пулнă
Çав чăнлăха шыранăçем.
Çавна аса илсе халь кулнă,
Именнĕ те-и, тен, вĕсем.

Çынна мĕн чухлĕ юрататăн,
Ун чухлĕ уншăн эс çунан.
Ніçтан нимле хура-мара та
Ертес килмест вара çынна.

Писатель ӳсĕрсе илсессĕн,
Сасартăк—сăмаха чарсах—

Пăшăрхана пуçланă Ленин,
Канма хистенĕ вăл часрах.

17

...Интеллигенци саботажĕ,
Пăлхав та выçлăх, тăлăхсем,
Наука, пролеткульт...—ăçта-ши
Çитмен калаçура вĕсем!

Республикăмăра шар çурнă
Инкек ун чух. Çавна пĕлсех
Çĕр çул малаллине те курнă
Ик çын пĕр чунлăн пуплесе.

Ик тантăш, икĕ тус, ик гени
Хăватлă вырăс чĕлхипе
Пур халăхсен чунне çĕкленĕ,
Калаçнă пĕтĕм тĕнчипе.

Вĕсем çине пăхсан, калатăн:
Ак çакăнтан вара чăнах
Европа хăй ăс-хал ыйтмашкăн
Киле пуçлать Российăна.

18

Иртетĕп. Пӳлĕм хыççăн пӳлĕм...
Эп унăн кабинетĕнче.
Те курăн, те кураймăн ӳлĕм?—
Тесе чылай тăрап пĕччен.

Çак пӳлĕмрен хăватлă шухăш
Саланнă пĕтĕм тĕнчене.
Шкапра—нумай чĕлхепе хутăш
Кĕнекесем. Сĕтел çине

Вăл Горький кĕнекине хунă—
„Ман университетăмсем".
Джек Лондона вуланă пулнă—
„Пурăнăçа саван этем".

Пенснеллĕ Чехов умне çакнă
Календарьне вăл çав кунне
Çурма ĕлкĕреймен, хăварнă—
Январĕн çирĕм пĕрмĕшне.

19

Вӑл ҫакӑнсах тӑрать. Сархайнӑ.
Январӗн ҫирӗм пӗрмӗш... Ҫук!
Пӗтмен, пӗтме пултараймән ун
Кун-ҫулӗ хӑй куҫ хупнӑ чух!

Гипс пит. Меркуров тунӑ маска:
Тути те, куҫхаршн те ун...
Ма ҫав-ҫавах шантараймасть-ха
Вӑл Ленин суккине ҫак кун?

Ҫӗрӗпелех ӗҫленӗ скульптор—
Ирччен, тӑватӑ сӑхетчен.
Тулта—тӑман е тӑвӑл уртӑр—
Капланнӑ халӑх пур енчен.

Тулта—те юр ҫуман, те ҫунӑ—
Тап-такӑр пулнӑ ҫул, уй-хир,
Ҫынсем курса юласшӑн ҫуннӑ,
Куҫ хуптарман ҫӗршыв хуйхи.

20

Тулта—Российӗпех кӗрленӗ
Салхуллӑн, хурлӑн трубасем.
Ильич—вӑл вилнӗ, анчах Ленин...
Пусланнӑ Ленин кунӗсем.

Ҫапла кӑна каланӑ халӑх.
Ҫав сӑмахпа хӑй ҫулпуҫне
Вилмеслӗх, ӗмӗр пурӑнмалӑх
Вӑл пехилленӗ ҫав ҫулне.

Ҫав ҫултанпа ҫуллен пӗр авӑк
Ӗҫҫыннисен вӗри чӗри
Хӑвӑртланса тапать сасартӑк.
Ҫав ҫултанпа, ҫак кил-ҫуртри

Тин ҫеҫ пуҫланӑ календарӗн
Кун листисем сархайнӑҫем,
Кӗрешӗве чӗнсе, кӑварран
Ҫунаҫҫӗ Ленин кунӗсем.

21

Январĕн çирĕм пĕрмĕш... Тăрăр!
Шăп пулăр пĕр самант, çынсем!
Анчах пире хуплаймĕ траур,—
Утатпăр Ленинпа çĕнсе.

Çак алăкран вăл тухнă—Ленин
Тĕнче курман мăн çĕклем пек
Çулпуçĕ çулпуçне çĕкленĕ
Чи шанчăклă тусĕсемпе.

Çав кун тасти çĕрсем те ырнă:
Çак вырăс ялĕнчен инçе
Çав тупăках çĕкленсе пынă
Пин-пин хулпуççисем çинче.

Анчах çын чунĕсем туптаннă
Çав йывăр хурлăх пуснăçем.
— Чурашăн çăлăнăç пуçланнă!—
Шантарнă Ленин кунĕсем.

22

Эпир тăратпăр, пуç таятпăр,
Аса илмешкĕн хур каллах.
Анчах нихçанхинчен те паттăр
Эпир çав чĕрĕ ятпала.

Эпир пĕлетпĕр: аслă Сталин,
Пур халăхсен ячĕпеле
Тупа туса, пире пĕр танлăн
Çĕклерĕ çӳлерен çӳле.

Тăван çĕрте тӳлек çанталăк,
Ак мир ĕçне—Ильич ĕçне—
Тума пуçтараннă пур халăх
Эпир халь килнĕ ун патне.

Пуху пӳне çитмен яшсемччĕ
Нумайĕш вăл астăвасса.
Халь пирĕн сассăмăр çĕкленчĕ
Телейшĕн, миршĕн янраса.

23

Тăратпăр ак эпир—вуншарăн,
Çĕршерĕн—халăх янă йыш:
Кореец, вырăс, чех, болгарин,
Поляк, чăваш, румын, латыш...

Пурин чĕлхипелех пуплеймĕн,
Анчах пĕр шухăш пирĕнте:
Пĕри калать пулсассăн Ленин,
Тепри хаваслăн Сталин тет.

Куçсем йăлтăртатса каяççĕ:
Пĕр ĕненӳллĕ йыш эпир.
Тулта халь кăнтăрла-и, каç-и,—
Чĕремĕрте çап-çутă ир.

Таçта ан тив хĕл кунĕ пултăр,
Пирте—чечеклĕ çуркунне.
Вылятăр, ялкăштăр вăл, култăр
Мĕнпур хура вăй хурлăхне!

24

Хура юнсен хура ылханĕ
Каллех, виле çăханĕ пек,
Кăранклатса вĕçме хăтланĕ
Пур çутçанталăк анĕпе.

Мĕнпур йăх-ях, тĕнче усалĕ
Пĕр пĕлĕт евĕр капланса,
Уяр куна пăсасшăн халĕ
Аслатисем авăттарса.

Анчах çĕршывăмăр пуçланă
Çĕн эрăн шуçăмĕнченех
Эпир тăрса çапла юрланă,
Çапла юрлатпăр хальчченех:

„Хаяр аça çапса ватсассăн
Чуниллисен пур ушкăнне,
Пире çак хĕвелех хавассăн
Çутатĕ, парĕ ăшшине“.

25

Çак шухăшпа çуртран эп тухрăм.
Куçа çиет хĕлхемлĕ юр.

Çара çăка, юман та хурăн.
Энтрĕкленмен-ха. Çутă пур.

Сасартăк эп, утса пыруçăн,
Куратăп ешĕл чăрăша.
Каçхи хĕвел ăна яр уççăн
Çутатрĕ ячĕ пĕр хушша.

Умра каллех çурхи тĕнче пек,
Лăсра курап ун вăй-халне.
Унтах аса илетĕп эпĕ
Кремль çумĕнчи чăрăшсене.

Вĕсем лараççĕ, лăс тăкмасăр,
Сÿнми кун-çул пек сарăлса,
Ик аслă çыннăн аслă, харсăр
Пĕр чăнлăхне уявласа.

26

Каç кÿлĕм—юр сÿнсе сĕмленнĕ,
Пахча хуралнă вăхăтра—
Çак Горкăра куç хупнă Ленин
Халь пурăнать вăл Мускавра.

Ун витĕр куракан, яп-ялтăр
Куç шăрçине эпир ялан
Халь Сталин куçĕнче куратпăр,
Вăл мавзолей çине тухсан.

Гранит тавра сиккеленмесĕр
Ларан чăрăшсене курсан,
Тен, Горкăна аса илет-тĕр
Çулпуçăм нимĕнрен малтан.

Каллех туять-тĕр ун чухне вăл
Тăманлă, шартлама хĕле.
Анчах ни юр, ни çил, ни тăвăл
Сÿнтерейменрĕ хĕвеле.

Гранит—тĕрек палли вăл халĕ,
Яш чăрăш—пирĕн çуркунне.
Вăл ĕмĕрех çиçсе çуталĕ—
Мĕнпур этемлĕх телейне.

Декабрь 1951, январь 1952. Мускав, Шупашкар, Кисловодск.

## Чĕре юрри

Чĕрем юрри—пин çын юрри!
*Çĕçпĕл Мишши*

### I. ÇАМРĂКСЕН КĂМĂЛНЕ

Нихăçан пуç усми çамрăк гварди,
Куç тулли шăллăмсем, йăмăксем!
Çак сăвва сирĕн чунăр çыртарчĕ,
Сирĕн яш кусăрти çут хĕлхем.

Сăнăра-пуçăра сăнасассăн—
Çирĕм çулăм чакать хĕрĕхрен.
Савăнса çĕкленет уçă сассăм,
Çамрăк халлăн янрать çĕнĕрен.

Çăмăл савăнăç мар, çăмăлттайăн
Сиккелейменĕп яш çын ташшине.
Сирĕнпе пĕрле хутшăннă майăн
Тĕрлĕ шухăш ӳкет пуç çине.

Çуркунне ешерет-и çĕн курăк —
Яланах пĕр картина умра:
Сахал мар-ха хура шăтăк-çурăк,
Окопсем, траншейсем çĕр тавра.

Кĕркунне тăкăнать-и сар çулçă—
Эп куратăп тин çеç курнине:
Сахал мар тантăш-тус выртса юлчĕ
Пичĕпе Хĕвеланăç енне.

Çамрăксемччĕ вĕсем, вăйпиттиччĕ,
Пĕччен пĕкĕ авас пек маттур.

Çавсемпе ак каллех аса килчĕ
Тар шăршиллĕ вăрман, хĕрлĕ юр. .

Чĕлĕнсе, татăлса пĕтнĕ йывăç—
Те чĕр йывăçчĕ вăл, те юпа?
Анчах эпĕр „çĕр хут пулĕ йывă
Çак вăрман!“ тесе тунă тупа.

Ĕмĕтленнĕ кунсем килсе çитрĕç,
Чĕррисем! Хывăр çĕлĕкĕре:
Çĕнтерсе çĕре кĕнĕ çын тивĕç
Тав-мухтав юррине ĕмĕрех.

Фашистсен эрешмен пек хĕресĕ—
Хуплаймарĕ вăл пирĕн çĕре.
Çамрăк гварди! Малта пултăн эсĕ—
Чи хăюллă йышпа пĕр ретре.

Пуринчен хăюлли нирĕн парти:
Пысăк шанчăк хывса вăл сана
Хамăр çĕршĕн тăма вăй хуштарчĕ,
Комсомол! Эс ăнлантăн ăна.

Чапа тухнă ятна эс çĕртмерĕн:
Станокран, уй-хиртен уйрăлса,
Пăшална чăмăртарăн тĕреклĕн—
Тăшмана çĕниччен хумасса.

Хĕрлĕ çăлтăр нумай чикĕ урлă
Каçрĕ санăн пилоткупалан.
Танлăх, ирĕклĕх, мир!—Ак мĕн курнă
Ĕççынни ун çинче чи малтан.

Халĕ ак çур етемлĕх хусканчĕ,
Çапса ватрĕ вăл кив гербсене.
Миçе тĕрлĕ династи путланчĕ,—
Кирлĕ мар!—тет кун-çул вĕсене.

— Ăмăрткайăк-и герб, арăслан-и—
Пĕтчĕр,—тет ĕççынни,—усси çук.
Пĕри çеç çулсерен аслăланĕ,
Ун çинче—çурлапа мăлатук.

Ваттисем пĕр юмах çӳрететчĕç
Малтанхи вăрçă чух ялсенче:
„Çав Китай тапранмарĕ-ха,—тетчĕç,—
Тапрансан—хускалать пуль тĕнче...“

Çамрăк гварди! Пиртен эсĕ ыйтăн:
Хăш тĕнче? Тĕрĕс пулĕ ыйтни.
Тĕнче иккĕ: пĕри—харампырăн,
Тепри—хамăрăн, пур ĕççыннин.

Чан Кай-шийĕн пулсан—пĕттĕр унăн!
Хăвăртрах пăнчăхни пит аван.
Анчах сывă вăл Мао Цзе-дунăн
Çур мильярдлă Китайĕ паян.

Аслă халăх чăнах та тапранчĕ,
Çут тĕнче пĕтессе-ши ку? Çук!
Çĕн Мускав сассипе вăл вăранчĕ—
Пин çул çывăрнă Ази ку чух.

Çапăçать ав Вьетнам, çичĕ ютăн
Умĕнче вăл пуç таймĕ халь тин.
Кашни ĕçлĕ çемьен, мирлĕ çуртăн
Çутă шанчăкĕ пур: Хо-Ши-Мин.

Парăнмасть Ким Ир Сенăн салтакĕ,
Вăл калать пур тĕнче илтмелле:
„Пĕтчĕр сутăнчăксем! Е татах-и
Ман çĕршыв тыткăна лекмелле?“

Çамрăксем! Эсремет эрешменĕ
Тăскалать-ха алли-урине.
Вăл чылай çĕр тавра халь пикеннĕ
Çавăрма Уолл-стрит картине.

Çĕр çинчен вăл ахаль тасалать-и!
Астăватпăр-ха эпĕр, манман:
Юн юхтарчĕ Пальмиро Тольятти,
Доллăр пуçлă хурах тапăнсан.

Çавăнах—Уолл-стритăн çăханĕ
Сăхма пăхрĕ Морис Тореза.
„Вăхăт çитĕ: çăхан персе анĕ!“
Тетпĕр хирĕç эпир, кар тăрса.

Репродуктор умне пухăнсамăр:
Миршĕн, миршĕн кĕрлет халь тĕнче.
Мир тĕрекĕ – вăл эпĕр, вăл—хамăр,
Пур çĕршывăмăр мир вахтинче.

Сталинград медальне эп усратăп,
Эп манман-ха Мамай тĕмине.
Халĕ ун тӳпинчен эп куратăп
Вăйпитти çĕн хула ӳснине.

Час унта çĕнĕ тинĕс пек шавлĕ
Аслă Атăл мухтавĕ—пĕве;
Çĕршыва çĕнĕ ырлăх халалĕ,
Тарăнлатĕ сăвва та кĕвве.

Эп Мускав леш енче чăрăш куртăм,
Мина татнăччĕ ун тăррине.
Çав тĕлте тепĕр хут кăçал пултăм:
Пиллĕк ӳснĕ пĕрре вырăнне!

Çав яштак тăрăсем асра çутрĕç
Пилĕк юплĕ тăван çăлтăра:
Ешĕл чăрăш—вăл вĕçĕмсĕр пурнăç,
Кремль хӳми çумĕнче вăл тăрать.

Украина урлах эпĕ каçрăм,
Хăш чухне блиндажра е маршра
Туссемпе эп „Каховка“ юрларăм,
Халь—çĕн юрă ыйтать çав тавра.

Днепрогэсăн çап-çамрăк тăванĕ
Час çĕкленĕ унта çуталса.
Пиччĕш пек кăна мар вăл чапланĕ,
Çĕн ăру вăйĕпе хăпарса.

Эп туркмен çĕрĕнче те пулсаттăм,
Эп пĕлеп Кара-Кум хăйăрне.
Анчах ак пĕр ирпе ман хаçатăм
Пĕлтерет çĕн канал хыпарне.

Эп курап: улăпла экскаватор
Çул тытать пушхире. Час çав хир
Ешĕл сад пулса ларĕ, тăватпăр,
Тумасса—тытăнмастпăр эпир.

Пулман мар эпӗ Куйбышевра та;
Атӑл сӑрчӗ ҫине улӑхсан—
Эс тасти-тастине те куратӑн.
Ман пӑхасчӗ ыран ҫав сӑртран!

Ҫӗнӗ ҫутӑ унта ялтӑртатӗ:
Ӗмӗрхи ӗмӗте чӑн туса,
Куҫӑнах тӗнчене вӑл кӑтартӗ
Пирӗн вут кӑларан ҫӗн ӑса.

Паян кун, пуҫ усмасӑр, хавассӑн
Тӑрӑшас—вылянса тӑтӑр хул.
Кун пек чух, юрӑлла каласассӑн,
Ҫӗр ҫинче пурӑнасчӗ ҫӗр ҫул.

Ҫамрӑк гварди! Сатуррӑн-маттуррӑн
Чул касар, хурҫӑ-тимӗр татар;
Ленин курнӑ хӗвел сӑнлӑ ҫуртӑн—
Коммунизмӑн ӗҫне хӑвӑртлар.

Шупашкар та—паян-и, ыран-и—
Улӑштарӗ йӑлтах сӑн-питне.
Ҫумри Атӑл та час тарӑнланӗ,
Таппи ҫитӗ Мари чиккине.

Чугунран кӗперсем чӗнтӗрленӗҫ,
Гранитланӗҫ ҫыран хӗррисем.
Кӗҫ трамвайӗ, троллейбусӗ те кӗҫ
Иртӗ такӑр ҫулпа вирхӗнсе.

Такӑнтармӗ хӑма тротуарӗ,
Тусан ҫӑтмӑпӑр урӑх: ак час
Хулана асфальт тум тӑхӑнтарӗ
Тӗнчене ҫӗнетен харсӑр класс.

Ҫӗнӗрен ӑстасем ӳссе ҫитӗҫ
Ниҫтан мар—хамӑр пек ҫынтанах.
Вӗсем пур ӗнтӗ халь, вӗсем килчӗҫ
Пинӗн-пинӗн ӳсен хулана.

Ҫул хываҫҫӗ, тӗртеҫҫӗ пир-авӑр,
Купалаҫҫӗ чул ҫурт вӑр та вар.
Кунсерен хитререх те вӑл капӑр
Ачаран паллакан Шупашкар.

Çитĕ кун: сăрталла эп хăпарăп
Сарлака шурă чул пусмапа.
Атăла çывхарах пырса ларăп
Вĕçленсе çитеймен сăввăмпа.

Çапĕ хум. Чăшăлтатĕ бульварĕ.
Сулхăнра, фонтансен варринче,
Константин Иванов пăхса ларĕ
Çунат пек куçхарши айĕнчен.

Çавăнтах-и, пăртак маларах-и,
Çĕнĕ хум сассине итлесе,
Тăрĕ Çеçпĕл, чăвашăн сăмахĕ
Тимĕр татнă куна пиллесе.

Умĕнче сарăлса выртĕ тинĕс,
Тинĕс урлă пиншер çухрăма
Хĕрлĕ-сарă-кĕрен-кăвак-симĕс
Ялтăртатĕ сӳнми асамат...

Эх, çĕршывăм, атте-анне çĕрĕ!
Сан çинче улăм тум пулас çук.
Йăмра мар—çимĕç сачĕ ешерĕ
Урамсен варринче те ун чух.

Урăхланĕ хĕвелĕ те çилĕ:
Çĕн Мичуринсене пăхăнса,
Виноград та кунта куçса килĕ,
Апельсинĕ те пиçĕ ансат.

Пӳртсенче шăпăр шăтăкĕ пулмĕ,
Пур кĕтесĕ та пулĕ—тĕпел!
Тĕтĕм-сĕрĕм йӳççи тухса тулмĕ,
Кĕл вĕçтермĕ инке мелкепе.

Кĕвенте çакмĕ вăл, кран çеç пăрĕ—
Кĕрĕ шывĕ те, газĕ те час...
Пăхсан куç шармалла çиççе тăрĕ
Вара пĕр-пĕр хальхи Йăлăмкас.

Сарлакан ярса пусĕ ăсталăх:
Чĕрене пыракан сăвăсем,

Юрăсем ытларах юрлĕ халăх,
Кулленхи ĕç кал-кал пынăçем,

Мрамăра çĕнĕ чун кĕртĕ скульптор,
Тĕлĕнтерĕ куçа çĕн картин,
Емĕре вăрăмлатĕ çĕн тухтăр,
Пур чире те çĕнтерĕ çĕн çын.

## 2. ИКĔ ЯТ

Çын тесе пысăкла каласассăн,
Чи малтан—икĕ ят асăмра.
Çавсемпе тĕрĕслетпĕр кун-каçăн
Пур ĕçре те эпир хамăра.

Икĕ ят, уйрăлми Ленин—Сталин,
Кам кĕртмен-ши сăвва вĕсене?
А вĕсем—эпопея пек халĕ,
Çырăн, çырăн—тухаймăн вĕçне...

Ман килте çитĕнет пĕчĕк ывăл,
Вăл тин çеç сăмахсем тукалать.
Ик портрет—уншăн чи çывăххи вăл,
Вĕсене тахçанах вăл паллать.

Çиччĕри шкул ачи, пур тытсассăн,
Чи малтан класс туски варрине
Вăл çырать тăрăшса та хавассăн
Ик çулпуçăн юратнă ятне.

Пионерăн тупи—Ленин, Сталин.
Комсомолăн—ик ят ĕлĕкрен.
Партие кĕнĕ чух эс мĕн калăн?
„Ленин — Сталин ĕçне тăвăп!“ тен.

Ленин — Сталин! Вĕсем ик хĕвел пек
Çутатаççĕ тĕнче тӳпине.
Вĕсемпе тĕл пулсассăн, пĕлеп эп,
Хура пĕлĕт ӳпне ӳпĕнет.

Лётчик çĕнĕ йĕрпе çул тытать-и —
Чĕринче вăл усрать ик ята.
Пăр çинче пирĕн çын хĕл каçать-и —
Икĕ ят ун чунне ăшăтать.

Пуçласа çын чугун шăрататать-и—
Чи малтан вăл хывать ик портрет.

Çĕнĕ çурт пураса çын лартать-и —
Тĕпелне икĕ сăн вăл кĕртет.

Ватă акын тумра ĕнерет-и —
Ик ята асăнса пуç таять.
Ват учĕнăйăн кунĕ пĕтет-и —
Ун чунне вăй парать икĕ ят.

„Пур-ха кун!“ тет учĕнăй алхапăл,
Хăйĕн чаплă та йывăр ĕçне
Ик ятпа çутатать те вара вăл,
Куç хупсан та, пурнать ĕмĕрне.

Эп—поэт. Кĕрешӳшĕн те сассăм,
Мирлĕ ĕçшĕн те кирлĕ ку чух.
Анчах çав икĕ ят пулмасассăн,
Эп нихçан та çăвар уçас çук.

Тĕнчерен пытанса, урăм-сурăм
Хурлăха пусарма хал çукран,
Çырмара макăрашĕччĕ юррăм
Пĕр-пĕр суккăр кĕслеçĕпе тан.

Кӳтсе çитнĕ хавшак чун хавалĕ
Ирĕк шухăш чĕртсессĕн, вара
Старăстан пашалу пек медалĕ
Час вăл хуплĕччĕ ман çăвара.

Ун чухне, Тайăр тантăшăм евĕр,
Çĕрнĕ пулăттăм эп Çĕпĕрте.
Е тип шар тăваттăм, тӳсеймесĕр,
Макçăм шăпăрçă пек ют çĕрте...[1]

Икĕ ят — пур кивве çапрĕ савăл:
Патшасен, тӳресен, улпутсен
Пин çулхи йывăçне шар çурса вăл
Çиçĕм пек вут хыптарчĕ тĕпрен.

Икĕ ят—пулчĕ халăх сасси вăл,
Енентерчĕ тăван çĕр вăйне.
Çавăнтан вара чунăм ман сывă,
Ирĕк шухăш çул тупрĕ хăйне.

---

[1] Вырăс писателĕ Н. Д. Телешов çырнă „Тип шар“ повесть геройĕ.

Ирĕк сас ача пек ынатланчĕ,
Юррăм тухрĕ çырма тĕпĕнчен.
Çулсерен вăл ӳссе çунатланчĕ,
Нихăçан та тек пулмĕ пĕччен.

Манпала пĕр юррах пĕр канашлăн
Янратать кӳршĕ-пĕлĕш сасси.
Пур ĕçре те пĕр ĕмĕт халь манăн:
Ик ята тивĕçрех пуласси.

Икĕ ят, уйрăлми Ленин—Сталин.
Ленина чĕрĕлле эп курман.
Шартлама январьти юр кристалĕ
Нихăçан каяс çук асăмран.

Урамра, вут чĕртсе, ушкăн-ушкăн
Эпир тăтăмăр çав январьте.
Шартлама. Анчах йăлт çара пуçăн.
Те сехет, те çур ĕмĕр иртет...

Юлашки салютпа çĕр чĕтренчĕ.
Юлташсен куçĕсем—ан та кур...
Аслă гимн сассипе чун çĕкленчĕ,
Чакăртатрĕ таптаннă тип юр.

Мускавра çавăн чух уçă саслăн
Янăранă-мĕн аслă тупа.
Тупине тăвакан—пулнă Сталин,
Чĕрĕ Ленин вăл çав кунтанпа.

Сталин! Ун асĕнче пур малашлăх:
Хире лартнă кашни икеле
Юман-паттăр пулса кашламашкăн
Вăл пиллет чун тулли пилпеле.

Çурт пулса хăпаран кашни кирпĕч,
Кашни тимĕр листи, тенĕ пек,
Ун сĕтелĕ çине малтан выртĕç
Проектри, макетри сăнĕпе.

Пур этемлĕх çинчен шутлаканăн
Кашни çĕнĕ сăвва, романа,
Юмаха та тытса вуламашкăн
Тупăнать-мĕн сехет яланах.

Сталин! Чăн тӳпери аслă гени.
Анчах унăн тымарĕ çĕрте.
Халăха вĕрентсе çĕклекенĕ
Хăй унтан вĕренсе хĕпĕртет.

Аса килчĕ мана хăй сăмахĕ,
Çук унтан витĕмли нимĕн те.
Çавăнпа танлаштарăп хăйсах эп:
Халăх — çĕр пулсан, Сталин — Антей.

Анчах çак Антее çĕнтермешкĕн
Çуралман, çук Геракл тĕнчере.
Вăл çуралмĕ нихçан та, пĕлетĕн:
Сталинпа халăхăн пĕр чĕре.

Халăхра йăлтăр çутă курсассăн,
Сталин çулăм чĕртет хĕлхемрен.
Вăл наука тăвать аслă класăн
Амăртуллă патвар ĕçĕнчен.

Çын чунне тенкĕпе çеç хакланă
Çĕрсенче ăнлас çук çаксене.
Ахаль мар тĕлĕнтерчĕ Стаханов
Тĕнчери академисене.

Шурă слон шăмминчен тунă башня
Хăтараймĕ кив шухăш-ăса.
Çĕнĕ чăнлăх пырать хăйĕн кашни
Пусăмне Сталинпа çутатса.

Халиччен тӳсеймен пĕр суя та
Унăн тимĕр касан чĕлхине.
Шухăш улăпĕнче эп туятăп
Шĕл кăвар пек поэт чĕрине.

Кам сăмах шыраса хĕрĕнмерĕ
Ленина сăнлама халиччен?
Сталин „ту ăмăрткайăкĕ" терĕ,
Кам калайнă кун пек ун çинчен?

Эп курап: варкăшать ăмăрткайăк,
Тусем урлă хăюллăн вĕçет.
Пăр пек сывлăш, тăман, çил шăй-шайĕ —
Ним те мар: пур хĕвеллĕ инçет!

Çав хĕвеллĕ инçет сывăх ĕнтĕ:
Темиçе ту-сăрт урлă каçса,
Амăрткайăк куç хупрĕ пулин те,
Чĕпписем унăн сывă, таса.

Вĕсене унăн тусĕ ӳстерчĕ,
Хăй тусем хушшинче ӳснĕскер.
Хурçăран вăл çунат çитĕнтерчĕ,
Хăруш мар тек пире нимĕскер.

Ĕçлесе пурнакан пур этемлĕх
Халь пĕр çын патнелле туртăнать;
Чи таса кăмăлпа, чи илемлĕ
Парнесем ун патне вăл ярать.

Ват ăста ятнех атă çĕлет-и —
Пур чунне хăй ĕçне вăл хурать,
Кинемей кĕпе умĕ тĕрлет-и —
Кашни пурçăн сĕвемĕ юрлать.

Ваза, чĕлĕм, сĕтел-и, пукан-и,
Чернил савăчĕ, хут касмалли —
Пĕтĕмпех юратса туса панă
Ĕмĕрех ĕçлекен çын алли.

Китайран янă зонт, унăн ячĕ —
Вуншар пин çын хӳтти: Ван-Минь-Сань.
„Тĕнчене çĕнĕ çутă вăл пачĕ“
Тесе янă Иран кĕмĕл сăн.

Ак Испани урлах каçнă танлăн
Мăшăр тутăр вĕçсе, кур ăна.
Çӳхе пурçăн çинче Ленин — Сталин,
Ĕççынни çавсемпе пурăнать.

Пусмăр пусна индеецсем акă,
„Сталинран асли çук тĕнчере!“
Тесе янă ăна чап калпакĕ,
Ару пуçĕ туса ĕмĕре.

Индуссем, çулпуçне саламланă
Ыр сăмах çиттĕрехчĕ тесе,
Пĕр пĕрчĕ рис çине çырса янă,
Виççĕр саспаллирен ирттерсе...

Çавнашкал, нимле виза ыйтмасăр,
Парăнмасăр штыка та хĕçе,
Йĕтĕр çăтнă пек тӳрĕ те каçăр
Дипломат пуçĕ урлă вĕçсе,

Ыткăнать юрату, аслă шанчăк.
Адрес — виçĕ сăмах. Халь ăна
Пур чĕлхеллĕ çĕршыв та ăнланчĕ:
Мускава, Кремле, Сталина.

Юлашки хыпарсем итлесессĕн,
Кремль сехечĕ вуниккĕ çапсан,
Тĕлĕрет ман çĕршывăм тулеккĕн,
Ĕмĕтсем çитнипе савăнса.

Анчах Кремль варринче пур пĕр кантăк,
Çĕрĕпех ун сӳнмест-мĕн çутти.
Çавăнта, пур тĕнче çывăрсан та,
Илтĕнет-мĕн пĕр çыннăн утти.

Çын çӳрет шăплăхра каллĕ-маллĕ
Хăйĕн ĕмĕр пĕр пек уттипе,
Е сасартăк ларать, ăс-хавалĕ
Шыракан сăмахне тупнипе.

Вăл çырать. Çӳлте Ленин портречĕ.
Умĕнчи хăмăр томĕ çинче
Пурте пĕлнĕ Ильич силуэчĕ,
Унпала канашлать вăл иркчен.

Кам пĕлет харсăр шухăшпалан вăл
Çак çуртран хăш çĕре çитнине.
Витĕр куçĕ ĕçпе хавхаланнă,
Тинкерет вăл тĕнче карттине.

Тӳпере варкăшать Кремль ялавĕ
Амăрткайăк вĕçсе иртнĕ пек.
Партин ту ăмăрткайăкĕ!—Çавă,
Çавăн ăсĕ вĕçет тĕнчипе.

Карттă хучĕ çине акă куçăн
Хĕрлĕ çутă хӳсе килнĕ пек.
Çур мильярдлă Китай çинчен ку сăн
Нихăçан каяс çук ĕнтĕ тек...

Мĕнлерех-ши тырпулă Болгарин?
Çитмелле-ши Албанин хăйне?..
Хăвăртрах мильоншар гектарăн
Актарасчĕ Лысенко сортне...

Пĕр чĕлхеçĕ пирки çырмаллаччĕ...
Пурте кирлĕ халех... Ĕлкĕрес...
Сывалать-ши Пальмиро Тольятти?..
Миçе сас миршĕн пухнă конгресс?..

Инçетри Хĕвелтухăç кутемĕн
Вăранать те пулас ыйхăран.
Çур çĕршыв сывăрать-ха тӳлеккĕн,
Ма тесессĕн—пĕр çын сывăрман.

Кам пĕлет çĕр каçа миçе хут вăл
Чĕлĕмне тултарса чĕртнине...
Çывăр, савнă çĕршыв, сывăр тутлă,
Сан ĕçе тăмалла ирхине.

Аслă халăх! Тăхлан çумăр витĕр
Тин кăна иртрĕн эс улăп пек,
Паян кун утăмлатăн пĕр шиксĕр
Еçлĕ кунăн кăвак тумĕпе.

Чап-мухтав та, парне те эс ыйтмăн,
Эс пĕлен ху чысна тахçанах:
Çар геройĕн те çăлтăрĕ ылттăн,
Ĕç геройĕн те—çав ылттăнах.

Ирсерен çутăрах эс куратăн
Хĕрелсе тухакан хĕвеле.
Пур йăхсен чĕлхипе эс юрлатăн:
Сталин — мир, Сталин — пурнăç, телей!

## 3. ЭП СĂМАХ ХĂВАТНЕ ĔНЕНЕТĔП

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳквине те пулать çĕклеме.

Эп пĕлеп: сăмаха хĕрлĕ хурçăн
Хĕмлетсе хыптарсассăн кăна

Вăл парать ăшшине ырă тусшăн,
Вăл касса пăрахать тăшмана.

Чăн сăмах! Эс ăна ÿстеретĕн
Чĕрепе те, чунпа та юнпа.
Çапла çеç вăл пулать ĕмĕрсемшĕн—
Çулти çутă маяк, вут юпа.

Çапла çеç вуншар пин çухрăмран та
Магнит пек вăл туртать çынсене...
Эп манман, манас çук никăçан та
Мускавра Горькие курнине.

Чĕрĕ Данко! Пĕрре кăна куртăм,
Пĕрре çеç илтрĕм ун сассине—
Пĕтĕм шухăшăм, кăмăлăм, чунăм
Талпăнса туртăнчĕ ун енне.

Çавнашкал тепĕр сасă-йыхравçă
Асра юлчĕ нихçан манмасса.
Вашингтон Шурă çурчĕ—хăравçă!—
Виза памĕччĕ халь çав сасса.

Анчах пур дипломат пусĕ урлă,
Пур тÿре-шара урлă—çаплах
Ыткăнать шавлă, тăвăллă, хумлă
Маяковский малтан малалла...

* * *

Чăн сăмах! Вăл пирте усă саслăн
Ирĕк вăйлăн тăрать янраса.
Сахал мар çĕрсенче-ха сăмахăн
Ирĕкне илмелле çапăçса.

Унта чăн сăмаха хĕсĕрлеççĕ,
Пур вĕт-шакăр йытта вĕртерсе;
Кунĕн-çĕрĕн йĕрлеççĕ, пÿлеççĕ,
Анчах çук пĕтерме тĕрĕсе.

Сăмаха тĕрмене те хупаççĕ,
Сăнчăрлаççĕ кашни сыпăкне.
Ун чухне стенасем калаçаççĕ,
Чăн сăмах çитетех çын патне.

Бурсăра вунвиç çул чул та тимĕр
Кышлаттарчĕç Назым Хикмета.
„Ÿкĕн,—терĕç ăна,—йăлăн, тилмĕр..."
Çук! Пĕлмерĕç вĕсем поэта.

Ун чĕри парăнми юнпа тапрĕ,
Унăн шухăшĕ пулчĕ инçе.
Ун кунне вырăс хĕрĕ çутатрĕ
Тĕттĕм тĕрĕк тĕрмин тĕпĕнче.

Вырăс хĕрĕн, совет хĕрĕн пичĕ,
Зойăн сăнĕ ялан асĕнче;
— Манăн ирĕкĕмшĕн çав хĕр вилчĕ,—
Терĕ вăл чи хура каçсенче.

Ун çинчен хучĕ вăл ăшă юрă,
Йăмăк терĕ ăна юратса.
Кирпĕче шăтарса сăмах тухрĕ,
Кайрĕ тĕрĕк çĕрне хускатса.

Тинĕс урлă каçса вăл янрарĕ
Софире, Парижре, Мускавра.
— Хăтарар! — терĕ те ĕçлĕх çарĕ,
Чăмăртанчĕ пĕр шухăш тавра.

Поэта хăтарса, алă вĕççĕн
Йăтса тухрĕ тус-йыш çавăнтах.
Çĕнĕрен çĕнĕ вăй хушса вĕçнĕн
Ыткăнать, çĕкленет чăн сăмах.

Тав сана, пирĕн тÿсĕмлĕ тантăш!
Сывă çитрĕн хĕвел çĕршывне.
Тек сана сăнчăрлаймĕç нихçан та.
Тав, Назым! Тыт телей куркине!..

Илтрĕм эп: долларпа пĕр каварлă
Тÿресем, хуçине итлесе,
Сана халĕ çĕршывсăр хăварнă.
Кĕлмĕççем!—тес килет питлесе.

Турцин намăс пĕлмен янычарĕ—
Пуççăр пуçлăх—вăл сутăннă халь.
Епле вăл сăмаха тытса чарĕ,
Çав сăмах çĕклесен халăха?!

Паян — пуçлăх, ыран — çĕр ăманĕ,
Кам астутăр ун ирсĕр ятне?
Поэта халăх усрĕ, ăнланĕ,
Вут çинчен пырĕ вăл ун патне.

Пур хушу, пур чару, çын элекĕ —
Хут çине çырăнать те вилет,
Чăн поэт—халь те кăмăл тĕрекĕ,
Пин çултан та—чи çутă тивлет.

Чăн поэт турпаса ташлаттарĕ,
Ирĕ пăр, халсăра парĕ хал.
Чăн поэт—юрату, халăх тарĕ,
Йĕнĕрев яш кăларнă кинжал.

Тĕнчене икке уйăрнă тапхăр
Пире сыхă пулмашкăн чĕнет...
Тав сана, пирĕн шанчăклă паттăр,
Аслă ирĕклĕх тусĕ—Хикмет!

* * *

Сăмаха мăйкăчпа йăлмакласçĕ:
Паллă парĕç—карт туртĕ палач.
Шăтарас пек куçпа пăраласçĕ
Алăк витĕр ăна:—ан калаç!—

Çав пăра пек куçран хăрамасăр,
Çав йăлмак карăнас кунччен
Прагăри тĕрмере вăрттăн, харсăр
Сăмахсем çырнă паттăр пĕр чех.

Кашни хут татăкки, хамăр шаннă
Çынсенче çутă ĕмĕт чĕртсе,
Йĕрлесен те—пытаннă, усраннă,
Кăвакарчăн пек тухнă вĕçсе.

Çав Панкрац теекен хура хурлă
Тĕрмерен, Прагăран—çавăнтах
Вĕçсе ўкнĕ вăл пур çĕршыв урлă —
Çăкăртан кирлĕрех чăн сăмах.

Пĕр хут мар çав сăмахшăн—çĕр хут чик
Йăлмака, çулăма, çĕр тĕпне:

Пурӑнать пирӗн Юлиус Фучик,
Хупӑрлаймӗ тӑпра ун ятне!

Эп тытап кӗнеке: вӑл ҫӳхе те,
Анчах йывӑр нумай томсенчен.
Миҫе хут хама хам эп чӳхетӗп
Кӗрешӳ хумӗпе пур енчен!

Юрату юрри мар, роман мар вӑл:
Ӗмӗрхи тӑшмансем чӑтайми
Ҫӗкленсе ҫунмалли типӗ тар вӑл,
Ун кашни страници—динамит.

Хуплашки ҫиййӗнче сӑнӳкерчӗк:
Ҫамрӑк Фучик кулать чун тулли.
Мӗнле йывӑр пулсан та ун терчӗ,
Тӑшманран вӑйлӑрах ун кулли.

Хаяра ҫӗнтерет ырӑ ҫынлӑх,
Ҫутӑ кун ҫӗнтерет тӗттӗме.
Ҫавнашкал ҫӗр ҫинчи аслӑ чӑнлӑх.
Паян тин ҫук ӑна пӗтерме!

Эп вулап кӗнеке, аслӑ класӑн
Вӑйӗпе манӑн чунӑм тулать.
Ҫамрӑк паттӑр кулать шав хаваслӑн,
Супнӑ кив тӗнчерен вӑл кулать...

* * *

Аякри Чилире тепӗр сӑвӑҫ
Хӑй ҫине илнӗ йывӑр ҫӗклем.
Халӑхсем ӑна ӗмӗр тав тӑвӗҫ,
Эп те уншӑн чуна кӗвӗлем.

Вӑл ҫӳрет, ӑмӑрткайӑк ҫунатлӑ
Шухӑшпа тӑшманран пытанса:
Вӗл ҫӳрет, Фучик ҫӗрӗ ҫуратнӑ
Поэтран хушамат йышӑнса.

„Таркӑн“ тет вӑл хӑйне. Эх, мӑнтарӑн
Йӑваран тухса ӳкнӗскерсем!
Кам чунне сутас мар тет — ҫав „таркӑн“,
Кам суймасть — ҫав унта „ют“ этем.

Вăл çÿрет — миршĕн тухнă йыхравçă,
Телейпе кĕрешӳ хыпарçи.
Хресченсем ăна çăкăр параççĕ,
Ашă сĕт, виноград—лар та çи.

Шахтёрсем, матроссем, куçма-куçăн
Курманни те—кĕтеççĕ ялан.
Çурçĕрте те ăна алăк уçă,
Ун юрри илтĕнет аякран.

Пуянсемшĕн пулмасть мыскараçа,
Доллăрла вăл сутмасть юррине
Ун таса кĕввисем шантараççĕ
Çутă ĕмĕт—Мускав—пуррине.

Тав, мухтав сана, Пабло Неруда!
Ытларах куçчăр пирĕн енне:
Çăмăл пултăр аллу та, юрру та!
Тав, мухтав коммунизм çарне!

* * *

Парти—хурçă колоннăсен çарĕ.
Ун çулне, тĕллевне пĕлсен тин
Умри ĕмĕт çитсе ялтăрарĕ
Сарлакан, пархатарлăн, туллин.

Парти! Ун умĕнче чун яр уçă:
Вăл тĕпчет, вăл пĕлет, çул сĕнет
Паян — слесарь, ыран эп — çарпуçĕ,
Паян — токарь, ыран—президент.

Парти! Кăмăл мĕнле-ха çĕкленмĕ?
Паян эпĕ — кĕтӳçĕ, ыран—
Пур тĕнче пĕлекен академик,
Пуçланать çĕнĕ чăнлăх манран.

Парти—чакмĕ пĕр шит каялла вăл,
Вăл ĕçлет пур этемлĕх валли.
Ун çинче—аслă Ленин ялавĕ,
Умĕнче—аслă Сталин алли.

Доллар пуçлă хуçан пин „геройĕ“
Çаврăнмашкăн чараймĕ çĕре:

Эпĕ—партийĕн пĕр рядовойĕ—
Вĕсенчен вăйлăрах тĕнчере.

Ман хирте халь комбайн, экскаватор,
Вĕсен—тупă та танк хуп-хура.
Пĕр-пĕрне тинĕс урлă куратпăр:
Вĕсен—вилĕм, ман—пурнăç умра.

Ман умра—пĕтĕм çĕрĕн телейĕ:
Ĕçпеле пиçĕхсе ӳснĕ чун—
Партипе пултарап хĕвеле эп
Çĕр çине антарма кирлĕ чух!

Акапуçĕ тытса хăпаланнă
Аллăма пĕтĕм халăх çинче
Парти хĕç пек перо шанса панă,
Эп пăрахмăп ăна виличчен.

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Сăмахсем тĕллĕ тухрĕç пулсан,
Ку—вĕсен тымарне те, тĕшне те
Аслă парти сĕткен панăран.

Тен, хальччен кирлĕ пек çырайман та,
Ахаль мар пуль каймасть асăмран
Рельс çине урлă выртнă Раймонда—
Хĕçпăшал поездне чаракан.

Çавăн пек, çав вулкан евĕр Францин
Паттăр хĕрĕ—Раймонда Дьен пек,
Мирĕн пĕр тăшманне эп чарсанччĕ
Сăввăмра çунакан чĕремпе!

* * *

Франците асăнсан, пĕр писатель
Паянхи пек тухать куç умне:
Хусана Жан-Ришар Блок пырсаччĕ
Хĕрĕх пĕрмĕш çулта, кĕркунне.

Хулара çын виç хут ытларахчĕ,
Ак тата пĕр хура каçхине
Мускавран çитнĕ поезд антарчĕ
Мускаври литераторсене.

Пичет Çурчĕ патне тăкăлаççĕ:
Пур сĕтелĕ-тенкелĕ çине
Тулнă сын; çавăнтах выртkалаççĕ,
Çикелеççĕ хăйсен паёкне.

Çавăн чух аякри хăнана та
Малтанхи майлашман кунсенче
Пур рабочисемпех эп кураттăм
Типографи столовăйĕнче.

Мĕн тери сăнаса вăл пăхатчĕ
Черетри çынсене Жан-Ришар!
Куçĕнче хурлăх та курăнатчĕ,
Шанчăк та—хурлăхпа юнашар.

Ват наборщик, фальцовщица-карчăк,
Переплётчик-старик, метранпаж...
Çамрăксем ăçтине вăл ăнкарчĕ,
Пĕтĕмпех курчĕ пирĕн юлташ.

Çав кĕр сырчĕ вăл „Франци вулканĕ“,
Тыткăнри Парижне асилсе.
— Пусмăра хирĕç халăх хусканĕ!—
Терĕ, пирĕн вăя ĕненсе.

Мир кӳрес кĕрешӳ ветеранĕ,
Пирĕнпе пĕр çарта утнă сын,
Ĕмĕрех ман асра вăл усранĕ—
Хĕç çĕкленĕ поэт-гражданин.

Пĕлтĕм эп: ырă тусăмăр вилнĕ,
францире—сӳнмĕ вутлă вулкан.
Ахаль мар пролетарийĕн гимнĕ
французла янăранă малтан!

* * *

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме.

Ман тупасчĕ, мĕнле шырасан та,
Ĕмĕрхи тăшмана çапнăçем—

Ӳкесле кăна мар—нихăçан та
Тăмасла çапакан сăмахсем.

Ман тупасчĕ паян Вилли Макги
Таса чунĕшĕн чĕрĕ сăмах.
Ĕмĕре юлтăр сăвăç сăмахĕ,
Пултăр вăл вилĕмрен вăйлăрах.

Ман тупасчĕ çав айăпсăр негрăн
Ачисемшĕн чĕрем сăмахне.
Ылханасчĕ, питлесчĕ хаяррăн
Куçма-куçăн вĕсен тăшманне.

Пуринпе те пĕр тан, пĕртăванлăх
Пурнакан çак чăваш çĕрĕнчен
Кăшкăрассăм килет халĕ манăн
Океан леш енне çитиччен:

Эй, эсир, капитал—атте турă,
Доллар—турăш, текен мĕскĕнсем!
Кирлĕ мар мана сирĕн „культурăр“,
Ăшăм-чиккĕм тулать асилсен...

Робсон, Робсон! Мĕн юрлăн тăшманăн
Чĕрине çуракан сассупа?
Тăванун куçне кур та, тăванăм,
Кашни нота халь пултăр—тупа!

Тăхлан куçлă çынсем сана хирĕç
„Сасси тытăнтăр“ теççĕ пулсан,
Тусусем сан басна уççăн илтĕç:
Кĕрешӳ, çĕнтерӳ, мир вăл сан.

Вилли Макги чĕнет! Унăн юнĕ,
Унăн çуннă чĕри вăл сӳнмен:
Ĕмĕрех вăл пирте хыпса çунĕ,
Пусмăр, хурлăх, ултав пĕтиччен.

Эпир ним те манман! Эп тытатăп
Улт кĕтеслĕ хура кăранташ.
Ун çинче икĕ ят эп вулатăп,
Вĕсем—çывăх мана, хурăнташ.

Икĕ рыцарь вăл—Сакко, Ванцети,
Вĕсене те пĕр айăпсăрах
Суд туса çыхса лартрĕ, вĕлерчĕ
Доллара пуççапан вăр-хурах.

Кашни шкул ачинчех вĕсен ячĕ,
Вутлă ток витĕр витрĕ чуна.
Аслă класс çиллине вăл хыптарчĕ,
Пин те пин чĕрере вăл çунать.

Эпир ним те манман... Канăç памĕ
Вăтăр ултăмĕш çул: чĕннĕ пек
Кăшкăрать сăнчăрланă Испани
Гарçси Лоркăн вĕри юнĕпе.

Ун чухне—Пиреней çурутравĕ,
Халь — Корея, каллех çурутрав.
Пĕрпекех çав асапăн сăлтавĕ,
Пĕр ятлах ункăланнă пăяв.

Вăл—фашизм, эпир ăна курнă
Шăннă Зойăн çинçе мăйĕнче.
Сахал мар пăвса тухрĕ вăл, урнăн,
Вупăр пек çав хура кунсенче.

Эпир ним те манман... Çук, манмастпăр!
Çирĕп миршĕн çĕклетпĕр алла.
Çурлапа мăлатук—пирĕн паспорт,
Пирĕн герб, пирĕн çăлтăр, ялав.

Вăхăт çитĕ: кашни тумлам юншăн
Халăх илĕ çĕр хут çĕр парне.
Çав куллен çывхаран çутă куншăн
Тав, мухтав коммунизм çарне!

1950—1951

## А. А. Жданова асăнса

Колонлă зал... Епле манайăп?
Нумай пулмасть-çке çак çуртра
Курсаттăм куçма-куç ăна эп,
Паян... паян вăл тупăкра.

Тин мар-и халĕ çакăнта вăл,
Трибуна умĕнче тăрса,
Çĕршер чĕресенчен пĕр тăвăл
Кăларчĕ алă çуптарса?

Епле хĕрӳллĕн, витерӳллĕн
Каланăччĕ вăл ун чухне!
Шанас килмест: чăнах эс ӳлĕм
Илтеймĕн-и ун сассине?

Çĕршывăн чăнлăхĕ пек уççăн
Янратчĕç ун сăмахĕсем.
Тин мар-и çакăнта, кануçăн,
Çӳретчĕç Горькипе вĕсем?

Писательсемпе вăл шӳтлетчĕ,
Асра ун кăмăллă кулли.
Паян оркестрсем хӳхлеççĕ,
Тӳсме çук хурлăх чун тулли.

Салхуллăн усăннă хураллă
Ялав ун тупăкĕ тĕлне...
Коммунистсем, мала! Хураллăр
Ун вилĕмсĕр ĕçĕсене.

Хураллăр, хушăр та ӳстерĕр,
Сарсамăр аслăран асла.
Малаллăха шанан чĕремĕр
Çунса ĕçлетĕр Ждановла.

1948

## Клара Цеткина асăнса

Усăр ялавăра, усăр...
Ус, Хĕвелтухăç, Анăç,
Кăнтăр колонийĕ, Çурçĕр—
Пурте ăна ăнланĕç.
Усăр ялавăра, усăр.

Тайăр пуçăра, тайăр,
Пур ĕçпе пиçнĕ хĕрарăм:
Аслă тăванăр кайрĕ,
Чарăнчĕ шухăшĕ Кларăн.
Тайăр пуçăра, тайăр...

Тăвăр тупа çак тапхăр:
Пултăр йыхрав кайнă тусăр
Аслă тăванăр, аппăр,
Çулăм чĕреллĕ çулпуçăр.
Тăвăр тупа çак тапхăр.

Пур-ха, çӳреççĕ нумайăн,
Çут хĕвеле курмасăр,
Чатăр-пĕркенчĕк айĕн—
Çын тивĕçне туймасăр...
Пур-ха, çӳреççĕ нумайăн.

— Сирĕр часрах, кăларăр!—
Тет пире чĕррĕн Цеткин.
Канăçлă пулĕ Клара,
Эпĕр çакна илтсессĕн:
— Сирĕр часрах, кăларăр!

Варкăш, ялавăмăр, варкăш
Хурлăхлă урна умĕн!
Кайтăр çĕр чăмăрĕ анлăш
Ирĕклĕх хĕрлĕ хумĕ.
Варкăш, ялавăмăр, варкăш!

1933

## Сеп Катаямана асăнса

Сайралать пирĕн ватă гварди.
Хурала, комсомолецсем!
Яш чĕре варрине шĕл кăвар чĕрт,
Хурлăхпа пуçна ан пĕксем.

Эп Мускав хулипе иртетĕп,
Мана чарчĕ хураллă ялав.
— Ĕнер çеç... мар, паян ирпе те
Шутламанччĕ...—тесе тайăлап.

Ĕнер çеç ман Октябрĕм харсăр
Юрласа янăрарĕ. Паян—
Тем чухлех, куççульне пытармасăр,
Ветеран тупăкне пуç таян.

Анчах эп ĕненеп: ватăлтармăн
Коммунизм ĕçне эс, ĕнер
Юрăпа утса, халь ветеранăн
Сив ӳтне салютлан пионер!

Сайралать пирĕн ватă гварди,
Аталанăр, хастар çамрăксем!
Яш чĕре варрине шĕл кăвар чĕрт,
Хурлăхпа пуçна ан пĕксем.

1933

6*

## Никос Белоянниспа ун тусĕсем ҫинчен

Шупашкартан пит ҫывăх мар Афины,
Пулса курман-ха эпĕ Грецире.
Унта ман тăвансен—тăвată ҫыннăн—
Пĕр ĕмĕтпе тапатчĕ пĕр чĕре.

Хăйсен ҫĕрне ют тыткăнран ҫăласшăн
Ҫунатчĕҫ ҫав ҫынсем халăхпалан.
Кам ирĕклĕхшĕн кĕрешет, ҫав маншăн—
Курман пулин те—ĕмĕрлĕх тăван.

Ак радио вĕсем ҫинчен каларĕ:
Персе пăрахнă... Чун кӳтсе килет.
Тăвată пĕр тăванăмăн хыпарĕ
Тăвată пуля пек ҫитсе тивет...

Сана ҫĕрле вĕлерчĕҫ, Белояннис,
Санпах пуҫ хучĕ виҫĕ тус ирччен.
Пĕтертĕм, терĕ пуль тăшман... Паян эс—
Этемлĕхшĕн ҫуралтăн ҫĕнĕрен.

Хăравҫă хурахсем! Вĕсем хăймаҫҫĕ
Пемешкĕн те пире кун ҫутинче,
Куҫăмăртан та тӳррĕн пăхаймаҫҫĕ,
Пĕлеҫҫĕ: чăнлăх пирĕн куҫсенче.

Ҫав чăнлăхшăн пире ҫĕртет-и карцер
Е каторгăра хуҫăлĕ ĕнсе,
Шăлча тăррине лартчăр, пăталаччăр—
Нихҫан ҫăвар уҫмастпăр ӳкĕнсе.

Нихҫан никам пытарайми пĕртен-пĕр
Ҫав аслă чăнлăхшăн тăракансем—
Эпир шăла ҫыртса вилме пĕлетпĕр,
Эпир—коммунистсем!

1952

# ĂСТАЛĂХ ЯЧĔПЕ

## Аван-и, Пушкин!

...Пире хирĕç сулă çине
туса лартнă вилĕм таканĕ
юхса анать-мĕн, ун урлавĕ
çинче виççĕн çакăнса пы-
раççĕ... Тулли уйăх çав
мĕскĕнсен сăнсăрланнă пи-
чĕсене çутатать. Вĕсенчен
пĕри вată чăвашчĕ.

*А. Пушкин.*

1

Çав çул пире ун вилĕмсĕр сăмахĕ
Çитсе çĕклерĕ Атăл хумĕ пек...
Ялтан яла, ытти ĕçе мансах, эп
„Онегинпа" çӳреп, чăвашлипе.

Кĕркуннехи тумхах пытанайман-ха,
Çуран тăман чупать çул хыттипе;
Автомобиль айне пулать айван хăй,
Хăй чăрсăр—шалт ие путекĕ пек.

Вĕрет-сурать, асать арçурилле те,
Слюда çумне те сыпăçса виртлет...
Çилпе такамăн юррине илтетĕп,
Тастан пĕччен шăнкрав сасси çитет.

Таçта сĕм пурнăç кĕрчĕ-юрĕ тăрăх,
Çил-тăвăл витĕр пĕр кӳме пырать.
Хăй çĕрĕнче те тыткăнри пек тăлăх
Пĕр çын унта кун-каçăн çул тытать.

Пĕччен! Лаша тавраш̆ĕ те—жандармăн
Аксельбантне ăна асилтерет.

Сĕм пĕлĕте пин кулăпа çаптарнăн
Çаралнă шурă хурăн шилетет

Сив çăлтăрсем çине пăхать вăл калĕ,
Хуркайăк Çулĕ сассăр йыхăрать...;
Телей çуках! Анчах та ирĕк, канлĕх...
Кала-ха ун çинчен эс хытăрах!..

Çӳлти хура юнсем, патша, Булгарин...
Куçшуррисем вĕлтлетрĕç вирелле
Янаххине ун тăлăпĕ хупларĕ,
Пасарнă бакенбарчĕ ирĕлет.

Тĕнкĕлтетет пĕрçемлĕ шăнкăравĕ,
Чуна тивеççĕ ямшăк юррисем.
Чĕрме тупан сасси, ут тулхăравĕ,
Ула юпаллă çухрăмсем... Кичем!

2

Тин тунă уйăх ылттăн пулă евĕр
Чăмать сайралнă пĕлĕт хушшипе:
Пĕр пусĕпе тухать вăл, именмесĕр,
Пĕр хӳрипе çапать юмахри пек.

Ăçта кӳме? Шофĕрăм кулса ячĕ,
Унпа кăна-ши эп? Çук: пур тепри.
Портфелĕмре ун кĕнеки, ун ячĕ,
Хăй—çуммăнах, çап-çамрăк та вĕри.

Аван-и, Пушкин! Ăшă-и, çемçе-и
Çак ГАЗ минтерĕ çийĕнче сана?
Каласшăнччĕ пĕр юрату çинчен эп,
Ман чĕрене хĕсет вăл тахçанах.

Пайтах пулать... Вăйĕа эп пит ерместĕм,
Сăмах та вакламастăмччĕ питех...
Кăтра ача, ман патăма кĕрсеттĕн,
Паллашрăмăр сĕм хăйă çутипех.

Кĕрхи каçсем вăрах вара, чĕнмесĕр,
Чавсаланса лараттăмăр ун чух.
Сисеттĕм эп: çунат ӳстернĕ евĕр
Кăтăкланса ман ырататчĕ чун

Сап вĕлтĕрен уки пек çӳçӳнте те,
Кӳренчĕкле кӳпшек тутусенче,
Аяккалла пăхан куçусенче те
Кураттăм эпĕ урăхла тĕнче.

Аслăланатчĕ тăвăр пӳртĕм манăн:
Йĕре-йĕре çӳрен çил ачисен,
Чӳречерен шаккан кĕрхи тумламăн —
Йăлт урăхчĕ пĕлтерĕшĕ вĕсен...

3

Çул хыççăн çул... Ак иртрĕ те ачалăх
Сенкер тĕтреллĕ шуçăм сутăлчĕ.
Куç уçăлчĕ. Яр сирĕлчĕ шăналăк:
Куç умĕнче тем пысăкăш тĕнче.

Çап-çарамас поэт чунĕпе утрăм
Асаплă-илĕртӳллĕ çулпала.
Çăмăлах мар çĕклерĕ манăн çурăм,
Каллех эп туртăнтăм сан патналла

Ăнлантăм: шăхăрса юрра ямашкăн
Çак пурнăç туй та уяв мар ялан.
Поэзи куркине вара пăртаккăн
Хушмашкăн тиврĕ сивĕ шыв та ман

Çĕршывăма куллен ман ӳсрĕ парăм.
Çурма çултан тавăрăнни — начар.
Каллех иккĕленӳ. Каллех шырарăм.
Каллех манпа эс пултăн юнашар.

Ак эп сан тăлмачу. Шăпланчĕ музăм
Куç хӳрипе пăхать те хушăран,
Тухъяллăскер тăрать вăл тайма пуçăн,
Вилес пек кӳлешет Татьянăран.

Эп санпала куçа хупмасăр лартăм:
Кашни сан сăмахун чăн-чăн тĕшне
Шĕкĕлчесе илесшĕн асаплантăм,
Мĕнле кăнттам эп пулнă ун чухне!

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн.
Сан урăхла янран сăввусенче

Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн,
Мĕнле вара эп савăнаттăмччĕ!

Хавхаланса, çунса та, тарăхса та,
Хăй вырăнне лартсан сăмахăма,
Сĕм вăрманта çул тупнă пек сасартăк,
Чĕлхе ăсти пек туйăнтăм хама.

4

Ямб пек яка та тикĕс пирĕн çул-йĕр,
Шав ыткăнать вут куçлă урхамах.
Шап-шурă юр... Кайсан-кайсассăн — çÿлĕ
Хура вăрман сиксе тухать уммах.

Армак-чармак ват юмансем лараççĕ
Çара туратсемпе кар карласа.
Вĕсем Пугачева та курнă, Разин
Çыннисене те юлнă палласа.

Эс курнă вĕсене. Ав вăл çĕкленнĕ
Виç ытама та кĕрейми юман.
Сан тăваллă кунна-çулна ирттернĕ,
Манран та пултарать-ха вăл юлма.

Анчах пире-и çак çĕрте çĕрмешкĕн?!
Эпир ун йышши мар. Ак эс паян
Пур çутçанталăка тĕлĕнтеретĕн,
Этемлĕх çамрăклăхĕ пек шавлан.

Кустар, машина, чун-чĕре çĕклентĕр,
Çил пек касса кĕр çĕнĕ ĕмĕре!
Кунта... кунта кăшт чарăнăпăр эпĕр:
Хăна пулма чĕнеççĕ халь пире.

Пăхсам, поэт, кур халăха паян ак,
Кур ĕмĕтне çитернĕ çĕршыва:
Çакса сулăпала юхтарса янă,
Юнпа ăна кĕлернĕ, вăл сывах!

Хапхаранах тухса илет тăванăн
Сана вăл сарлака чĕрипеле:
— Пусма пек пултăр ман саламăм саншăн,
Кĕрсем, хăнам, иртсемччĕ тĕпеле.

Пехил сана: пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ!
Ларсам ман ирĕклĕ кĕрекене.
Сан вăрлăху вăрман пек ĕрчетĕрччĕ!—
Тесе сĕнет вăл савăш куркине.

Ларар, поэт: хальччен çăкăр-тăварсăр
Ӳсмен-ха вăл эреш те ярапа.
Тĕппи курка! Сахал пулсан—ăсатпăр
Юри хывтарнă Алтăр çăлтăрпа.

1937—1949

## Максим Горькие

Сасартăках çăвар уçма та йывăр
Пыра пăвать куççуллĕ кĕмĕркке.
Ырми-канми ăс-халшăн „канлĕ çывăр"
Тени паян ытла та тĕлсĕр-çке!

Вăл вилнĕ Горкăра. Халь Мускавра
Вĕçет шур тополь мамăкĕ çемçен.
Ку тепĕр траура астутарать,
Астутарать январь сивви çинчен.

Юр пĕрчисем ванмасăр кĕмĕлленнĕ
Çав аслă тупăк çийĕнче ун чух.
Тĕнче сывланă ассăн... Горький—Ленин
Пĕрлешнĕ çĕршĕн ĕмĕр вилĕм çук

1936

## Колонлă залра аса илни

Писательсен съездне хупсассăн,
Вăтăр тăваттăмĕш çулта,
Çак кил-çурта эпир хавассăн
Пуçтарăнтăмăр банкета.

Мускавăн çăкăрĕ-тăварĕ
Халичченех ман куç тулли.
Нимрен ытла асран каймарĕ
Эп Горькипе пĕрле пулни.

Паллах: çынсем, ăçта ларсан та,
Пырасшăнччĕ ун патнелле.
Эп те ун çывăхнех пырсаттăм
Сиксе тапан чĕрепеле.

Ун аллине алла тытсассăн,
Калассăм килчĕ ман веçех...
Кĕске самант хушши мĕн калăн?
Каларăм халăх ятне çех.

Чăвашсенчен эп сывлăх сунтăм.
Хуллен тав турĕ вăл мана.
Ун умĕнче хама эп куртăм
Шкулти ача пекрех кăна.

Ун тинкерсе пăхан кăшт хурлă
Куçне, ун туртăннă ӳтне
Асăрхасан—хама пит юрлăн,
Айванăн туйрăм ун чухне.

Унтах темле аван та çăмăл,
Темĕскере çĕнтересле,

Çунат хушса çĕкленчĕ кăмăл—
Вĕрен, шыра, тĕпче, ĕçле!..

Эп Атăл тăршшĕнче сăнанă
Тармакланса утан, патвар,
Вунпилĕк пăт йăтма пултарнă
Тĕреклĕ грузчик сахал мар.

Явса хытарнă шăнăр кирлĕ
Ун чухлĕ йăтакан çынна.
Пăлхавăр хирĕн çавраçилĕ
Хиврен хытарнă пуль ăна.

Хушка хумсем сиктернĕ пулĕ
Ун киммине ĕмĕртенпех.
Ун вăйĕ, тӳсĕмĕ, кун-çулĕ—
Çĕнтернĕ халăх сăнĕ пек.

Çав грузчика аса илтерчĕ
Кӳрнеклĕ, çӳлĕ Горький те:
Эгем асапĕ, пурнăç терчĕ,
Тĕнче нуши мĕн ĕмĕртен

Ун çурăмĕ çине тиеннĕ;
Çавна тӳссе çĕнтернипе
Çĕкленнĕ вăл чăн-чăн ĕçченĕн
Ытарайми илемĕпе.

Ялан ăна çапла эп курăп—
Чĕррисемпех, чĕр халлĕнех.
Мĕн виличчен асра эп усрăп
Ун ăшă пиллĕ аллине.

1951

## Федерико Гарсиа Лорка

Макăр, муза, макăр.—
*А. Пушкин.*

Эп сана нихăçан та курман,
Хăвăнтан итлемен юрруна та.
Çав-çавах сан сăну халь пур ман,
Эсĕ ман чĕрере пурăнатăн.

Сан паха çĕршыву—çĕн Испани
Сана чĕртĕ виç хут, пĕрре мар.
Тумлам юн таранччен эсĕ панă
Ана ирĕклĕх çĕрĕ тума.

Эс чĕнни янăрать тавралла,
Сан тăван тусусем пур çĕрте те.
Сан юнланнă ялавупала
Юлашки сăввуна эп çĕклетĕп.

Макăр, муза, хӳхле! Пĕлтĕн, куртăн—
Кам сан пуçкăшăлне таптакан.
Çĕклесем халăха паттăр Лоркăн
Парăнми юррипе паянтан.

Эсĕ куртăн ачаллă хĕрарăм
Кăкăрне касакан палача;
Бомбăсен сассипе эс анрарăн,
Штык вĕçне тирĕнет ав ача.

Мăшкăлланнă хĕрсем макăраççĕ,
Вăтанаççĕ пăхма çын çине.
Макăр, муза, хӳхле! Чĕрĕ Гарси
Çиллипе хутăштар куççулне...

Чӗрӗ эс! Тыткӑнланнӑ Гренада
Ҫапса ватӗ тӑшман сӑнчӑрне.
Ху ҫинчен те, хӑвӑн юрруна та
Савса юрлӗҫ вара ӗмӗрне.

Эп сана нихӑҫан та курман,
Манмасса паллашатӑп халь тин.
Анчах эс чӗремре пурӑнан,
Харсӑр юрӑҫ, салтак, гражданин!

1936

# Мицкевич

Юнлатнă Польшăмăн вĕри куççулĕпе
Ман çилĕллĕ сăввăм сăнчăрăра пат таттăр!
*А. Мицкевич—„Вырăс тусăмсене“*

Буг урлă каçсанах, поляк çĕршывĕнче,
Кĕретпĕр пĕр яла... çурт çукчĕ ялĕнче...
Унта мĕн курнине эп манмăп виличчен,
Картинĕ кивĕ те—çапах куç умĕнче:

Çыр хĕррине пăхса, шап-шур старик пĕччен—
Çаратнă, тăлăхскер—тăратчĕ кĕл çинче:
Тертрен хăтарасса вăл кĕтнĕ тахçанччен,
Ун ĕмĕтне сыпма пыратпăр Буг енчен.

Çунтарнă пĕтĕмпех. Поэт сăнĕ кăна
Сыхланнă теплерен. Вăл курнă пек мана.
Эп ун çине пăхса чĕнмесĕр иртеймерĕм:

— Мицкевича салам, тăван саламĕ!—терĕм.—
Сан çилĕллĕ сăвву, патмар çарçынни пек,
Телейлĕ Польшăшăн утать халь пирĕнпе.

1944, июль, Польша.

## Павло Тычинăна

Пĕр вичкĕн квинтина, пĕр çирĕп терцина
Пулса сан сассу çĕкленет.
Салтак пек пырать пирĕнпе халь Тычина,
Приказ юрă пек илтĕнет.

Музей ишĕлет, сад çунать... Бомба, мина
Çĕре, пĕлĕте кисретет.
Анчах нихăçан вилес çук Украина,
Юрри пĕтмĕ ун ĕмĕрте.

Çут шуçăм çинче халлĕхĕ юн куратăн,
Хаяр тавăру юррине эс юрлатăн:
„Клаас! Сан кĕлӳ çунтарать чĕрене!"

Хăватлă Тарасăн таса амăшне
Эс йывăр кунра пăрахмарăн,
Чăн ывăлĕ пек ыталарăн.

1944

## Николай Тихонова

Эп Сталинградшăн çапăçнă çĕртеччĕ,
Салтак пулса тăрсаттăм çав рете.
Вилме тивсессĕн—вил, анчах çĕнтерччĕ
Юрпа пусараннă çеçенхирте!

Пуçсем çинче çил-тăвăл шăхăратчĕ;
Яшки, çăкри, консервĕ—йăлт пăр пек.
Чи йывăр кунсенче Мускав хаçачĕ
Çитерчĕ сăвă—„Киров пирĕнпе".

Сасартăках окоп ăшăнса кайрĕ:
Çав сирĕн сăввăр çитрĕ вăхăтра.
Ун тимĕр тӳсĕмĕ пире кăтартрĕ
Хирсен те хирĕлми вăй-халăра.

Мĕнпурĕ—вырăс-и эпир, чăваш-и,
Грузин-и, е тутар-и, е узбек—
Российăна татах, татах ачашшăн
Юратрăмăр тăван аннемĕр пек.

А сирĕн чăн сăмахăр, Сталинградшăн
Çапăçакан салтаксемпе пĕрле,
Нева çинчи Ленинграда çăлмашкăн
Тапсаваскарĕ Атăл çинелле.

1946

## Сулейман Стальский

Тем пысăкăш залра пуху пыратчĕ,
Унта пĕр кун çеç мар пирĕнпелен
Çав çирĕммĕш ĕмĕр Гомерĕ ларчĕ,
Çапла каларĕ Горький ун çинчен.

Сăмах ăстисене тĕлĕнтереймĕн,—
Вĕсем час сисĕç суяна-чăна.
Вăл сас парсан—колоннăсем чĕтренĕн,
Чул çурт çӳçеннĕн туйăнчĕ мана.

Шур çӳçлĕччĕ ашуг, черкес тумтирлĕ,
Сăмах кăларнă пек йĕс хĕлĕхрен
Вăл купăс каласа юрларĕ вирлĕ,
Астурăм эп: вăл хут вĕренеймен...

Сархайнă ватă пӳрнисем çинçелнĕ,—
Тытассăм, чуптăвассăм килчĕ ман:
Çав ик алла мĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ,
Анчах пĕр саспалли те çыртарман!

1948

## Поль Робсон

Выртас чух эп радио итлерӗм,
Хурлӑ сасӑ ҫитрӗ инҫетрен.
Вӑл ҫӗрте халь ҫутӑлнӑ; синкерӗ—
Ҫурҫӗртен те хурарах иккен.

Тарӑхса юрлать ҫав хурлӑ сасӑ,
Пӑчӑ тӗттӗмрен тухасшӑн пек.
Вӑл пӗлет: пӗр ҫӗр пур, унта раса
Сӑмаха ҫын асӑнмасть те тек.

Ҫав ҫӗре ӗмӗрлӗхех юратнӑн
Тунсӑхпа ҫунса вӑл кӗвӗлет:
„Ирӗк ҫын сывлать унта хаваслӑн,
Тек курман ун пек ҫӗр эпӗ“ тет.

Ман ҫӗр ҫав юрра юрлать мӑнаҫлӑн
Аякри тӑванӑм! Ҫитӗ кун:
Эс те юрлӑн пирӗнпе пӗр танлӑн,
Тӗксӗм ӳтлӗ-тирлӗ ҫутӑ чун!

1948

## Джамбул

Казахлах ăна эп вуласассăн,
Урăхла ăнлантăм ун чапне:
Тăлмача пит йывăр çывхармашкăн
Унăн äслă кăмăлĕ патне.

Чĕр мĕлкен хирте ăна куратăн,
Юлнă пек вăл шавлă ордаран.
Тихана вăл хăнтăр тет ачашшăн,
Лашине савать тумрипе тан.

Кĕр-ха ун чунне! Çĕре çитсен те,
Йĕнерпе пырсах, пур кăмăлтан
Ленинградсене вăл *ачамсем* тет,
Сталина *атте* тет вăл ялан.

1948

## Гади Такташа

Хӑнаҫӑм! Хӑҫан-ха, хӑҫан эсӗ килӗн?
Кӗтет кӗрекем. Сана парӑм та пур-иҫ...
Мӗнле кӳлепесӗр те пушӑ-мӗн вилӗм!
Мӗнле сӑн-сӑпатлӑ та тулӑх ҫак пурнӑҫ!

Тиф ернӗ. Ӑҫтан кун пек проза тавраш?
Шупкалчӗ малтан умри ТАСС телеграмӗ,
Унтан вӑл хуралчӗ: Г а д и  Т а к т а ш...
Епле-ха, епле сана чӗмсӗр курам эп?

Ҫук, эс шухӑшлаттӑн вилме капла мар:
Мӑкланнӑ аваллӑх пуҫне ҫӗклесен,
Вӑр-вар эс тараттӑн хастар та хаяр,
Питлеттӗн ӑна чӗнейми тӑвиччен.

Сан тӑвӑллӑ пӗлӗт сӑнарлӑ куҫу
Йӑваш кулӑпа-та ҫиҫетчӗ шалтан.
Вилме кӑна мар—ватӑлма та май ҫук
Шӑпа пӳрнӗ пекчӗ сана пурнӑҫран.

Усламҫӑ, мулла, пур йӑх-ях та чӗтретчӗҫ,
Шыратчӗҫ санран пытанма сӗм кӗтес.
Сана ҫамрӑксем алӑ вӗҫҫӗн ҫӗклетчӗҫ,
Эп те вӗсемпеччӗ, сисеттӗн-ши эс?

Пире ун чухне пӗр тӑлмач куҫаратчӗ,
Паллашрӑмӑр унӑн уллах ҫуртӗнче.
Тулта сивӗ ҫил тӗнчене тустаратчӗ,
Анчах ӗҫ хӗрсен ҫап-ҫутахчӗ тӗнче.

Пӗрре кутсӑр-пуҫсӑр хаяр тӑвӑл витӗр
Барабӑз[1] пиччен тутарла ҫунипе

[1] Барабӑз — тутарла каятпӑр тени пулать, Хусанти лавӑҫсене апла чӗнетчӗҫ.

Таçта Ар уйнех кайса килтĕмĕр шиксĕр.
Юри алхасса, çăварни чупнă пек.

Казанка çине виççĕн харăс тухсассăн
Пăртак кантармашкăн анранă пуçа,
Пĕри çунашка, тепри йĕлтĕр тупсассăн,
Э-ех, тăвайкки ярăнаттăмăр çав!

Нумайччĕ вăй-хал, тен, ачалăх иртменччĕ,
Çакна та калассăм килет халĕ ман:
Этемччĕ эпир, пур енчен те этемччĕ,
Сĕтел хушшинче пĕшкĕнсе çеç ларман

Кайран тĕл пулаттăмăр иксĕмĕр эпĕр
Бильярд умĕнче хăш каçсем пĕр клубра
Выляттăн хĕрсе. Ху чапна эс пĕлмесĕр
Ун чух, тен, ăмсаннă ăста партнера

Пăшал пек тирпейлĕн тытаттăн эс кий:
Туза сулахай кĕтессе! Çук, чăммарĕ.
Е симĕс анан курăнми тĕмески
Пăрать-и шара? Е пустав яка мар-и?

Çапла çав: инкек те, ман халăх каларĕш,
Куçа курăнса килместех пулмалла.
Çапах ăнсăртран куç хупни хуплаймарĕ,
Хуплаймĕ те ырă ĕçлĕ кун-çула...

Çук, эс шухăшлаттăн вилме урăхла
Сан пурнăç курки тулаймарĕ çурри те
Ак эпĕ те саншăн паян хурлăхлă:
Епле юрăçне пытарать-ши юрри?—теп.

Анчах юрăçи юррине пытарни—
Тата хурлăрах пулмалла тĕнчере.
Апла пулас марччĕ! Çак пурнăç парни—
Ас-хал пултарулăхĕ пултăр пире.

Шанатăп: ялан çамрăк пулăн эс, юрăç!
Çĕршыв кĕнеки чыслăн упрĕ сана.
Çынсем çулсерен çутăрах хĕмлĕ курĕç
Сан тăвăллă пĕлĕт сăнарлă кусна.

1931, Тбилиси.

## Константин Иванова

1

Эс—ман пĕрремĕш юрату;
Сассу ачаранпах хистетчĕ:
— Еçне тытсассăн—вил те ту!—
Тесе мана калană пекчĕ.

Эс—манăн туслăх тав курки:
Чанклаттарса ĕçсе яран та,
Тĕпне пăхан: тата çук-и?—
Тумлам таран сăрхăнтаратăн.

Эс—манăн чунăм тĕкĕрĕ:
Самантлăх мухтава ан хапсăн,
Хур савнă ĕçшĕн ĕмĕре,—
Теп эп хама, сана пăхсассăн.

Ыйт хăвăнтан: тăван йăхна
Каламалли пурах-ши санăн?
Пурне пĕлсе çитсен кăна
Кĕсле тытмашкăн эс пултарăн.

Хальччен илтмен çĕн юрă-çем
Тухмасть пулсан, кала ӳпкевсĕр:
Янратăр, тантăш-тусăмсем!
Эп—сирĕн хапăл итлекенĕр.

1940

2

Эс—ман пĕрремĕш юрату,
Çĕр çуннă чух та эс манпахчĕ.
Сан халăх чысĕ пек яту
Тăхлан шăтарнă сумкăрахчĕ.

Мухтавлă Атăл хулинче,
Брянск патĕнчи сĕм вăрманта та
Салтаксене Нарспи çинчен
Вула-вула эп савăнтартăм.

Пĕрре маршра çур сехете
Ларсаттăмăр эпир канмашкăн.
Грузинĕ „Руставели!“ тет,
Ун сăввине вулать хаваслăн.

Баку çынни Низамипе,
Узбек Навоипе мухтанчĕ.
Украинецсем ерипе
Шевченкăна юрласа ячĕç.

Унтан мĕнпур чĕлхепеле
Янрарĕ „Пушкин!“ хĕпĕртевлĕн.
Вăрçа кĕрес этем пĕлет:
Вăл халь ответ тытать тĕнчешĕн.

Чăваш салтакĕ çав тĕлте
Чăваш сăввисене итлерĕ,
Патронташне тӳрлетрĕ те
Сасартăк—„Ивановшăн!“ терĕ.

1950

3

Тумламшăн тинĕс патăн халăха.
Пĕр пĕрчĕ илтĕн—тавăртăн капан.
Çул хыççăн çул... çаплах шавлатăн-ха,
Пур аслă çĕршыва тăнлаттаран.
Тăван йăху сана, яланлăха
Савса, ыттисене калать: ак ман
Тинкерлĕ куç, улталами хăлха.
Пуриншĕн те вăл пултăр паянтан.
Ылханăр унпа шай чуралăха,
Çын тивлетне юратăр унпа тан.

1940

## Нарспи çĕршывĕнче

Эп çитрĕм виçĕ сехете.
Пĕр лав та çукчĕ çывăхра.
Тул çутличчен эп кĕтрĕм те—
Уттартăм çуранах вара.

Хĕвелĕн куç хăрпăкĕсем
Сиккелене пуçланă та,
Часрах вăрантăрччĕ, тесе
Эп хирĕç ярăнса утап.

Сулахайра пĕр ластăк, пĕр
Çăм кĕнчели пек пĕлĕт çех
Яр çурăлчĕ: кĕрен кĕпер
Слак урлă хывăнчĕ кĕçех.

Пуса каччи пек ташласа
Асанчĕ çумăр. Кун чипер.
Кĕтӳ тухать. Çĕр тап-таса.
Сăнар та лайăхрах—кĕрер.

* *

Ял çывăхĕ çара, вăрмансăр,
Анчах пуян хăй чулĕпе.
Пăхсан—çав Уралтан тăван сăрт
Кавказăн алăк умĕ пек.

Çавна татах та шантарать вăл,—
Ав ӳкрĕ манăн ·куçăма:
Çӳлтен—тыркас сăнан караппăл,
Çĕртен—шанкав[1] суйлан çырма.

---

[1] Шанкав—катăк-катăк шурă чул.

Çак ту çинче, кăшт самайланнă,
Çӳренĕрех вăхăтсенче,
Ялан кĕнекепе вăл ларнă—
Салхуллă, кăмăлсăр, пĕччен.

Мĕскер шутланă-ши вăл, тарăн,
Тинкерлĕ куçĕсемпеле
Йĕри-тавра пăхса, мăнтарăн?
Мĕскершĕн çуннă? Кам пĕлет..

„Ача вăййи“ тесе ал сулнă
Пĕрре вăл хăй сăввисене.
Тата мĕскер каласшăн пулнă
Чарусăр шухăш тĕнчене?

Мĕне савса е кураймасăр
Çĕкленнĕ пулĕччĕ тепре
Минут та лăш курман, шав карсăр
Пултарупа тапан чĕре?

* * *

Шур çĕмĕрт шупăр хывнă тапхăр
Ака пĕтернĕ ялсенче.
Силпи çыранĕпе утатпăр,
Тахçан туртатчĕ çак тĕнче.

Ак çакăнта Нарспи чӳхеннĕ,
Сетнер шăварнă пуль утне,
Тесе пыран чĕлĕнкеленĕ,
Çĕрмен тункатасем кутне.

Ак ку—вĕлтрен пĕркенĕ путăк—
Тен, Михетер нӳхрепĕ пуль.
Çак улăхра ял çулнă утă,
Юрланă, тăкнă вăл куççуль.

Халичченех пур Кантăр Варĕ.
Шултралăха ертсе кĕрсен—
„Тăхта, йăмри ак çакчĕ мар-и?“
Тесе хурать этем хуллен.

* * *

Епле ун кунĕ-çулĕ чĕрĕ!
Нумай пулмасть-ха пĕр пӳртре
Нарспипеле вăл кунĕн-çĕрĕн
Ларатчĕ, теççĕ, Çимĕкре.

Нарспи—слакпуçсемех. Пĕр карчăк.
Поэт тулли куркапалан
„Ну, мăнакка, каласа парччĕ..."
Тесе тав тунă кăмăлтан.

Пуçланă лешĕ, ятсăр сăвăç,
Чĕлхи-çăварĕ çемçелсен.
Ăçтан пĕлейĕн: хăйĕн çав ĕç
Пекки пулса ун иртнĕ, тен.

Епле пулсассăн та—мухтавлă
„Çыруç", ăна сума суса,
Хăварнă ун ятне нумайлăх
Хăюлăх символĕ туса.

* * *

Чул çурт. Ытти пӳртсемпелен
Танлаштарсан—кермен пек пулнă.
„Эпир алкумĕнчен иртмен..."
Тет çын халь тĕпелте салхуллăн.

— ... Пуян Ваçинккапа—ăçта!—
Ĕçсе-çимешкĕн асăнман та.
Ун ывăлĕ вара чăн та
Аван ачаччĕ, астăватăп.

Туя çӳретчĕ, тыр вырма,
Пуринпеле те калаçатчĕ.
Ыр çыннăн ĕмĕр вăрăм мар:
Çап-çамрăклах хур пулчĕ. Каччă.

Ак çакăнта выртатчĕ вăл.
Ун умĕнчен каймарĕ амăш.
Эп тарçăччĕ. Пăхсассăн—йăлт
Ăшаланса ӳкетчĕ ман ăш.

Пирус тухмарĕ тутинчен,
Тытаймиччен ăна вăл туртрĕ!
Çав çулăмпа-тĕтĕмпелен
Чĕри пушшех çунса, тен, хухрĕ.

Ун юлашки сăмахĕсем
(Вара тек нимĕн те чĕнмерĕ):
— Вилетĕп пулĕ час, аннем,
Çӳл ту çине хăпартрĕç...—терĕ"

* * *

Ун çуртĕнче—колхоз правлени.
Музей пулас сăмах та пур.
Çав кирлĕ сăмаха çĕкленĕ
Ялйышсемех иккен ку çур.

Вилни час çирĕм çул ак тулĕ.
Вăл лартнă тополь—пĕр ытам.
Унтан вара чăваш кун-çулĕ
Мĕскерлине—курать такам.

Хăватлă революцин çирĕп,
Хаяр çĕпри пур тутăха,
Пур пăнтăха çутатрĕ, çирĕ,
Тасатрĕ вăл яланлăха.

Тăхтамансен шалчи йăлт тулчĕ.
Сетнер—ялта халь бригадир
Е агроном, е сăвăç пулчĕ—
Ĕçле, тĕпче, шыра та çыр.

* * *

Хĕм куçлă, çавракa çамкаллă,
„Хура чикан пек"—Сенттилле—
Мана хăюллăн тăсрĕ алă
Поэт тăванĕн ывăлĕ.

Ун ячĕ... çук, Константин марччĕ,
Анчах мĕнпур кěлеткипе
Вăл аслă куккăшне кăларчĕ
Ман куç умне чĕр тĕкĕр пек.

Вăл виççĕре—пĕр шиксĕр, тӳррĕн.
Тасан пăхан çав коммунар.
Мĕнпе хавхаланса, мĕн кӳрĕ
Çак тĕнчене вăл?—Паллă мар.

Паллах, вăл çапăçĕ, вăл тăрĕ
Малашлăх çыннисем енче.
Ун тăнĕ-пуçĕ пулĕ тăрă
Пур харпăрлăх сĕлтĕшĕнчен.

Тен, куккăшĕн трагедине те
Чухлаймĕ вăл тĕппипеле.
Вăл ӳсĕ, сисмĕ те—çĕнетĕ
Çĕре йăлтах хăйпе пĕрле.

„Чăваш чунне“ тупасшăн пулнă
Поэт сăпайлă Сенттире.
Ăçта вăл çак ачан? Те юлнă,
Те çук?—тесе эп тинкереп.

Йăваш туталлăн, хĕсĕк куçлăн
Анчах ăна курас тесен—
Ан пултăр пĕрех хут вăл унăн,
Çитет авал хĕснипелен!

* * *

Кăра-мĕн пушкăрт çилĕсем!
Пиншер юланлă утлă çар,
Хĕçне ун-кунăн силлесе,
Кăшкăрашса та ятлаçса,

Сӳре пуххисене йăтса
Сăнни вĕçне тире-тире,
Кăлкан тĕмĕсене·çăлса,
Пар тустарать çеçенхире.

Сыхлан, çӳревçĕ, çав самант!
Анчах кĕске вăл: айтаса
Иртсе каять те утаман,
Каллех çанталăк тап-таса;

Каллех тӳлек хӗвел ялтрать,
Иртейнӗ тӑвӑл та чечен...
Шӑп ҫавӑн пек ҫанталӑкра
Эп пултӑм ун тӑпри ҫинче.

Чӗлхе ӑсти! Вӑл хӑйӗн хыҫҫӑн
Ҫӑвар уҫас текенсене,
Ун шайӗпе калаҫмасассӑн,
Чӗлхесӗрлет халичченех.

Хальхи кунсен мухтавлӑ, анлӑ
Пултарӑвӗ кӑна пире,
Йӗри-тавра уҫса мӑн алӑк,
Йӑлт урӑх шай та сас пӳрет.

Эп туйӑнтӑм хама кӗперрӗн:
Ик саманан ик ҫырмине
Пӗр аслӑ шывшӑн пӗрлештерӗн,
Тесеттӗм эп ҫав ирхине.

Сиксе юхан ҫырман пӗр хумӗ
Пулсан та сӑвӑҫ ун чухне,—
Вӑл ҫапрӗ революци умӗн
Мильонлӑ халӑхӑн чунне.

Вӑл ҫапрӗ, ҫаврӑнса пӑхтарчӗ
Умма, хыҫа. Ним ҫук ҫӗртен
Вӑл аслӑ ӑмӑртӑвӑн старчӗ
Пулса тӑчӗ Октябрьтен.

Революционер пулман вӑл,
Анчах ун „кашкӑр билетне“
Эпир куратпӑр юн тумланӑн,
Тасан ҫӗклетпӗр ун ятне.

Вӑл революципе вӑраннӑ,
Пӗрер сӑмах тире-тире
Вӑл чӗрӗ чӗлхене упранӑ,
Ку—кирлӗ революцире.

1934

## Пирĕн Çеçпĕл Мишши

Çăлтăрсем—шуçтрисем, вĕттисем пĕр канашлăн
Ялкăшаççĕ уяр тӳпере...
Пĕлĕте яр çурса, метеор пĕр самантшăн
Хыпăнать те—сӳнет ĕмĕре.
Çăлтăрсем çуталаççĕ çаплах килĕшӳллĕн,
Анчах лешĕ—мĕн ĕмĕр тăршши
Курнă çын асĕнчен çухалмасть вара ӳлĕм.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Тинĕс хумĕ чĕвен тăракан шур çилхеллĕ
Урхамах пек сикет, кăтăрать.
Харсăр кимĕç тухать, çиле хирĕç вăл меллĕ
Киммипе сĕм шыва кастарать.
Ахăрать, мĕкĕрет, хăрататъ тĕпсĕр авăр:
„Сахал мар пулнă сирĕн йышши!“
Анчах кимĕç ишет, кĕсменне пăрахмасăр.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Амăрткайăк вĕçет ĕмĕрхи ту-сăрт урлă,
Тинкерсе вăл пăхать тавралла.
Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă—
Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.
Варкăшать, çӳлерен те çӳле ярăнать вăл,
Мал енче—çут хĕвелĕн ăшши.
Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Вăл чăваш чĕлхине, юмахри Данко евĕр
Çунакан чĕрипе çутатса,
Çул кăтартнă; вăл шаннă пĕр иккĕленмесĕр

Çĕн чăваш тĕнчене тухасса.
Вăл куран Интернационалăн кĕперĕ,
Пур йăхпа та пире тан туса,
Шухăшпа виçейми тӳпене халь çĕклерĕ
Пирĕн ирĕклĕ, харсăр ăса.

Эй, эсир, çамрăксем! Ăмăрт куçлă, çунатлă,
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем!
Эп сире чи çӳлте халь курасшăн çунатăп,
Ененсе, юратса пехиллем.
Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ.
Туптăр, хăйрăр ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем! Вăл—сиртен тухмалла.

1949—1951

## Поэт тăпри çинче

Чăваш мухтавĕ выртакан
Юман юпаллă тĕмеске
Мана туртатчĕ аякран,
Анчах пулмарĕ çул кĕске. .

Остĕр тавраш тирекĕсем
Тĕреннĕ янкăр пĕлĕте,
Тăшмансене хӳтернĕçем
Çитертĕм хамăн ĕмĕте.

Пăртак лăпланнă самантра
Эп кĕтĕм пушă пахчана.
Çерем ешереймен тăпра
Сулхулăн курăнчĕ мана...

Тăванăм! Атăл хĕрринчен,
Сана ялан савса тăран
Управлă халăх чĕринчен
Салам çитертĕм эп паян.

Каçар мана: вучах чĕртсе
Асăнаймастăп пылпала.
Пистолетран виç хут персе
Сывпуллашатăп санпала.

Мерттес Шевченко Амăшне!
Вăл кăкăр пачĕ Çеçпĕле.
Тупа: ун ирĕк канăçне
Эп сыхлăп, сыхлăп хĕçпеле!

1943

## С. В. Эльгере

50 çул тултарнине хисеплесе

Нумай-и пурнăçăм, сахал-и,
Пăхассăм çук калла-малла.
Сана тытма эп тивĕç алă,
Салтак пиччемçĕм, салтакла.
Пĕрре килет этемшĕн аллă,
Пуртех çитеймĕпĕр алла.

Вут-çиллĕ, кĕллĕ-хĕмлĕ тапхăр!
Ăша çунтармăш самана!
Кам юнлă чӳклеве юраттăр?
Сана вăл тунсăх е мана?
Анчах вутран ӳсет çĕн паттăр
Чармашкăн юхакан юна.

Сĕм пĕлĕт витĕр тавракурăм
Уяррăн çĕкленет умра.
Ăна эп халь мухтаймăп юррăн,
Ман юррăм—м а л а л л а! У р р а!
Ăна çĕклет ман пилĕк-çурăм,
Çывăхартать ман ал-ура.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кĕнекине.
Шанатăп ăшшăн та хаваслăн
Кусран пăхса пуплессине.

Эп çирĕм çул сана пĕлетĕп,
Ачаранпах сан умăнта.

Хальччен пулса хаяр çиле те
Вĕртмерĕмĕр хушшăмăрта,
Салтакăн флягине çĕклетĕп
Пĕччен халь саншăн эп кунта.

Тавсси, поэт! Пуçламăш пусăм
Ман çеç те мар сан чĕрçинче.
Паян сан уявна эп, тусăм,
Чыслатăп вăрçă хирĕнче.
Анчах, ăçта пулсан та пуçăм,
Ман чунăм Атăл хĕрринче.

Десна та Сож, Нева та Днепр...
Мĕнле шыв урлă эп каçман!
Кашни хума вăрçса илетпĕр,
Илемлĕ пур тăван çыран.
Çапах та Атăл шайлă тепĕр
Шыв-шур курман эп ку таран.

Тахçан, сĕм авалах, ят панă
Чăваш хăй чĕлхипе ăна.
Унта çуралнă-çке, тăванăм,
Вилес килет унта кăна.
Унта эп юратма пуçланă
Асран кайми Российăна.

Салтакчĕ эп. Историк куçĕ
Ялхахланатчĕ тĕтĕмпе.
Куçа çеç мар, чуна та йӳçĕ
Пулатчĕ, тен, вăхăчĕпе.
Анчах пĕр шухăш—хамрăн ку çĕр!—
Тени çиçетчĕ çиçĕм пек.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кĕнекине.
Итле, тăван йăх, паттăр саслă
Ывăлусен кĕввисене!

1944, Польша.

## О. И. Ырсеме

Такам калана: пĕчĕкçĕ роль çук.
Кашни этем хăйне кура — пĕ р т е н-п ĕ р.
Нихçанхинчен те тĕрĕс вăл ку чух:
Çын тивĕçне çӳлтен çӳле çĕклетпĕр.

Анчах кун-çул иртет, ăна чарма
Тупсах çитереймен-ха сиплĕ турăх.
Çуллен тулса юхать çурхи çырма,
Этемĕн çурĕ пĕрре çех — çук урăх!

Мĕн тăвăн? Пурнăç пит васканăран
Ирĕксĕрех ун йăлине тытатăн:
Нарспи рольне вылянă эс малтан,
Халь ак Сетнерĕн амăшне вылятăн.

Тем те кышлать хавшак чĕремĕре,
Ăна гримпа сĕрсе лартма май çук-тăр.
Анчах та чун... чун çамрăк ĕмĕрех,—
Юратнă ĕç кирлине çеç вăл туйтăр.

Хăш чух, тен, тĕкĕр витĕр тинкерсен,
Сасартăк ассăн сывласа яратăн:
Мĕнле хитре, ытарайми хĕрсем
Пĕрремĕш сцена варринче куратăн!

Пуртех пымарĕç санăн çулупа:
Чунтан-вартан çунса тăрăшмасассăн,
Искусство тавăрать. Çапла шăпа.
Унпа ытахальтен хăтланаймастăн.

Тен, урăх çул-йĕр тупрĕç пуль çынсем,
Нумайăшне эпир ятран пĕлетпĕр.
Çапах театр тантăшĕ Ы р с е м—
Ун чух хыпса çуннисенчен п ĕ р т е н-п ĕ р.

Ачасене — паха ача вăййи,
Качча — савни паха, ватта — ăс-халĕ.
Малтан эс тăхăннă Нарспи тухйи
Искусствăн çамрăклăхĕ пек çуталĕ.

1952

## Художнике

*М. С. Спиридонова*

Художник! Эс мольберт умне тăрсассăн,
Сасартăках шăпăртланать ман сассăм.
Куҫа кăна таҫта аяккаллах
Сан картину туртать, туртать ҫаплах...
Мăян йăранлă, ансăр, саплăк-саплăк
Ана ҫинче тар-шурлă та асаплă
Ҫынсем тертленнĕ, тарăхнă ялан.
Эс урăхла сăнсем куран паян:
Вĕҫĕ-хĕррисĕр, тикĕс ылттăн тулă,
Хаваслă питсенче вылять йăл кулă;
Машина ҫăмăллатрĕ ĕҫ-хĕле,
Этем халь ун хуҫи пулма пĕлет.
Ларатчĕҫ ҫĕмелсем сайра маякăн;
Кăшт сывлăш ҫавăрма ӳпне, хăяккăн
Е месерле ӳкетчĕ тĕм ҫине
Вырса вăй кайнă ҫын авал чухне.
Уйра-хирте халь туйăнать уявăн,
Пин алă пĕр вăй пулнине туятăн.
Парка пучах чĕнет те илĕртет,—
Тытса йăваласа пăхас килет...

Палитра, фокус, перспектива теҫҫĕ,
Чылайĕш ку сăмахсене пĕлмеҫҫĕ.
Эп те ҫавах. Анчах, хама кура,
Пăртак чухлатăп хурапа шурра.
Ав ăслă куҫлă ватă шăпăрҫă,
Ав куҫсăр ҫын—туяллă сăвăҫă.
Эп вĕсене те мĕскĕнĕн курмастăп,
Ҫук, ирĕк ҫыннăн тивĕҫне туятăп,
Авал пулсан вĕсем вĕҫрен вĕҫе
Ҫĕршыв тăрăх ҫӳретчĕҫ йĕрсе ҫеҫ.

Кив ăстасем ун йышшинче кураççĕ
Таптаннă чун, ыйткалакан хутаçĕ.
Патша калпакĕ е кĕтӳç пушши—
Художникшĕн пĕр, тетчĕç. Тĕрĕс-ши?
Ăсташăн пĕтĕм çут тĕнче—натура,
Тесе калатчĕ авалхи культура.
Çапах та тĕнчене çап-çутă ир
Кӳресшĕн çуннă-çке ялан эпир,
Çав ырă ирĕн чĕрĕлĕх хĕвелĕ
Çур тĕнчере йăлтăртатать илемлĕ,
Çапах та пирĕн куç çав хĕвеле
Часрах курасшăн пур тĕнчипеле.
Çапах художник—самана çынни вăл,
Малашлăх пулмалла ун перспектива.
Çавна туятăп, сан ĕçне курсан,
Çавна эп саламлатăп пур чунтан!

1952

## Скульптора

*И. Ф. Кудрявцева*

Эп сан патна кӗрсе курмассерен
Халăхăма ӗненерех паратăп.
Çав самантрах—калатăп чӗререн—
Хам çырнă сăввăмсемшӗн вăтанатăп.

Ав сан ларать рабочи, ав салтак,
Ав пионер, ӗçчен пике, çарпуçӗ...
Пăхатăп та эп ăнланап йăлтах:
Питсем çинче çын чунӗсем яр уçă.

Куратăп халăх савнă поэта,
Çул иртнӗçем вăл çамрăкланчӗ мар-и?
Ăна халь тăвăр, тăвăр çакăнта,
Час Атăл хӗррине вăл тухса ларӗ...

Сулмакӗ, кӳлепи пур çак ӗçсен,
Тăмне те ху çăратăн, йăвалатăн.
Çапла—куçа курнан, алла лекен
Сулмаклă сăмахсем тупасчӗ манăн!

1952

## Композитор патенче

*Г. Я. Хирбю кăмăлне*

Çак пĕчĕк пӳлĕме аслăлатать мăн шухăш.
Паха ĕмĕтпелен тухап сан патăнтан.
Эс тупнă кĕвĕсем хастарлă та салху кăшт,
Тӳссе тăвăлнисен кăмăлĕпе пĕр тан.

Сăрнай сассипеле хум-шавлă Атăл хутăш
Йĕрсе те тарăхса пăлханнă авалтан.
Юрра саван çĕре çăвар уçма паман!
Çавна халь ылханса çунать ман тепĕр хут ăш.

Янран илем ăсти! Мĕскер сунам сана?
Хаяр кĕрешĕве çĕкленчĕ самана,—
Юратнă халăхна ăмăрт çунат хушсамччĕ.

Шанатăп хамăрти сӳнми чун хавалне.
Пĕлетĕп: çут тĕнчен йĕркесĕр вăй-халне
Гармони тумалла чăн ирĕк ĕç хăвачĕ.

1939

## Асилӳ

*И. Ивнике*

Астăватăп: вилнĕччĕ поэт...
Шупашкар урамĕсем тăрăх
Унăн ăшă, ҫепĕҫ сăвви пек
Ҫурхи ҫил ҫӳретчĕ иртĕнмесĕр.
Тирпейленĕ тупăк умĕнче
Хулăн сасăллă Иван Мучи
Пантеон кирли ҫинчен пуплетчĕ.
Тепĕр ҫын поэтăн сухалне—
Чирлĕ чух ӳстернине—астурĕ:
Руставели евĕрлĕччĕ, терĕ.
Виҫҫĕмĕш—ман тусăм, ҫывăх тусăм—
Ар пуҫпа ĕсĕклесе йĕретчĕ...
Мана йывăрччĕ сăмах хушма,
Тăвăлса тăртаннă хурлăха
Ҫемҫетме куҫҫулĕм те тухмарĕ.
Тăшмана, вăрҫа, хура вăя
Ылханса хăварнă ырă шăллăм
Хăй ĕҫне пуҫлайнăн курăнчĕ.
Кӳренсе вара эп аса илтĕм
Ҫавнашкал ҫурма ҫулта хур пулнă
Темĕн чухлĕ халăх ывăлне.
Ун чухне ят тухнă ҫынччĕ эпĕ,
Пристаньре кĕтетчĕҫ салтаксем,
Ҫавăнпа ҫĕре кĕресскере
Ҫамкинчен чуптурăм чи малтан:
Сип-сивехчĕ, вилнĕччĕ поэт!
Эп—вилĕме хирĕҫ тухса кайрăм...

1945, май.

## Кимĕпе

*Александр Алгана.*

Аван-çке Атăл тăрăх кимĕпе
Ларса тупман сăвва хăваламашкăн!
Епле тӳлек... Кĕтӳ çерçи канашлăн
Каç кӳлĕм кантăр шĕкĕлченĕ пек.

Сасартăк йăлăмран тухса йĕпе
Ама çилсем пĕлĕт хуса каçсассăн,
Ну пусланать вара!—çири кĕпе
Тарпа тăварланать—хума касатăн.

Āмăртăва тăратăн куçма-куç.
Рифма манса, калатăн: тавтапуç!
Ак пурнăçăн ĕмĕртенхи саккунĕ:

Лăпкать те ачашлать; лăкать, туллать;
Кĕсмен тивсе пӳрнесене юн хӳнĕ,
Анчах ишев тĕреклетет хула.

1939

## Бакен

*М. Я. Сироткина*

Эс курнă-и?—Çĕрле Атăлпала
Пăрахутпа е кимĕпе каюçăн
Пĕр хупланать, пĕр ялтăрать каллах
Йăваш та лăпкă çутă чĕрĕ куçăн;

Пĕр хум çинче вăл авăсăнкалать,
Пĕр чăмнă евĕр... Руль тытса пыруçă
Ăна аякранах курса паллать,
Вăл сÿнмесессĕн—малалла çул уçă.

Çак пурнăçра çын çутăрах çунасшăн,
Вăл тинĕсри маяк пек курăнасшăн,
Кам тиркĕ пархатарлă ĕмĕте?

Анчахман асăмра кирек хăçан та
Çав пĕчĕк пăнчă: тĕксĕм çутатсан та—
Вăл çул уçать, вăл вырăнлă çĕрте.

1949

# ВУТРА ШĂРАННĂ
# КĂМĂЛ

## Саламсем

1

Пĕчĕкçеççĕскерĕм!
Ма эс пысăк мар-ши?
Çыраттăн чиперрĕн
Кунсерен пĕр аршăн.

Салтака манмашкăн
Епле эс пултарăн?
Вăл сана ачашшăн
Асăнать, мăнтарăн.

Ун лутра çĕр пӳрчĕ
Санпа çеç илемлĕ.
Кӳр чуппине, кӳрччĕ!..
Вилĕм тек килеймĕ.

2

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçсем
Ларчĕç бруствер хĕррине.
Алă вĕççĕн çĕклесе
Чĕкеçрен чĕлхе илме
Эп сана вĕрентеймерĕм,
Каçарах, пĕчĕкçĕскерĕм!

Вĕлле хурчĕ тутанать
Çеçпĕле те ӳхлĕме.
Сим кӳмешкĕн тутуна,
Çу пек çепĕç пуплеме—
Пылпа çу эп сĕреймерĕм,
Каçарах, пĕчĕкçĕскерĕм!

3

Кунĕн-çĕрĕн çумăр, çумăр,
Тăхлан çумăр пуç çинче...
Эс, юрать-ха, çумма-çумăн.
Эс, юрать-ха, пит инçе.

Хăш чухне эп, ывăнсассăн,
Сан сăнна пăхатăп та—
Çĕкленет каллех ман сассăм,
Ватăлма каллех тăхтап.

Хăш чухне, стройра пырса та,
Юнпа хытнă çӳçсене
Эп куратăп та—сасартăк
Тăп тăратăп, çӳçенеп...

Кунĕн-çĕрĕн çумăр, çумăр,
Тăхлан çумăр пуç çинче...
Эс, юрать-ха, çумма-çумăн,
Эс, юрать-ха, пит инçе.

4

Урамра çилсем кумаççĕ,
Шăтăк-шăхăр шăхăрать.
Иксĕрех эсир кун-каçăн,
Япăхатăр, ахăрах.

Кив тетте те пушă аркă,
Кам кӳрес-ха çĕннине?
„Чăвашла юрласа пар-ха“
Тетĕн эс асаннӳне.

Асаннӳ юрлать... Пĕлесчĕ:
Мĕн юрлать-ши ватăскер?
Ман пуласчĕ пĕчĕкçеççĕ,
Çип-çинçе те кĕп-кĕске.

Ман халлап-юмах итлесчĕ,
Сывламасăр, санашкал,
Савăнса вĕçне çитесчĕ,
Сĕтĕресчĕ çунашка.

Халь ак эпӗ, итлесен те,
Манас ҫук салтак хӗҫне.
Вӑрҫӑ юмах мар иккен те,—
Ман пӗлесчӗ ун вӗҫне.

Анчах эп пӗлеп, пӗлетӗп:
Халлапла кирек мӗнле,
Эс пур чух вӑрҫӑ вӗҫне те
Чӗррӗнех эп ҫитмелле.

5

Салампи! Паян кӗрешрӗ
Икӗ кайӑк кӑнтӑрла:
Пӗри хуп-хура хӗреслӗ,
Тепри хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ.

Хӑваларӗҫ, кар-карларӗҫ,
Сӑхрӗҫ хытӑ пӗр-пӗрне;
Чикӗм пуҫлӑ кускаларӗҫ,
Кӗҫ ӳкмерӗҫ ҫӗр ҫине.

Окопран пӑхса выртатпӑр
Хӑш палли ҫӗнтерессе.
Кӑшт тӑрсассӑн хӗрлӗ ҫӑлтӑр
Вут хыптарчӗ хӗресе.

Персе анчӗ леш, хӗресӗ,
Тӗтӗм-ҫулӑм кӑларса,
„Пултаратӑн, ҫӑлтӑр, эсӗ!"
Терӗҫ пирӗн харӑсах.

Салампи! Пӗлетӗн ӗнтӗ:
Ҫӑлтӑр-кайӑк чи вӑйли.
Кучченеҫ те вӑл, тетте те
Илсе пырӗ сан валли.

6

Эс ҫуралнӑ хулана
Тӑшман илнӗ ҫавӑрса.
Ҫывӑрсам, ан кулянах:
Парӑнмасть вӑл. Ҫывӑрсам.

Эс алхаснă пӳлĕмре
Сивĕ, тĕттĕм, пуш-пушах.
„Çывăр, килĕн ӳлĕмрен“
Тет резин упа, кушак.

Эс çӳренĕ пахчана
Халь ӳкеççĕ етресем.
Пĕр турат та тăшмана
Пусне таймĕ. Тĕлĕрсем.

Эс чӳхеннĕ шыв-шура
Пăтратаççĕ ют çынсем
Вăл тасалĕ—ан хăра:
Пулмĕ юшкăн та вĕсен!

Уйăх чăмрĕ Атăла.
Аякра сăпку халь сан.
Эп тасатрăм пăшала.
Çывăр, çывăр, лăплансам...

7

Ах, яту хитре-çке санăн!
Тупса хунă мĕн такам...
Тӳррипе калас пулсассăн,
Кĕвĕçеп пăртак, ачам.

Сан ятна эп асăнсассăн,
Тин пусап вунсаккăра.
Халăх çамрăклăхĕ манăн
Куç умне тухса тăрать.

А пĕлетни эс, чиперĕм,
Тутаркас таврашĕнчи
Салампи ятлă пĕр хĕрĕн
Кун-çулне? Тăхта-ха, чим...

Юрăсти пулнă аппу çав,
Пуçлăх пулнă уявра.
Ку сахал: вăл пăлхав пуçĕ
Пулнă, теççĕ, каярах.

Те çĕр çул, те икçĕр çул-ха
(Пĕлме çук тĕрĕссипе)—

Чăвашсем пăлханнă шухă
Äслă Атăл хĕррипе.

Атăл урнă: „Кам кама-ха!“
Хӳнĕ вăл шыв хӳмесем.
Çăвархланă урхамаххăн
Шăлне йĕрнĕ хумĕсем.

Хуçасен кимми-тавраш
Ваннă, путнă куç курах.
Путнăçем хуçи павраш нă:
„Тур çырлах! Шуçи хурах!“

Ват юманлăх кăмăлланă
Яш çилле вĕчĕхтерсе.
Юмансем пуçне суллана
„Парăнмастăпăр!“ тесе.

Эс пĕлетни—çуллахи çĕр
Чи яштак юман çине,
Чи çӳле çав Салампи хĕр
Шур пĕркенчĕк карнине?

Халăха çапла пуçтарнă—
Пуртăпа та сенĕкпе
Улпутсен, мăрса-турханăн
Мăшкăлне пĕтерес пек.

Анчах çичĕ хут капланнă
Мăшкăл пирĕн мăй çине.
Салампи ĕçĕ хупланнă,
Çитеймен вăл хăй вĕçне.

Тăшман çарĕ ухăланă,
Çурнă шур пĕркенчĕке.
Темĕн чухлĕн тыткăнланнă
Пăлхав пуçĕ те лекет.

Пуçилле ăна ăсатнă
Инçетри сĕм вăрмана.
Ун ятне манман асаплă,
Тертлĕ халăх, самана.

1942

## Аннене

Каҫсерен сывлатӑн ассӑн,
Асӑнман ҫӗр ҫук.
Таврӑнмассӑн, таврӑнмассӑн
Туйӑнать хӑш чух...

Сан таса сӗтне эп манмӑп
Нихӑҫан, анне,
Мӗншӗн йӑпшӑнмӑттӑм мамӑк
Ҫунату айне?

Анчах халь пурне те мар-и —
Ывӑла, хӗре —
Куҫран пӑхрӗ, ыталарӗ
Пӗр анне пире.

Вӑл — асаплӑ та суранлӑ,
Ҫапах ӗмӗр сыв
Эпир иксӗмӗр ҫуралнӑ
Сарлака ҫӗршыв.

Ҫав аннешӗн кӗрешмешкӗн,
Пӑшала, туппа
Чуптуса, эпир пиншерӗн
Турӑмӑр тупа.

Ҫав аннешӗн ӑнсӑртран эп
Пуҫӑма хурсан,
Чӑн, вара тек таврӑнаймӑп,
Айӑп ан тусам.

Ачаран эс вӗрентеттӗн,
Лайӑх астӑвап:

Амăшне хисеплесессĕн—
Ĕмĕрлĕх сăвап.

Хĕрлĕ пурçăн ялав айĕн
Чĕркуçланнă чух
Туйрăм эп: çĕршывсăр халь-мĕн
Пур анне те çук.

Чап, хисеп кирек хăçан та
Çав çĕршыв ятне!
Çав ятра ман ят та, сан та,
Асăмри анне!

1942. Сталинград фрончĕ.

## Тĕлĕк

*Лермонтова астуса*

Çеçенхирте, хура çĕр ӳплере,
Эп, аманса минренĕскер, çĕр каçнă,
Çĕрĕпелех ӳленĕ-мĕн етре,
Эп çĕрĕпех тĕлĕкĕмре аташнă.

Эп курнă аслă шыв. Тӳлек хула.
Шур çурт тавра ем-ешĕл çурăн каçĕ
Ман тантăш-тусăмсем, кула-кула,
Кĕрекере ĕçсе-çисе ларассĕ.

Хитре хĕрсем, ачаллă арăмсем
Мана хаяр сунмасăр асăнассĕ;
Курки кĕрекене çаврăннăçем
Ман ятăмпа сăра ăсса йăтассĕ.

Шӳтлеççĕ шӳт. Тута вĕççĕн. Çемçен
Сăмах вылять чуна кӳрентермесĕр
Юрлаççĕ юрă. Нихăçан илтмен
Илемлĕ кĕвĕ тăсăлать тӳлек çĕр

Анчах пĕри... пĕри çав ушкăна
Таçтан ютран килсе çакланнă евĕр
Ун шухăшне чухлатăп эп кăна,
Мана та вăл чухлать тăванĕпе пĕр

Салху ларать хĕр. Шухăша кайса,
Çын сăмахне те тĕлсĕр тавăрать вăл.
Тав куркине те, хурлăхлăн кулса,
Йăлашăн çеç кăшт астивсе парать вăл

Ун шухăшĕ çўрет инçе-инçе...
Тулли курка çине пăхать те акă—
Курать вăл: çеçенхирĕн варринче
Суранланса выртать чăваш салтакĕ.

Салтакăн куçĕсем çак хĕвеле,
Çак пĕлĕте тек нихăçан та курмĕç.
Тăри ун çийĕн юрă кĕвĕлет:
Пĕр вилĕмпе пин çыншăн килчĕ пурнăç...

Çапла хĕр сĕмленет. Çапах та „ма,
Ма эп унпа юнашар мар-ши?“ тет хĕр.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Çĕршывăмăр! Сана пурăнтарма
Юратăва та парнене кўретпĕр.

1942

* * *

Çиле хирĕç çӳрен ут юртать,
Çамрăк йĕкĕт вăскатать ута.

Йĕпе юр çăвать, çăвать, çăвать...
Куçкĕрет ута хушка тăвать.

Йĕкĕт анчĕ пĕр блиндаж умне,
Хыр çумне кăкарчĕ вăл утне.

Палламарĕ, хушкине кура,
Аллипе шăлса тăкать юра.

Çӳрен ут, куçран пăхса ăна,
Кĕçенсе илет кĕскен кăна.

Кĕрсе кайрĕ йĕкĕт блиндажа,
Пуç ухса юлать вĕри лаша.

Йĕкĕт хыврĕ юрлă çĕлĕкне,
Шыв ĕçесшĕн пăхрĕ витрене:

Ик тăнлавĕ унăн шап-шурах,
Кам шăлас çав ирĕлми юра?

1943

* * *

Салтак фляги пуш-пушах,
Ĕçес килсе ăш çунать.
Пĕлсен пĕлет шухăша
Çӳрен çăрха—çил çунат.

Эп кун кунлап, çĕр çĕрлеп
Йĕнер çинче унпала.
Тĕнче вăрçи кĕр кĕрлет,
Куç йăмăхать юнпала.

Çил ман çăрхан çилхине
Пĕр пĕтĕрет, пĕр сӳтет.
Ман чун вĕçет инçене,
Унта пике хĕр кĕтет.

Çап-çаврака куркине
Вăл куç пекех тултарать;
Вĕре-вĕре кăпăкне,
Вăл асăнать, тутанать.

Сасартăках куçĕнче
Синкер мĕлки сăнланать:
Савни маттур ут çинчен
Йăваннăнах туйăнать.

Хĕр, вăраммăн сывласа,
Лартать тулли куркине.
„Тавсси!" тес мĕн, сăйласа,
Пĕлмест ман ăш çуннине.

Пĕлмест мĕнпе юрасса
Пин çухрăмри савнине;
Пĕлмест—кĕтсе, юратса,
Мана хăех çăлнине.

1943

## Харсар ăмăрткайăк

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлне,
Совет Союзĕн Геройне—Ф Н Орлова

Ял-ял урлă, хула урлă,
Ту, вăрман, уй урлă
Вĕçет пирĕн ăмăрткайăк
Ывăнми, хăюллă.

Вĕçет шур пĕлĕтпе тан вăл
Е унтан та çӳлĕ.
Вĕçет вутлă çумăр витĕр,
Çăмăл мар ун çулĕ.

Çиле хирĕç, çиле майлăн
Варкăшать çуначĕ.
Тăшмана курать таçтан вăл
Куçĕсем çунаççĕ.

Ун çинчен юрлаççĕ юрă,
Халлапласçĕ шухă.
Ăна сăнă тивмест, теççĕ,
Тивмест, теççĕ, ухă.

Аçа çиçĕмĕн кумать вăл,—
Тавăру!—тет юнĕ.
Парăну мĕнне пĕлмест вăл,—
Çĕнтерӳ ун кунĕ.

Йывăрри те уншăн çăмăл
Аякри те çывăх.
Тав тăвать ăна çĕршывăм,
Сунать ырлăх-сывлăх.

Тав тăвать ăна пур халăх:
Тайма пуçăм, тайăн...
Сывă пултăр, сывă пултăр
Харсăр ăмăрткайăк!

1944

# Орден

I

Эрнешер сухал хырмасӑр,
Ҫывӑрмасӑр талӑкшар,
Тӑшмана хӗссе пыратпӑр
Таччӑн, ҫуммӑн, юнашар.

Шурӑ ҫуртлӑ Украинӑн
Ешеркке черешнисем,
Мӗн кӑтартнӑ сире мина,
Бомба, тупӑ етрисем!

Хуҫнӑ, чӗлнӗ, турпасланӑ,
Симӗс ҫулҫӑ типшӗрет.
Сар мерчен пек сапаланнӑ
Ҫырла-ҫимӗҫ тип ҫӗре.

Чиесем лараҫҫӗ капӑр,
Илӗртеҫҫӗ:—кил, ҫисем.—
Мина ҫурӑлчӗ те—шапӑр
Тӑкӑнаҫҫӗ пиҫнисем.

Вӗллене лекет вӑр-варрӑн
Пӗр осколок, куртӑмӑр,
Сӗрлесе тухать хаяррӑн
Хыпаланчӑк хурт-хӑмӑр.

Ҫыннисем ҫинчен мӗн калӑн?
Ҫав вӗлле хурчӗсем пек,
Хаярланнӑ чунхаваллӑн
Виҫ ҫул тӳснӗ пӗр инкек.

Мĕн çын мулĕ çичĕ ютшăн!
Сăхнă-сăхнă та яла—
Халь, эпир хĕссе пыруçăн,
Вут тĕртсе тарать калла.

Ав Европăна „çĕнтернĕ“
Сăрă-симĕс автомат.
Хул айне кĕлте хĕстернĕ,
Сывламасăр ыткăнать.

Вĕлтлетет кача пăталлă
Ата тĕпĕ вăрăлла.
Вăл васкать—тата пĕр аллă
Çурт тĕртесшĕн пулмалла.

Чарăнса вутпа хăмсарчĕ
Хĕрринчи лутра пÿрте.
Çав самант ман ординарец
Хураха ăса кĕртет.

Сулкаланчĕ, ÿкрĕ ак вăл
Шурă пÿрт кĕтессине.
Аллинче сÿнет ун факел
(Ыраш улăм тессине...)

2

Уйăхшар ура салтмасăр,
Мунчине-мĕнне манса,
Хăвалатпăр, хăвалатпăр
Тăшмана хавхаланса.

Мĕн вăл вырăн? Кăшт хăяккăн
Пистолет ТТ çинче
Тĕлĕрен те—кăларатăн
Планшетна пуç айĕнчен.

Сăрт, çырма, кĕпер...—йĕрлетчĕ
Куç вăраннă-вăранман.
Мĕн тери хаяр трагеди
Пытарать пĕр-пĕр вăрман!

Ак хайхи, вăрçсан-вăрçсассăн,
Буг текен шыв хĕррине

Пырса тухрăмăр хавассăн
Ик патшалăх чиккине.

Шыв леш енĕ—Польша çĕрĕ,
Шыв ку енĕ—хамăрăн.
Тĕтĕмпе тусан сĕмлерĕ
Пĕлĕте хăп-хăмăррăн.

Кашни пусăм, кашни аршăн
Кӳпрĕ чĕрĕ юн ĕçсе.
Чикĕ урлă ярас маршăн
Пуç хураççĕ фашистсем.

Юнпала пусаççĕ алă
Гитлера тупа туса:
„Польша—нимĕç çĕрне алăк,
Каçармастпăр вырăса!"

Кунĕпе вĕçет июлĕн
Сар тусанĕ çаврăнать.
Хăпарать тĕтре каç кӳлĕм,
Нӳр çапать пур таврана.

Кунĕпе те, çĕрĕпе те
Артиллери ахăрать.
Ансăр каçă мар ку, тетĕн,—
Тĕпĕ-йĕрĕсĕр ахрат.

Анчах пирĕн пур пĕртен-пĕр
Тăшмансем пĕлмен меслет:
Хĕн килсессĕн—А т ă л—тетпĕр,
Çавăнтах вăй-хал кĕрет.

Шур çилхеллĕ Атăл хумĕ
Кăтăрать куç умĕнче.
Вăрçă хыççăн, вăрçă умĕн
Такмаклатпăр ун çинчен:

— Астăвар тепре, атьсемĕр,
Аслă, вилĕмсĕр чапа.
Сталинград ятне çĕртмесĕр,
Рокоссовскилле çапар!..

3

Кам мана ёнентересшён—
Юрă вăл тӳлек, тесе?
Муза, тупă ӳхĕрсессĕн,
Чĕлхине тӳлет, тесе?

Вăл пыратчĕ çулăм витĕр
Маскировкăпа шуса,
Окопа кĕретчĕ шиксĕр
Керз аттипелен пусса.

Çамкине пĕрсе пăхатчĕ
Куçăмран вăл сăнаса.
Умне çакнă автомачĕ
Тинкеретчĕ Анăça.

Хĕвелпе çунса шуралнă
Хăй пилоткине хывсан,
Курса юлнăччĕ суранлă
Тăнлавне эп ăнсăртран.

Арçынла кастарнă çӳçĕ
Кĕççеленнĕ кăшт кăна.
Вăл калатчĕ: „Çĕнтерӳçĕ
Тивĕç санăн юрруна.

Ыран мар, халех пул хатĕр,
Туп эс кирлĕ кĕвĕсем:
Чăн сăмах тăва хускатĕ,
Пăслантарĕ тинĕсе.

Туп, кăлар эс витерӳллĕ
Чĕрене тивен сăмах.
Çав сăмах, тен, кĕрсе юлĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнма.

Ку сахал: хĕçпе пул тивĕç
Сăмахна эс хăвăнне.
Юррупа та сана виçĕç,
Ĕçӳпе те малашне.

Пултăр тамăк, пултăр вилĕм—
Çĕн те каç эс леш енне!..“

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ак мĕскершĕн эпĕ илтĕм
„Хĕрлĕ çăлтăр“ орденне.

1945

## Манăн çăлтăр тÿпере!

Çăлтăрсем чăмаççĕ сассăр
Яр çурса кĕрхи çĕре.
Асăрхатпăр та калатпăр:
Манăн çăлтăр тÿпере!

Ачаран çакна тăнланӑ,
Шухăша вăл ÿкерет:
Кам малтан тупса каланӑ—
Манăн çăлтăр тÿпере?

Çĕрлехи çул çÿрекен-и
Е тасти салтак пĕрре
Аманса ÿксен ĕненнĕ:
Манăн çăлтăр тÿпере!

Шур сухаллă çын-и, яш-и,
Хĕр-пике-и—пурпĕрех—
Сăвăç пулнă çав чăвашĕ:
Манăн çăлтăр тÿпере...

Пурнăçа ытараймасăр
Емĕтпе тапан чĕре
Каласа хăварнă, ахăр:
Манăн çăлтăр тÿпере.

Çавăн пек халăхăма эп,
Тем пулсан та тĕнчере,
Ĕненмесĕр пултараймăп:
Манăн çăлтăр тÿпере!

1945—1950

## Шинель

Кăвайт хĕлхемĕ вĕтеленĕ,
Тăхлан шăтарнă ветеран,
Тăп-тăп шинель, салтак шинелĕ,
Эс шăппăн çакăнса тăран.

Шинель! Айри тӳшек те пултăн,
Çири вителĕк те эс ман.
Лӳшкентĕн çумăрпа та, çунтăн
Хĕвелпеле те—аптраман.

Чылай туссем выртса та юлчĕç
Санпа яланлăх чăрканса.
Çав паттăрсем чару пек пулчĕç—
Нихçан тек юн тăктармасса.

Шинель! Чапна пĕлсе пăхатăп
Ĕç хушшинчен эп сан сăнна.
Эс хӳтĕ, шанчăклă, паха та,
Ансат манаймăп эп сана.

Санпа аса килет кĕрхи çĕр,
Кăвар пек пĕлĕт, çуннă хир.
Юн шывĕ урлă, çулăм витĕр
Каçсаттăмăр, шинель, эпир.

Ялта мăръесем çеç ларатчĕç
Хура юпа пек юнаса.
Ларатчĕ кăмрăкланнă сачĕ
Уксах-чăлах пек йăлăнса.

Шинель! Эс ĕнтĕн, эс хуралтăн,
Тасалтăн та эс юрпала.

Часрах тӳлек ӗҫпе пурнасшӑн
Санпа эп тӑтӑм хурала.

Ват салтакпа, вӑл темӗн те пӗр
Курнисене чунтан-вартан
Хисеплесе калаҫнӑ евӗр,
Эп калаҫатӑп санпалан.

Эс хӳтӗ, шанчӑклӑ, паха та:
Часран-часах халь сан ҫине
Эп шухӑша кайса пӑхатӑп,
Мухтавлӑ, тӳсӗмлӗ шинель!

1952

# Сăпка юррри

*Атнере*

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Ăшă çумăр чаш та чаш,
Ӳс, калчам, çĕклен эс яш,
Çӳлерен çӳле кармаш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш,
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте—пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Малалла утсан—малаш,
Каялла юлсан—каяш,
Чăн çултан эс ан аташ.
Çывăр, Аптраман тавраш!

# ХАМĂР ЯЛТАН

## Кĕрхи кĕреке

1

Юман та хыврĕ юлашки тумне.
Шанать каю. Хĕвел шупка çамкаллă.
Сӳнессĕнех çунан кăвайт умне
Кукленнĕ çын пек лăпкă çутçанталăк.
Кĕрхи çителĕк, кĕрлĕх, перекет!
Çĕр тутлăхĕ тапать кирек ăçта та.
Ялйышăмпа тулли курка йăтатăп,
Килсеренех кĕр-шавлă кĕреке.

2

Çунах, вучах вутти, шартлат та çун...
Кĕскет вăрăм çĕре, пуçланă юррăм...
Хавхаланса вĕриленет ман юн,
Сăмахсерен сăрăлтатать çан-çурăм.
Йӳçех эс, кăпăклан, пылак сăра...
Юлташăмсем! Эсир ăçта пулсан та,
Паян сире ытарайман пĕр тантăш
Хутран хутах калать: тав пурсăра!

3

Ăçта халь эсĕр—Атăл хĕрринче
Е Мускавра мана аса илетĕр?
Туркменире ĕçетĕр вĕри чей
Е Грузире мана курка пиллетĕр?—
Тавах! Мĕн авалтан сăвăçсене
Тăванлантарнă ватăлми пĕр сисĕм:
Хăюлăх. Камăн чунĕ унтан писĕ,
Çавна тĕнчемĕр манăç çеç сĕнет.

4

Ан çӳрĕр тимлĕ пуçăра чиксе;
Хăюллă пулăр, пулăр чăрсăр, харсăр.
Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ ĕрчетсе,
Ĕçлер-ха пĕр, ывăнасса пăхмасăр.
Пире сăхлантараймĕ „леш“ тĕнче:
Кунтах çĕр çул таран, ĕххĕм темесĕр,
Пурнар-ха; тек усрамасан чипер çĕр —
Сыв пултăр пирĕн шухăш çĕр çинче!

5

Поэт каланă: чи вăйли—этем.
Пурин хуçи те—çын. Апла пулсассăн,
Ан тив упранччăр манăн юррăмсем,
Ĕмĕрĕме тăсма пултартăр сассăм.
Кашни хăй сăнарне хăвармалла,
Кун-çул ани çавсемпеле пуян та.
Никамшăн та телей ан пултăр янтă:
Алт, туп, кăлар, шыра та хăвала!

6

Пĕр пурнăç пирĕн çутă тĕнчере.
Çаплах, мехел çитсен, пĕр вилĕм килĕ.
Ӳсес ăру-йăхсем пире пĕрре
Хĕссе кăларĕç халĕ: вырăн кирлĕ!
Анчах унччен, тантăшăмсем, унччен
Эпир пурне те астивмешкĕн тивĕç.
Кун-çул çăкăр-тăварĕ хире-хирĕç:
Чысне курсан, тертне те ху çĕклен.

7

Юхан çырма пулсассăн пурнăçу,
Эс ху шывна тыткалăн перекетлĕн.
Эс калăн: икĕ хут эп пурнас çук;
Кирек епле юхсассăн та, лекетĕн
Пĕр пысăк Ĕмĕрлĕх шыва; çапах
Эп—чи хастарлă самана этемĕ,
Çурма çултах типсе-хухса пĕтем-и?
Ишесчĕ-ха, çитесчĕ ман таçтах...

8

Эпир халь ҫирӗм-ҫирӗм пиллӗкре,
Анчах мӗскер курмарӗ пирӗн ӗмӗр!
Ик-виҫӗ ӗмӗрте те ӗлӗкрех
Курман ӑна тӑван асаттесемӗр.
Ӑҫта халь кисренмест тӳре-шара?
Мӗн чухлӗ трон турпас пулса саланчӗ,
Епле ҫӗнелчӗ ҫӗрӗн сӑн-сӑпачӗ,
Епле тасалчӗ сывлӑш ҫӗршывра!

9

Тантӑшӑмсем! Мӗскер тытсассӑн та—
Руль, карттӑ, циркуль е ман пек перо-и,
Сире эп ӑшшӑн асӑнап ялта,
Эсир вӑл—пирӗн самана геройӗ.
Хӑҫан сире хӑналӑп? Чи пахи—
Ҫӗн юрӑ пулӗ. Кӑлӑх, куҫ илмесӗр,
Ҫул ҫинелле пӑхатӑп: ҫук, килмерӗр,
Ҫук, уҫӑлмарӗ пирӗн ял хапхи.

10

Телейлӗ ҫул сире! Ан тив паян
Ман ҫутӑ ӗмӗтлӗ кӗрхи уявӑм,
Мӗнпе ман сассӑм сывлӑхлӑ та ян,
Мӗнпе сывлать поэт, мӗнпе пуян вӑл,
Мӗнпе вӑл вилӗмсӗр ыранхи кун—
Ан тив мӗнпурӗ сире шанчӑк патӑр
Пулмашкӑн витӗмлӗ, пулмашкӑн паттӑр,
Вара... вара ахаль ҫунман ҫак чун!

1932. Сиктӗрме.

## Унякhви

Уняхви старик тесессĕн,
Ман аса килет—йăваш,
Хăнчăр куçлă, пĕчĕкçеççĕ,
Кăптăрмăш кăна чăваш.

Хырăç-марăç татайманшăн,
Торгисем туса, ялан
Выльăх-чĕрлĕх е хуралтă
Тустаратчĕç кив ялтан.

Уняхви старик юлмастчĕ
Нихăçан та торгирен.
Учука, ĕçке те, ахăр,
Вăл ун чухлĕ çӳремен.

Чиркӳре—пулсан пĕр иккĕ
Пулнă пулĕ ĕмĕрте:
Çуралсан та авлансассăн,
Урăх вăл кĕмен-тĕр те.

Ну, торги тесен, таçта та
Кайса кĕрĕччĕ çав çын.
Эсĕр ыйтăр халь: куштан вăл
Е сутуç-усламăç-им?

Çук, пĕр шăрпăк та унта вăл
Туянман; хурал пӳртне
Шăп кăна кĕрсе тăратчĕ
Тĕксĕм алăк сыппине.

Кăн-кăвак пӳртре пĕр саса
Чыхăнса калать вара:

„Аллă. Утмăл. Утмăл пиллĕк...
Кам хушас тет ытларах?..“

...Çитмĕл. Чарăнчĕ. Хушмаççĕ.
Пĕри çав самант хушши
Куç хĕссе ӳсĕркелет кăшт:
„Уняхви ӳстермĕ-ши?..“

— Сакăрвуннă!—тетчĕ хыттăн
Уняхви çын хушшинчен.
Пурте лах кулса яратчĕç,
Кулманни—старик пĕччен.

Хăйпе хăй йăлăхса çитнĕ
Мыскараçă этемле
Йăтнă аллине салхуллăн
Вăл усатчĕ çĕрелле.

* * *

Юлашки хут астăватăп
Ак çапла Уняхвие...
Уняхвийĕн пӳрчĕ ватă,
Хуçипе пĕр çулхиех.

Пур харампырсен тымарĕ
Тĕпренех кăкланнă çул
Ялăн влаçĕ суткаларĕ
Тĕрлĕрен хуралтă, çурт.

Уняхви, асту, ан юлтăр!
Туйипе кăштăртатса
Вăл куллен пыратчĕ, кукăр
Чĕлĕмне пăклаттарса.

Тăчĕ тө старик мăнаçлăн
Евитлерĕ пĕр кунне:
„Туянтарăр Лариванăн
Улт кĕтеслĕ хыр пӳртне.

Хамшăн халь ĕнтĕ тарамччĕ,
Анчах ман пит аякран
Таврăнать пулас ха каччă,
Çитрĕ çырăвĕ паян.

Эп çухатнăччĕ, а манăн
Ывăл тухнă паттăра.
Хаçатра сăнне çаптарнă,
Курнă пулĕ хăвăрах.

Хăй те çырнă:—Атте, тенĕ.
Илтĕм орден та митал...
Колхозсен йышне ĕçченĕн
Тăрăшмашкăн суннă хал.

Кĕркунне, шăпи кӳрсессĕн,
Авлантарăп тетĕп те...
Намăс-çке-ха кин кĕртмешкĕн
Хамăн çĕршĕннĕ пӳрте.

Эпĕр мар халь йăпăх-япăх:
Акă, янă-ха Якур...
Ну... туйне ташлаттармалăх
Хамăн та ĕçкунĕ пур...“

Унявхи старик кăларчĕ
Хĕвĕнчен хăй енчĕкне;
Пур кун-çулшăн шаплаттарчĕ,
Тарăхса, сĕтел çине.

Кулакан никам пулмарĕ.
Ĕлĕк чух шӳтпе кăна
Йăпанма этем пултарнă,
Халь—туянчĕ чăн-чăнах.

Кам пĕлет: тен, ĕмĕр-ĕмĕр
Ĕмĕтленнĕ вăл çакна...
Вырăнне лартать, атьсемĕр,
Пур çынна та самана.

1935

## Çупатлă хĕр

Те пурнăç çав терех
Тулли пирки сисместпĕр?—
Кун-çулĕ сиккипех
Чупать иккен, атьсемĕр.

Ватти супсах пырать,
„Атте“ пулать яш каччă.
Ача çитет ара,
Хĕрсем качча каяççĕ...

Тин çеç пуканелле
Выляттăн-çке, чипер хĕр!
Паян сан çинелле
Пăхсассăн тĕлĕнетпĕр.

Эс шкул сакки çине
Тин мар-и-ха çав лартăн?
Паян çӳл тӳпене
Анлан хастар хăлатăн.

Тăван ялăмăртан
Эс малтанхи вĕçевçĕ.
„Уринепе ăçта!—
Çунатлă хĕр вăл...“ теççĕ.

Çĕршер çул ларнă ял.
Хальччен вăл—вĕçме марччĕ,
Хĕвел çине чăл-чал
Пăхмашкăн та хăйманччĕ.

Çав тĕттĕм ялсенче
Чăваш хĕри-пăраçĕ

Пĕркенчĕк айĕнче
Хÿхлетчĕ, макăратчĕ.

Тин мар-и, Урине,
Каç-каçăн тăрăшаттăн
Эс Çеçпĕл сăввине
Пăхмасăр каламашкăн?

Тин мар-и-ха Нарспин
Асапĕшĕн кулянтăн,
Иртейнĕ пурнăç пит
Тискеррине ăнлантăн?

Паян ак ху ятнах
Поэт хурасшăн юрă.
Витĕмлĕрех сăмах
Тупаймасран шик пур ун.

Пĕркенчĕк кирлĕ мар
Сăран тумтирлĕскершĕн.
Ĕçре эс вут-кăвар,
Юратура мĕскер-ши?

Мотор сасси илтсен—
Эп хам, пытараймастăп,
Пĕлĕтелле çĕртен
Кĕвĕçерех пăхатăп.

„Шума çуралнăскер—
Вĕçмешкĕн пултараймăп“
Тесе, илемлĕ хĕр,
Сана эп халь каламăп.

Ман ĕмĕт сан пекех
Çÿлте вĕçет, чиперĕм.
Тен, тĕрĕс-тĕкелех
Ана вĕçне çитерĕп.

Эс самолёт рульне
Хăюллăн чăмăртанăн—
Малашлăх шăпине
Алла тытасчĕ манăн.

Эс шăнкăр уярта
Парашютпа вĕçейнĕн—
Ман сăвă-юрă та
Çĕклентĕрччĕ çынсемшĕн.

Анчах кун-çул иккен
Вĕçет пĕр сисĕнмесĕр.
Телей пит туллирен
Ăна эпир сисместпĕр.

Хăш чух пĕр ним туса
Эп ĕлкĕреймĕп тетĕп.
Çапах сана хуса
Çитме ĕмĕтленетĕп.

Тăван ялăмăртан
Эс малтанхи вĕçевçĕ.
„Уринепе ăçта!—
Çунатлă хĕр вăл...“ теççĕ.

Ман шит юлас килмест,
Çуран çӳреп пулин те.
Хăпарччĕ, сассăм, эс
Хĕр хыççăн пĕлĕт витĕр!

Эп те ялта малтан
Суйла пусçларăм сăвă.
Тен, ырă ятпалан
Ялйышăм сума сăвĕ.

Эс ху та çак юрра
Кăмăлласан сасартăк,
Ун чух.., ун чух вара
Санпа танах эп çамрăк.

1936

## Тавлашу

Сарамат пичче—ман хуранташ,
Чăннипе ун ячĕ урăхла:
Пирĕн, темшĕн, пурсăмăрăн та
Икĕ ят мĕн авалтанпала.
Чиркĕве пит ăшшăн курмантан
Пулса кайнă пулĕ çаплалла

Çарăмсан таврашĕн вăрманне
Ман ăру хăй йĕрĕхĕсемпе
Вырнаçни—пĕр виççĕр çул патне.
Хут çине ÿкмен пĕр саккун пек
Янăранă: „ан çĕрт йăх ятне!“
Шеп-и, мар-и ку—шарламăп эп.

Анчах, пуп тĕне кĕртме пырсан,
Пирĕн харсăр аслă асатте,
Çил çунатлă ăйăр утланса
Урнă пек кустарса çитнĕ те,
Тĕн шывне, йĕнер çине тăрса,
„Йыт кулли“ туса хăварнă, тет

Парăнми çав киреметçĕсен
Сыпăран сыппа, йăхран йăха
Тухнă витĕмлĕ чĕлхеçĕсем,
Юмаха юптарнă пит паха,
Такмака, сăвва-юрра тесен—
Тĕлĕнтернĕ пĕтĕм халăха.

Сарамат пичче вăл шăпăрçă,
Пурччĕ унăн пĕр кĕвви: илтсен—
Витрине лартса ташлатчĕçĕ
Шыв ăсма анан чипер кинсем;

Пурччĕ ун тепри—макратчĕçĕ,
Сăпкари ача пек, ваттисем.

Çамрăк чух вăл тапратсан вăййа
Ансăр пулнă, теççĕ, хăш этем;
Арăмсен (те чăн ку, те суя)
Салтăнатчĕç имĕш саррисем;
Сар хĕр пуçĕ тăрринчи тухъя
Сиккелетчĕ, тет, итленĕçем...

Сарамат хапхи панчен сайра
Татăлатчĕ урапа-кӳме.
Чапĕ кайнăччĕ йĕри тавра,
Аякран килетчĕç тилмĕрме.
Унсăр пуçланмастчĕ пыл-сăра,
Унсăр туй сикмен, хĕр хӳхлемен.

Калаçатчĕç: вăл пăлан ĕнин
Хăмпинчен хăпартнă шăпăрне.
Алтăрпа ярса тултарайми
Мăйрака вăл лартнă какăрне;
Амăрткайăк çунаттин шăмми
Хунă имĕш чĕлĕх кĕпçине.

Емĕрне ирттерчĕ ĕçкĕре.
Сарамат шăпăр калать тесен—
Пур тухатмăш та сиксе чĕтрет,
Пăхаймасть туйра ун куçĕнчен,
Пăсаймасть вăл каччăпа хĕре,
Хăтарать çав вăйăç синкертен.

Лăстăр çеç силлет кăтра çӳçне,
Хыпкăчне хăяккăн кăларса,
Палт перет хăмпа мачча çумне,
Хăй ĕçет, кăшт сывлăш çавăрса.
Яш пăхать те курайман çине—
Кăнн хытса каять леш хăраса.

Юнашар кĕпĕрнерен пĕрре
Чĕннĕ пĕр чăваш пиччемĕре.
Пулнă имĕш çав кĕпĕрнере
Тӳсме çук хăватлă та хивре,
Çулсерен питрех тĕлĕнтерен
Урăм-сурăм шăпăрçă тепре.

Чӗнекен чӑвашӗ вӗсене—
Сараматпала ҫав ӑстана—
Тавлаштарнӑ имӗш пӗр эрне,
Туйӗн чапӗ кайнӑ таврана.
Сарамат ҫӗнтернӗ-ҫӗнтернех,
Мухтанать унпа вӑл яланах.

Халь ҫав манӑн шӑпӑрҫӑ тӑван.
Ватӑлса килет кунран-кунах.
Хӑй ҫапах юлмасть-ха уявран,
Ӗлӗкхи шайпа вӑлт-валт кӑна
Каҫӑртать те какӑрне, унтан
„Ну, карчӑк,—тет,—яр ха пӗркана!“

Хӑвармасть вара вӑл карчӑкне,
(Ачисем пулман шереметсен).
Ҫапла акӑ пӗлтӗр кӗркунне,
Тырӑ пулӑ пуҫтарса кӗрсен,
Илсе килчӗҫ пирӗн ял клубне
Пианино, кӗмсӗртеттерсе.

Ҫав тери „тамашана“ курма
Ялйышсем клуба ӗлӗкхинчен
Пырса тулнӑччӗ раснах нумай,
Районти ҫынсем те пур иккен,
Студентсем те, ҫулла каннӑ май,
Каяйманччӗ хӑшӗ ҫав кунччен.

Сарамат та, карчӑкне ертсе,
Хӑмпине чиксе сӑкман хӳне,
Пынӑ-мӗн клуба мӗштӗртетсе
Вӑйлӑ тырӑ-пулӑ уявне.
Малтан пулчӗҫ докладсем-мӗнсем,
Вара вӑйӑ турӗҫ каҫхине.

Юрӑсем юрларӗҫ пӗркана
Ҫамрӑксем-ватсем килӗштерсе,
Сӑвӑсем каларӗҫ аванах
Хамӑр ял хастар сӑвӑҫисем.
Председатель куҫ хӗсрӗ мана:
„Эс ан шухӑшла пӗччен тесе!“

Ташлама тапратрӗҫ унтан ак:
Пукан пысӑкӑш ача кӑна

Ларчĕ те—пĕр вальс, пĕр кроковяк
Çĕмĕрет анчах пианина.
„Вихтĕр. Музăка вĕренет няк...“
Терĕ, к а м? тесен, пĕри мана.

Çаврăнаççĕ пăрчăкан хĕрсем
Сарамат пичче пĕр кĕтесре,
„Ташă, ташă“ тесенех, вĕрсе
Хăмпине хăпартрĕ чиперех,
Пианино сассине илтсен—
Вырăнта пулмарĕ ват чĕре.

Хулара вĕреннĕ йĕкĕтсем
Çаврăнса шăваççĕ йăр та яр,
Пĕр шултран утса, пĕр вĕтетсе,
Варкăшса илеççĕ вăр та вар,
Хĕрсене çĕн ташă вĕрентсе
Авкаларĕç, хуçрĕç—майлă мар!

„Чăвашла ташласчĕ те пăртак,—
Тет пĕри кăшт кăмăлсăрланса,—
Сарамат пичче кунта-и çак?
Калăр халĕ иксĕр ăмăртса!
Вихтĕр хамăр ял-çке, как-никак
Сума сутăр хамăр колхоза...“

Ак „Линка-линка“ та „Шур аппа“
Ячĕ Виктор пианинопа.
Сарамат пуçларĕ Викторпа
Ăмăртмашкăн чаплă шăпăрпа:
Тăрăшса вĕрет, ура тапать,
Хушăран сĕтет вăл такмакпа:

Карчăк, карчăк, карчамас!
Карта урлă каçаймасть;
Шăпăр, шăпăр, тесенех—
Ури çĕре çакланмасть...

Тухрĕ-çке кӳрнеклĕ Сăпанюк—
Сараматăн карчăкĕ—çиççе;
Кайрĕ-çке юхса, сĕрсе, хăш чух
Пилĕкне тытса та ал сĕлтсе;
Ларт тулли курка—тăкăнас çук
Унăн пуçĕ тăрринчен ӳксе.

Сарамат вӗрет хӑмпа, вӗрет,
Пӗркеленнӗ пичӗ тӑртанса
Клуб ҫинчи хӑмач пек хӗрелет.
— Вӑл сӑрне памасть-ха иҫмасса,—
Теҫҫӗ ваттисем,—ха, илтерег!..—
„Старикки тӗреклӗ-ха, таса...“

Анчах Виктор вӑрттӑн йӑл кулать:
Пианино шӑпӑр мар, пичче!..
Ун пӳрни шӑши пек чупкалать
Хура-шурӑ чӗлӗхсем ҫинче.
Хупланать кив шӑпӑр, хупланать,
Аран ҫеҫ вӑл илтӗнет ҫинҫен.

Шӑпӑрҫи вӗрет, тармакланать,
Урине тапать, ҫӳҫне силлет.
— Курас марччӗ-ха сан мӑшкӑлна!—
Тет хӑй ӑшӗнче; кӗҫ ҫӳлелле
Печӗ хӑмпине вӑл маччана,
Печӗ те... тытмарӗ тек калле.

„Иртнӗ!—терӗ Сарамат.—Пулмасть...
Илсе кай, ачам, Шупашкарах,
Музее эс пар ҫынсем кулма
Манӑн намӑс курнӑ шӑпӑра.
Шур ҫӳҫпе паян эп сан умна
Тайма пуҫӑн тайӑлса тӑрап.

Аллӑ ҫул каларӑм шӑпӑра,
Аллӑ ҫул ташлатрӑм чӑваша.
Халиччен никам та таврара
Ҫӗнтерсе курманччӗ тавлашса.
Сан хурру пулас-ши-ха вара?—
Тенӗ шухӑш ҫунтарать ӑша.

Мӑшкӑла тӳсмешкӗн ҫук вӑй-хал,
Шалт тӗнче кулли ку, шутласан.
Анчах эс, ҫапах та, хамӑр ял,
Ху та кӑшт вӗреннӗччӗ манран.
Ман кӗвве те сыхлӑн ҫакнашкал
Хатӗрпе, тен, манӑҫ пуласран.

Яр эппин, янрат ҫут тӗнчене!
Пил-пехил сана авалхи пек...

Пирĕн иртнĕ... тунă хамрăнне..."
Терĕ шăпăрçă пит ерипе.
Тар шăлам пек усрĕ те пуçне—
Куççульне вăл шăлчĕ çаннипе...

Пианино шав кĕмсĕртетет,
Пĕр качча çаклатрĕ Сăпанюк,
Старикне йĕкĕлтесе иртет,
Сарамат кулать:—Ах, ăçтиçук!—
Унăн-кунăн пăхкаларĕ те,
Пĕр хĕре куç хыврĕ:—Кил, Наçтук!—

Пианино шав кĕмсĕртетет,
Çамрăк-кĕрĕм туй та çуй тăвать.
Иртсе кайрĕ пулĕ çурçĕр те—
Автана илтмест ни яш, ни ват.
Савăнать ялйышăм, хĕпĕртет,
Çук ăна тытса чарас хăват!

1936

## Юлашки

Карантай Матви пурнатчĕ
Емĕрхи ячĕпелех.
Янăравлă хушамачĕ —
Мăн аслашшĕн пехилех.

Анчах тикĕссĕн пымарĕ
Ун кун-çулĕ ку чухне.
Кăшт кăна вăл çухатмарĕ
Хăйĕн тĕп хушаматне.

Пĕтĕм ялĕ колхозланнă,
Карантай Матви кĕмен.
Тем майпа, тем шутпалан вăл
Тăрса юлнă пĕр-пĕччен.

Агитаторсем килетчĕç
Районтан, Шупашкартан.
Калаçатчĕç, витеретчĕç
Пухура-мĕнте ялан.

Çав-çавах, хисеп тăвуçăн,
Çĕр те виçĕ килĕрен
Пĕр килли Матви-„индусăн"
Шутланатчĕ çулсерен

Счетовод тĕртсе илетчĕ:
„Мĕн чăваш пуçупалан
Пĕчченле пурнатăн?—тетчĕ,—
Пĕрлешесчĕ çынпалан.

Хăçанччен эп çырăп саншăн
Уйрăм список сводкăра?!"

— Кĕрĕп-çке, — тет леш йăвашшăн, —
Колхоз тармĕ-ха ара.. —

Ўкĕтлетчĕ хурăнташĕ:
„Хушамат ятне яран!
Мĕн пĕччен эс, мур курашшĕ?!
Пурăн хамăр йышпалан.

Санпала ĕçсе-çиме те
Лайăх мар, хăвах чухлан:
Çулсерен эс пĕрĕнетĕн:
А эпир — çĕрме пуян!“

„Вăл çапла та...“ текелетчĕ
Карантай ун пек чухне,
Хăй сухапуçпех чĕретчĕ
Хытса кайнă анине.

Председатель ўкĕтлетчĕ,
Ўкĕтлетчĕç ялйышсем.
„Кĕмелле те халĕ...“ тетчĕ
Карантай иккĕлешсе.

Тепĕр чух перетчĕ тўррĕн:
„Çыпăçатăр çын çумне!
Çыннăн хăйĕн ăсĕ пур ун,
Тем пулас-ха малашне?..“

— Мĕн малашĕ? Çирĕм çул кĕç
Пурăнатпăр колхозра.
Час уявлĕç, юрă юрлĕç,
Эс — пĕччен... мĕнле вара? —

„Халь пĕччен те... ĕрчеттерĕ
Саманамăр, тен, кайран...“
— Маяна юлатним? — терĕ
Пĕри шăппăн хыçалтан.

Сăмах çыпăçрĕ те ларчĕ,
Хăпартсан та хăпас çук.
Карантайăн хушамачĕ
„Мая“ пулчĕ çавăн чух.

— Хăш Матви?—тесе ыйтсассăн,
Ун çинчен пур таврара
Калаçатчĕç пĕр çăварлăн:
„Леш... Мая Матви ара...“

Çын колхоз марне пĕлсессĕн
Ют ялсем те хăш чухне
„Мĕн маяматвиленетĕн?“
Тенĕ имĕш пĕр-пĕрне.

Çавнашкал çын ячĕ кайнă,
Асăнсассăн пĕрмаях
(„Карантай“ теме те маннă!)
Шав Мая, Мая, Мая...

Матви карчăкĕ кӳреннĕ,
Ун пăртак турти кĕске:
„Маяна, старикĕм,—тенĕ,—
Чăх айне хураççĕ çке!..“

Унчченех упăшкипе вăл
Урлă-пирлĕ пулнă та,
Çавăнтан вара çил-тăвăл
Çавăрттарнă пур çурта:

„Пурăнмастăп!—тенĕ карчăк,
Хĕрĕх çул мăшăрлăскер,—
Колхоза кĕмешкĕн чарчĕ,
Халь ав куртăмăр мĕскер!

Чăх айне хурсан-хурсассăн
Çăмарта—пĕлетĕне?—
Пăнтăхса каять, курмастăн
Намăсу мĕн терине.

Час „Чăхай Матви“ темешкĕн
Пуçлĕç ака ухмаха.
Лайăх пулĕ тем илтмешкĕн
Ват пуçпа çав сăмаха?

Пурăнмастăп!—тенĕ карчăк,
Шарт хупса пӳрт алăкне.
Унтан уçнă та, сасартăк
Шăнтнă янă мăшăрне:

„Колхоза кĕретĕп!“—тенĕ,
Вара кӳршĕ ачине
Вăл çыртарнă заявлени,
Утнă канцелярине.

Мĕн тăвайăн, мĕн ĕçлейĕн:
Ут чĕлхен ун шăмми çук.
Карчăк юмăç пулнă, тейĕн,
Гарăхса ятлаçнă чух.

Пĕр ик-виçĕ кун иртсессĕн
Матвие—ăçта илтен—
Ялйышсем „чăхай“ темешкĕн
Тапратаççĕ ерипен

Çивчĕ-çке çав çын сăмахĕ:
Çитсе тиврĕ—вырт та вил!
— Хăш Матви?—тет пĕр амакĕ.
„Леш ара... Чăхай Матви...“

Сарăлать хайхин камичĕ
Касăран касса ялта.
Ют ялсем те—ăçта килчĕ—
Сĕтĕреççĕ çав ята.

„Мĕн, Чăхай Матви пек, эсĕ
Халь те колхоза кĕмен?..
Мĕн чăхайланатăн?“—теççĕ
Теприсем, хĕрсе çитсен.

Кам пĕлет: тен, çыннăн ячĕ
Пур республика урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Юбилей туса ирттерчĕ
„Ăмăрту“ колхоз çав çул.
Инкесем ирех икерчĕ
Чашкăрттарчĕç, сĕрчĕç çу.

Ватарах кинемейсем кĕç
Сĕрчĕç кăпăклă сăра.
Стариксем симпыл симлерĕç
Утара çывăхарах.

Пĕр ерне малтан, çав майăн,
Мухмăрларĕç ирсерен.
Хăш-пĕрин кусне комбайн
Карап пек курнатчĕ, тен

Шăп колхоз уявĕн кунĕ
Матвие те ир-ирех
Хыпар турĕ Максăм кумĕ:
„Пыр-ха, кум, хайхи çĕре...“

— Аван мар, кум,—терĕ лешĕ.—
Янтине кӳпме çӳрен,
Тейĕ халăх, ӳпкелешĕ;
Пыраймастăп, ан кӳрен.—

„Пирĕн пĕтмĕ! Председатель
Хăй каларĕ йыхăрма“.
— Ну, апла тесен, татахчĕ..
Карчăк тем калать-ха ман?

„Çӳç-пуçна пуçтар пăртаксă,
Сухална та тураман.
Çын çинче çын пек пуласчĕ,
Мĕн шăлна йĕрсе ларан?

Лантăш супăнь пурччĕ манăн,
Ме, питне çу, упăте!..“—
Хăртрĕ-хăртрĕ те хăй майлăн
Хушрĕ карчăк: „час ут теп!“

Юбилей, колхоз уявĕ,
Кĕлтĕр-келтĕр çĕрте мар:
Пахчара кĕрлет ун шавĕ,
Çĕнĕ сад ӳсет катмар.

Улмисем те пулкаланă
Çамрăк-çамрăк йывăçсен.
Чиесем пур, хурлăханăн
Хуп-хурах мĕн тĕмĕсем.

Шыв хĕррипеле питомник,
Шалалла—кăшт сăртарах—
Лартнă радиоприёмник.
Пĕтĕм халăх ун тавра.

Кĕреке сĕтелĕ тунă,
Пĕрре мар-ха, темиçе.
Сак-тавраш та лартса тухнă,
Ашлă пăтă час пиçет.

Пичĕке кустарса анчĕç
Стариксем утар енчен.
Кашнине курка тыттарчĕç,
Куркисем—шур кĕленче.

Йăкăнат пичче, утарçă,
Купăсне ĕнеркелет.
Юрăçсем тăрса тухаççĕ
Пĕр енне йĕркипеле.

Гимнастёркăллă яш каччă
„Слава" орденĕпелен.
Çав пулать мĕн председатель,
Çав сăмах калать иккен.

„... Çирĕм çул ĕнтĕ пурнатпăр
Пĕрлешсе ялйышсемпе.
Çĕр ĕçне туса пыратпăр
Кĕнеке вĕрентнĕ пек...

Ахаль мар каланă пулĕ:
Пĕччен çын сурать—типет,
Халăх сурĕ—тăвĕ кӳлĕ.
Çав сăмах тӳрре килет..."

— Вата çын пек калаçать ку,—
Терĕç хăшĕ,—эккей, э!—
„Кум, сана та кăшт хыçать ку!"
Терĕ Максăм Матвие.

— Йăнăшрăм, ушипкă пултăм,—
Терĕ леш, пуçне хыçса.
„Тӳрлетме пулать-тĕр, кумăм?"
Терĕ Максăм.—Тепле çав...—

„Тав сана-ха!" терĕ Максăм.
— Тав, ĕçех!—Леш малалла:
„Эс вулав çуртне халь хаççăн
Çӳреместĕн пулмалла?

Хаçатсем халь пĕлтереççĕ:
Польшăра, Болгарире
Колхозсем тăваççĕ, теççĕ,
Халăх илнĕ, тет, çĕре.

А пире саккунлăн панă
Çак çĕре ĕмĕрлĕхех.
Вăй—эпир, эпир, тăванăм,
Тав сана-ха!“—Тав, ĕçех!

Йăнăшрăм, ушипкă пултăм,
Пăсрăм хамăн пурнăçа.
Ялйышран хăпăнса юлтăм.
Халь кĕрсен те... тепле çав...—

„Кăмăлу пулсассăн—туххăм!“ —
Макçăм кум сăмах илет:
„Ак кунта ман Матви кумăм
Колхоза кĕресшĕн“...—тет.

— Завлени çыртăр,—терĕ
Председатель, хăй чеен
Халăха пăхса йĕрлерĕ
Кулакан куçсемпелен.

— Халăх хирĕç пулмасассăн,
Йышăнатпăр, тен, тӳрех?
„Кĕтĕрех“, терĕ пĕр сасă,—
Мĕн хусах хур пек çӳрет...“

Матви карчăкĕ кăлт тĕртрĕ
Чавсипе упăшкине:
— Тăр, калаç ĕнтĕ ху,—терĕ,—
Е çĕн ят илтес тетне?!—

Матви кăшт ӳсĕркелерĕ:
„Ара, халăх, ĕнтĕ эп
Каярах юлтăм та,—терĕ,—
Хапăлах пулсан—кĕреп.

Йăнăшрăм, ушипкă пултăм:
Сухапуç-кĕлмĕçпеле
Маташса çак куна куртăм.
Пултăрах вăл эртеле.

Тен, паранкă çурма юрĕ...
Заявленине ăна
Макçăм кум та çырса хурĕ,
Леçсе парăп паянах".

Счетовочĕ кăчăк туртрĕ
Хуратутлă ачана,
Хăлхинчен каларĕ—хушрĕ
„Чуп-ха!—терĕ вăл ăна,—

Телефонпалан мĕн ту та
Района халех пĕлтер:
Çĕр процент халь „Ăмăрту" те.
Ăнланатăн-и? Вĕçтер!

Сводка панăччĕ... Хуратчăр
Уйрăм списокне пачах.
Колхозра тесе кăтартчăр
Çак... Матвей Агапăча".

Вăл каларĕ хытăраххăн
Юлашки сăмахсене.
Карантай Матвийĕ танлăн
Пăхрĕ карчăкĕ çине.

Мĕн кăна тесе чĕнмерĕç:
Пĕр „мая", пĕр „хусах хур",
Пĕр тата „чăхайĕ" терĕç,
Çын чĕлхи вăл—çилĕм, мур!

Çыпăçсан—саваламасăр
Хăпăтаймăн ĕмĕрне.
А сави... сави вăл—хамăр
Яланах ун пек чухне.

Ахаль мар пуль çав пуплеççĕ
Кая юлнă çын çинчен:
Çынран мар, муртан юл, теççĕ
Елкĕрес пулать иккен.

Пур çĕрте те пурăнаççĕ
Этемсем эртелленсе.
Шур курак пек курăнаççĕ
Кучухне пĕччен çынсем.

Çавăнпах-и, тен, сăхаççĕ
Сăмахпа унашкала.
Коммуна пĕччен сухаçă
Кĕреймест ман шутпала.

Карантай Матвин те ячĕ
Тен, республика урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Халь ăна куç умĕнче те,
Курман чух та—пĕрехмай
Ячĕпе чĕнеççĕ ĕнтĕ:
— Кам тавраше? Карантай!—

— Хăш Матви?—„Матвей Агапчă!"
Тет хай счетовод вара.
— Миçе кун?—„Шăп вăтăр пачĕ
Тăрăшса çак уйăхра".

Ансăртран кăна хăш тапхăр
Çăмăл чунлă шăлйĕрен
Каласа хурать тăрлавсăр:
„Тухрĕ-им чăх айĕнчен?.."

Унашкал пĕр мыскараçă
Тĕлпулать вăл ялсерен.
Анчах хытă хăтăраççĕ
Ваттисем çавна илтсен:

„Пулнă-иртнĕ. Çын—ударник.
Ма шăла йĕрес халь тин?
Урăх вăл яла култармĕ,
Ятне ямĕ. Хамăр çын!"

1949—1950.

* *
*

Каллех эп киле куртӑм...

*А. Пушкин*

Каллех ак эп ҫуралнӑ ҫӗршывра.
Каллех ак чакӑр пӗлӗт анинче
Сайран, кӑшт сарӑраххӑн курӑнаҫҫӗ
Тин ҫулҫӑ ҫурнӑ ватӑ йӑмрасем.
Йӑмра! Йӑмра пек мар-и пирӗн халӑх?
Хуҫ йӑмрана эс, тӑрӑнтар ҫӗре—
Вӑл ҫавӑнтах тымар ярать, хунать.
Ҫапла ҫак сулхӑн Кама йӑлӑмне,
Ҫынран илтнипеле кӑшт каярах
Саккам тесе ят хунӑ ҫӗршыва,
Пӗр виҫҫӗр ҫул аваларах эпир
Тӑван йӑхран хӑпса пырса кӗнӗ;
Йӑмра турачӗ пек тӑрӑннӑ та—
Часрах тымар ярса хуна пуҫланӑ...
Ялйышӑмсем! Ерчевлӗ, ҫӑра юнлӑ,
Ура ҫине нихҫан та пустарман,
Шывра путман, вутра ҫунман ҫынсем!
Аҫта кӑна эпир тӗнче касмастпӑр?
Хӑш хуларан кунта ҫыру килмест?
Анчах ҫыратпӑр пурте чӑвашлах.
Сӗм вӑрмана вырнаҫнӑ ӑру-несӗл,
Кӑкла-кӑкла, ана ҫаран уҫса,
Алран кайми аки-сухи ҫинчен
Юрла-юрлах хунанӑ та ӗрченӗ;
Илемлӗ, витӗмлӗ, ҫаврӑнаҫуллӑ,
Ытарайми хӑй чӗлхине упранӑ...
Эп кайрӑм Ӗнчӗ шывӗ хӗррипе...
Лупашкара, вар-васанта выртать-ха
Пусарӑнса хуралнӑ кивӗ юр.

Çара-ха çирĕк; кăчăкра çӳçе;
Çерем те тин симĕсленет. Çил сулхăн
Анчах уçланкăра унта-кунта
Кĕренĕн те сенкерĕн курăнать
Çурхи тĕнче илемĕ—çепĕç çеçпĕл.
Ун çеçкине пыл хурчĕ тирĕнет,
Асра янра пуçлать манми пĕр юрă...
Кунта, пăртак ăшăтарах парсассăн,
Куçран пăхатчĕç чĕлтĕркке, чипер
„Ан ман мана" текен вак чечексем,
Ав халĕ те вĕсем палăркалаççĕ:
Çаплах таса, илемлĕ, илĕртӳллĕ,
Анчах... куçран пăхман пек туйăнать
Ăçта эсир, чунсем ешернĕ чух,
Чĕремĕрсем чечек пек çурăлсассăн,
Пĕрремĕш хут мана пăхса тинкернĕ
Именнĕ, шиклĕ, тĕлĕннĕ, юратнă,
Курса тăранайми кăвак куçсем?
Ăçта эсир? Кураймăп-шим сире?
Пулин! Эсир мĕскерлине пĕлетĕп:
Çап-çутă канлĕх, ăслă пĕркеленчĕк;
Хăюллă, шиксĕр, тĕлĕнмен, анчах
Çаплах юратнă, мана мар пулин те,
Çаплах юратнă, юратан куçсем!
Шыв урлă, трактор сассинчен писмесĕр,
Каçса кайса тăри тăрилетет,
Таçта çитех вăл улăхса çитет те,
Сасартăк—чăмнă пек—вĕçсе анать.
Унччен те пулаймасть—лере тепри
Вĕлтĕртетсе çĕкленнине куратăн,
Ун та хăй савăнăçĕ, хăй тĕнчи:
Çĕрте ун тусĕ ăшă йăвара
Чăпар çăмартасем çинче тӳлеккĕн
Пуси-пусми асăрханса ларать,
Урисемпе хыпаласа пăхать те,
Лекет пулсассăн—ним те кирлĕ мар!
Анчах савнийĕн юррине илтет вăл,
Çĕр сасăран та уйăрать ăна.
Çĕр сасă çĕр кĕслен тĕнкĕлтетет:
Яра куна, çӳлтен çӳле вĕçсе,
Чĕрĕлĕхе те ĕрчеве мухтаççĕ
Уй-хирĕн ӳркенмен сăвăçисем.
Сайралнă çĕмĕртлĕхелле кĕретĕп.

Çак йывăççен тăррисене эпир—
Çара туналлă, ярханахскерсем—
Вĕçе-вĕçĕн чупса çитсе, пĕр харăс
Хăпарнă, упăте пек явăнса,
Чĕлхе çаврăнмиччен кавленĕ çĕмĕрт.
Йăлтăртатса тăран сапакĕсем
Хура кушак хÿри пек курăнатчĕç.
Ват çĕмĕрт вуллисем халь кăвакарнă;
Тăрри хăрни те пур; турачĕсем те
Хăш-пĕрисем е хуçăк, е аманчăк.
Анчах йĕри-тавра,—хăрса йăваннă
Тункатисем тавра та,—ушкăн-ушкăн
Кĕшĕлтетсе кăна ÿссе лараççĕ
Чĕкеç шатриллĕ хăмăр хунавсем.
Кашни çав ушкăн—уйрăлми килйыш,
Пĕр-пĕринпе харкашса мар, юлташлăн,
Пĕрле чăмăртанса, пĕр тĕм пулса,
Тăпра сĕткенĕшĕн, хĕвел çутишĕн
Çине тăрсах ĕçлет те кĕрешет.
Çапла эпир пурăнакан чи аслă
Саманари чи ăслă этемсем—
Çанталăк хуçисем—хускатнă шухăш
Куллен чăнланнине курса иртетĕн.

Çинçе вăрман. Çаплаччĕ унăн ячĕ.
Пăхан—ытам çитми кĕреш те йышлă,
Касса та тухнă-мĕн пĕр кассине,
Хуралтă çаврăнă, пÿрт лартнă пулĕ,
Вăрманĕн ячĕ çав-çавах Çинçе.
Уçланкă пулса юлнă вырăнта
Халь ашкăрнă та кайнă шĕшкĕлĕх.
„Ан авăн, шĕшкĕ!“ терĕм те ăшра эп
Яштакарах пĕр вуллине суйларăм.
Ун тымарне чаваласа пăхатăп,
Вара кĕрен те авмакаскерне,
Вакрах тымарсене ирте-ирте,
Çĕçĕпеле касса эп кăларатăп.
Алла кĕрет мăйăр шăршилĕ, селĕм,
Çуралнă çĕр пек шанчăклă туя.
Каçар мана, ĕçне ĕç пек тăван,
Саралнă атăлă, сăран уртмахлă,
Сунарçă куçлă ывăнми хуралçă!
Каçар мана: инçе-ха манăн çулăм...
Умра вĕçĕ-хĕррисĕр ĕç ани,

Нихçанхинчен те ытларах, туллин
Пурнас килет çак пĕлĕт айĕнче!
Хамран малтан, вĕри чĕрепеле,
Таса кăмăлпала çуна-çуна,
Сăмах вăйне шыранă тăвансемшĕн;
Вĕсен çитсе ĕлкĕреймен çап-çамрăк
Ĕмĕчĕсемшĕн; аслă вăрçăра,
Сип-сивĕ вилĕме куçран пăхса,
Çĕнтерӳпе пуç хунă тантăшсемшĕн—
Пуриншĕн те, пуриншĕн те эп тивĕç
Сăмах тытмашкăн халăх умĕнче.
Тумаллине туса çитерейместессĕн
Чĕрем тапа пуçлать сиксе тухас пек,
Чун пăччăн туйăнать, куç хуралать...
Сасартăк çак хĕвел, çерем, вăрман
Ман куçăмран ĕмĕрлĕхех çĕтсессĕн,
Эй, çамрăксем, çĕршывăма килсе
Эп утнă сукмака шыраса тупăр,
Ман ӳкнĕ туяна палласа илĕр,
Куçкĕретех çĕрте çĕрме ан парăр:
Чăмăртаса тĕреклĕн тытăр та,
Пĕрне-пĕри ылмаштарса, хаваслăн
Сукмак çинчен мăн çул çинелле тухăр,
Хĕвел çине пăхса хăюллăн утăр!
Хĕвел, кăвак тӳпе, ем-ешĕл хир,
Тусем-сăртсем те, аякри çулсем те
Ман канăçсăр кăмăлăма туртатчĕç.
Ан тив вĕсем сире те çавнашкал
Ытарайми туртса тăччăр. Пĕр те пĕр
Çул çурекенсемпе пăртак канма,
Туртса яма е чей ĕçме ларсассăн,
Тен, астăвăр мана та ăнсăртран:
„Çынни тĕнче касма пит юрататчĕ"
Тесе пĕр-пĕринпе шӳтлешĕр те,
Çав шӳт сире вăй патăр, тӳсĕм патăр!

Тавах сана, пĕчĕкренех мана
Шухăшлама вĕрентнĕ хӳтĕ улăх!
Тавах, вăрманалла ертсе кĕрен—
Ялан шерпет пек тутлă—Енчĕ шывĕ!
Тавах сире, мана—çĕр ачине—
Поэт туса ӳсгернĕ çĕршывсем:
Чĕлхемĕр хăватне шыра-шыра

Куçа хупмасăр ларнă каçăмсемшĕн.
Асапшăн, савăнăçшăн, тӳсĕмшĕн;
Хура кунçуллă, тĕшмĕшпе пăтрашнă
Этемлĕх тĕпĕнчен çынлăхалла—
Аспа çиçсе тăран тӳпенелле—
Çунат хушса çĕкленнĕ кăмăлшăн;
Хура тăпра çине çарран тăрса
Пĕрремĕш хут ура ярса пуснишĕн,
Тăвар сапса тыттарнă тертлĕ, тарлă
Ыраш çăкрин чи малтанхи чĕллишĕн.
Атте-анне чĕлхипеле каланă
Чи малтанхи сăмахшăн—тав! Тавах!

1951

# ÇУЛСЕМ-ЙĔРСЕМ

* * *

Хура каç. Шурă юр.
Темле Блок хĕлĕ пекрех.
Çак вĕçен сив кипекре
Иртнĕ тӳсĕм йĕрĕ пур.

Çил... çил... чăтма çук!
Пĕтĕм шăтăк-шăхăра
Шăхăртать, улаттарать.
Увертюра пуçлас чух
Çавăн пек пулать вара,
Пуçра сăвă ӳснĕ чух
Çавăн пек пулать вара:
Чĕрен кашни чĕлĕхне
Ěнерсе пусса пăхан;
Килĕшмесĕр тĕлĕнен,
Авкалатăн сăмаха.
Хăвна çеç кирлисене
Кăларатăн йăлт хуса,
Е — сасартăк пĕр енне
Хайăран та — шарт хуçан.

Революципе тан ут,
Итле унăн музăкне!
Унта çеç хавхалану,
Вăл çеç çутă кун сĕнĕ.
Унпа çеç сан таланту
Хăтăлĕ те ӳсĕнĕ.

Хура каç. Шурă юр.
Блок хĕлĕ-и, ман хĕл-и,

Кирек камăн пултăр — пур
Шанчăк, çухалман халĕ:
Хура каç — сенкер ирччен,
Шурă юр — ешĕл çурччен.

1927

## Тинĕс çинче

Тапхăр-тапхăр тĕттĕм симĕс,
Тапхăр-тапхăр сеп-сенкер...
Ма шавлать-ши Хура тинĕс?
Мĕн шырать-ши вăл, мĕскер?

Мĕн çитмен, мĕн йăлăхтарнă
Ун чарусăр кун-çулне?
Ма тăкать-ши вăл таварлă
Акăш-макăш куççульне?

Тинĕс çийĕн эп куратăп
Харсăр тăвăл хыпарçи.
Те эп Горькие вулатăп,
Те чăнах та çавраçил?

Тапхăр-тапхăр ухă евĕр
Вĕçет кайăк çӳлелле.
Хумсене хăйпе чĕнет-тĕр,
Йыхăрать-тĕр хăйпеле.

Тапхăр-тапхăр çулçă майлăн
Ерипен вăл ярăнать.
Сĕмсĕр тинĕс айлăм-айлăм
Алтăнса хавхаланать.

Кăпăкланнă хĕн-асапĕ
Чашкăрать, йӳçет, вĕрет;
Кăтăрать, кĕрлет; асать те
Çырана кисрентерет.

„Çитĕ — чартăн, çитĕ — пӳлтĕн!“
Тенĕ пек вăл туйăнать.

Ак каллех çӗмрен пек тӳртӗн
Харсăр кайăк ыткăнать.

Эп ăна курмастăп шуррăн
Е хуран, ула-чăлан.
Ман умра вăл ӗлӗк курнăн
Çав асран кайми чарлан.

Вутлăн-çиçӗмлӗн куматчӗ
Ман асра вăл ача чух.
Эп шутлаттăм: ун çуначӗ
Нихăçан усăнас çук.

Çӳлерен çӳле вăл кайӗ,
Касӗ, теттӗм, пӗлӗте.
Ав çӳрет эп курнă кайăк.
Çӗклесе ман ӗмӗте.

Вăл кăвар пек пӗсехеллӗ,
Хӗм сапать вăл аякка.
Вăл çунать... анчах сехетлӗ»
Канăç çук çав кайăка!

1928

## Сăва мĕнле çитĕнет

(*Шÿт пекки*)

Ман лаборатори тăвата стеналлă,
Урайлă-маччаллă лутра пÿлĕм мар:
Капланнă вăй-хал колбисем пăсланмалăх
Мана пин-пин вольтлă электăр-вăй пар!

Ман ритм вĕревĕ пуçран чĕре урлă
Чĕрне таранах пăс тултарнă самант
Эп каллĕ те маллĕ—те çумăр, те юрлă? —
Пĕр нимĕн туймасăр çапап утăма.

Авто-и, трамвай-и умра, е вăл лав-и, —
Пăхмастăп: пĕр тăп чарăнса, пĕр сиксе
Таран кĕвввĕме рифмăпа хăвалап эп
Хай колбăсене кăшт вĕрсе сивĕтсе.

Епле саванатăп вара çав кристаллă,
Таса тумламсем пуçăма пухăнсан!
Вĕсем ĕнтĕ халь çирĕм хут, вăтăр, аллă,
Çĕр хут фильтрланнă,—эс ту-ха ансат!

Сĕтел хушшинче тап-таса хут çине
Сăмах çырасси—вăл вара ĕç те мар.
Унта нихăçан пултару хăй питне
Сирсе кăтартаймĕ сана—тек эс лар!

Перо вĕçне ячтă рифма тирессн...
Мĕн эсĕ — тиек-и мĕн? Çук! Эсĕ — химик:
Ним евĕрсĕр чĕрĕ сăмах-тирĕс ил,
Ана атомшар пайласа тухтăр мимĕ.

Кӑлар эс—азот-и унта, аммиак-и—
Тултар, пӑкӑла та тыттар савӑта...
Эп л а б о р а т о р и тесеттӗм, ме акӑ—
Шыра, тупса пар формула поэта!

1931, Тбилиси.

## Муза

Пĕлместĕп: турпике-и, мар-и?
Анчах хĕрарăм вăл. Ку паллă.
Тултарăп вăтăр, хĕрĕх, аллă—
Çаплах вăл куçĕнчен пăхтарĕ.
Сăмахĕ ун сахал, словарĕ
Çителĕксĕр çыракана.
Анчах ăнлан пĕрне кăна—
Пĕр сăмахран вăл пин кăларĕ.
Кала-ха, тейĕн, ырă ту:
Мĕнле сăмах вăл?—Юрату.

1935

# Икĕ сăн

## 1

Ылмашăнсах тăрать ун кусĕ:
Пĕрре кăвак, тепре сенкер;
Хăш чух, шăрçи пысăкланусăн,
Сĕм тĕттĕм авăр пек синкер.

Ак-ак сана хыпса çăтассăн
Кăпăкланса вăл çаврăнать.
Путсан ишсе тухма ан асăн!
Путма—такам та пултарать.

## 2

Хавaслă ушкăнра ларать-и—
Вăл пуринчен хаваслăрах:
Шăнкăртатса кулса ярать те—
Итлен ун сассине анчах.

Сасартăк шухăша каять-и
Такам çинчен е тем çинчен—
Хаш сывласа пусне таять те—
Пур тĕнчере хăй пĕр пĕччен.

1940

## Шурă каç

Тăр кăнтăрла та, сĕм çĕрле те
Сăвва Нева тăрăх йĕрлетĕп.
Юратнă вырăнăм ку ман.
Çул хыççăн çул тухать черетĕн
Тăван аваллăхăм умма.

Баяр пăчлăхĕнчен сасартăк
Европалла касуçăн кантăк—
Чăваш пуртти те çакăнта,
Ытла шултран картаймасан та,
Чутланă, çуннă çынпа тан.

Çав ятсăр платниксем, çав харсăр
Чулкасансем лăпсăр та лапсăр
Çÿçенчĕк Балти тĕтринчен
Тухаççĕ, канăçлăх памасăр,
Хыпар туса хăйсем çинчен:

„Эпир çĕклерĕмĕр шыв-шурлă
Ушах-лачакара, хĕн-хурлăх
Ĕнси çинче, çак хулана.
Ĕмпÿ сиктерчĕ пирĕн урлă
Çак каскăн пăхăр лашана.

Кĕпер пек тăкăнтăмăр, путăх
Çĕре тăкăслатса, пĕр утăм
Юлмарĕ шăмă кĕменни.
Çапах та çĕр пулман-мĕн тутă,
Çитмен ăна пире ĕмни.

Кайран, эпир хăпартнă капăр
Çуртсем патне те çывхартмасăр,

Ачасенне, мăнуксенне
Ик-виç çĕр çул пĕр чарăнмасăр
Ёмпӳлĕх сăхнă сĕткенне.

Ăçта пулсан та эс, мĕн ятлă
Йăхран ӳссессĕн те, хăватлă
Хула туптарнă шыраса.
Пин-пин хура пӳртпе чаплатнă
Пĕр акăш-макăш двореца.

Тутар-и, вырăс-и, чăваш-и,
Аслашшĕ, ывăлĕ е ашшĕ—
Алли ĕçпе шыçнисенчен
Çак илеме кĕрсе курасшĕ
Пулманччĕ пирĕн халиччен.

Кам пирĕншĕн? Тĕрме те крепăç,
Путвал та тĕпсакай йĕретчĕç
Кĕрпе-çурпа, тен, хĕрхенсе.
Шăршланнă пăнтăхра çĕретчĕç
Çунатлă чунлă этемсем.

Çĕн кун çынни! Телейлĕ эсĕ:
Ылханлă самана хĕресĕ
Пусман сан тӳрĕ çурăмна.
Анчах ĕ н е р мĕнне пĕлмесĕр
Эс ăнланаймăн ы р а н а.

Ан ман пире. Асту, ан манччĕ!"
. . . . . . . . . . . . .
Сасартăк çилĕллĕн лăпланчĕ
Ӳпкевлĕ сас. Хула шупка.
Те тухайман хĕвел, те анчĕ?
Июнь. Ыйха тартать шур каç...

1940, Ленинград.

## Хӗвел ури

Чӗлхеҫӗпе чӗлхе пирки калаҫрӑм.
Вӑл ӳпкелерӗ кӑшт поэтсене.
Эп пур—вӗсен хутне кӗрсе, тавлашрӑм,
Ҫапах та шухӑш ӳкрӗ пуҫ ҫине.

„Мӗскер шыратӑр?—терӗ ҫав юлташӑм,—
Пӑхма вӗренӗр халӑх куҫӗпе.
Пӗлесчӗ санӑн иҫмасса: чӑвашӑн
Хӗвелӗ те утса ҫӳрет ҫын пек.

Уралла вӑл, ярӑнтарать хӗвел
Ҫынпа пӗрле шултра утӑмпалан...
Хальччен те сӑнаман-и? Питӗ шел!"

Хӗвел ури... Илтетпӗр ачаран.
Анчах ҫав сӑнлӑха нихҫан та ман ӑс
Художник пек тавҫӑрайманччӗ. Намӑс!

1949

## Археолога

Тип-тикĕс тăваткал. Йĕри-тавра канав.
Тĕш хытарса хуллен чăштăртатать сар тулă.
Упраннă кĕнеке калать иккен сана:
Пин çул авал кунта хула кĕрленĕ пулнă.

Тытатăн кĕреçе. Тем тĕрлĕ самана
Ӗс чавнă çĕр çине тăпра сийленĕ хулăн.
Анчах пĕр нухратрах куратăн эсĕ муллă,
Шăв-шавлă пасара, тӳсме çук нушана.

Чӳлмек катти чĕртет сăрапала юрра;
Ют кĕреке умне тухса тăрать салхуллă,
Чĕркуç таран çарран, тăм çăракан чура.

Тупатăн кивĕ хĕç: элек пусне вăл çулнă
Е, чăнлăха касса, хăтарнă суяна?
Кам ун хуçи? Тарçи? Йăлт калăн эс çакна.

1935, Сăвар.

## Савăш курки

*Поэт тусăма*

Упа сурчăкĕ пек çумăр
Пĕрĕхет те пĕрĕхет.
Лар-ха, тусăм, кăмăл тултăр,
Илемлентĕр кĕреке.

Лар-ха, ирĕлтĕр çанталăк,
Ик такмакçăн пĕр шăпа.
Кăмăла пăртак уçмалăх
Кĕвĕлер-ха пĕр шайпа.

Ăшăтмалăх пур кил-вутăм,
Чысламалăх чыс пур тес.
Вучаха паранкă хутăм,
Тутлă турăх—пĕр чĕрес.

Пушататпăр та тулать чăм,
Перекетлĕ кĕркунне.
Тав сана, çумри çунатçăм,
Тыт ман савăш куркине!

Шартлатать юман кăварĕ
Çаврăм юрă хушшинчен.
Çунĕ-çунĕ те хăварĕ—
Кĕл кăна вăл çутличчен.

„Çавнашкал çак пирĕн пурнăç,—
Тетчĕç ĕлĕк сăвăçсем,—
Вучахри кăвар пек сӳнĕç
Асапсем, савăнăçсем.

Хăрах ывăç кĕл е тирĕс
Юлĕ,—тетчĕç,—кун-çултан..."
Сăвăлар-ха çавна хирĕç,
Пурнăçа савса чунтан!

Пушататпăр та тулать чăм,
Перекетлĕ кĕркунне!
Тав сана, çумри çунатçăм,
Тыт ман савăш куркине!

1935

## Вирьял хӗрӗсем

Шап-шурӑ шупӑрлӑ, хура уралла —
Чарлан пекех вирьял хӗри-пӑрасӗ
Ким варрине карталанса ларассӗ.
Улт сар кӗсмен, вуникӗ хӑмӑр алӑ.

Эп вӗсене куратӑп—ир-и, кас-и:
Витрисене витсе, ялан янравлӑ
Йӑлӑмалла е каялла касассӗ.
Сӗт сиплӗхӗпеле сывлать йӑмралӑх.

Йӑмӑкӑмсем, вӑрман кайӑкӗсем!
Савса ыйтас килет, пӗлтерӗрсем:
Ма тӑр суллах хура тӑла сыратӑр?..

Кунта асра пуль, тен, ӗмӗртенхи
Чӑтлӑхсенчи сӗлен-калта сӑххи,
Е урӑх-и сӑлтав? Этнограф, калӑр!

1936

## Тăвата пĕр тăвана

Тăвата хурăн пахчăрта—
Пĕр тымартан ӳстернĕ пек,
Тăваттăн ӳснĕ хăвăр та,
Пĕри те юлайман тĕпе.

Атте-анне пире пиллет
Кил-çурт тытма та „мул пухма“.
Çĕршыв пире парать тивлет—
Урхамахла пуçа ухма.

Çĕрмешкĕн лартнă шалчасем
Тапса сикеççĕ тĕкмерен.
Ялйыш сайра куран сăнсем
Тем чухлĕ пирĕн килсерен.

Ытти тăванĕсемпелен
Çав сăнсене тĕкĕр айне
Çакаççĕ те—хăна килсен
Мухтанкалаççĕ хăш чухне:

„Ак ку тăрать ман Мускавра,
Ку—Хусантах, леш пит инçе,
Сайра çырать те ку хутра—
Чей янă-ха кучченеçе...“

Çапла атте-анне вара
Йăпантарать чунĕсене.
Тăвата хурăн пахчара—
Тăвата хĕр пек вĕсене.

1947

## Тĕтĕм

Тӳлек. Мăрье тĕтĕмĕсем
Тӳп-тӳрĕ хăпараççĕ;
Мана темскер асилтерсе
Çӳле-çӳле каяççĕ.
Куймак шăрши кĕрет: çынсем
Çар уявне чысласççĕ.

Вĕри шывпа пăшăхласа
Пичĕкесем чӳхеççĕ.
Çăка пылне ăса-ăса
Симлеççĕ, йӳçĕтеççĕ.
„Тавтапуçах ку колхоза!"
Тесе ĕçсе-çиеççĕ.

Пĕр-пĕр ватти мана курсан
„Тавсси, ялйыш, тавсси!—тет,—
Алхасрăмăр алтăрпалан,
Халь—пысăк пӳрнески те.
Пĕрле пурнатпăр-ха, тăван,
Пире çав хаклă питĕ".

Йĕс чĕлĕмне чаваласа
Хыпать вара хăяккăн,
Вутчуль çине „уне" хурса
Чакма çапать хăватлăн:
„Пурнасчĕ-ха, электритса
Çутса курасчĕ манăн!.."

Вара, уне сулла-сулла
Кăшт амалантарсассăн,
Хăй чĕлĕмне, кула-кула,
Чĕртсе ярать вăл танлăн.
Прометейрен тăван пулас
Ку çын!—тесе пăхатăн.

Тӳлек. Лĕп чĕлĕм тĕтĕмĕ
Пĕр саррăн, пĕр сенкеррĕн
Каçхи тин аннă тĕттĕме
Кĕрет сĕвем-сĕвемĕн.
Çаплах итлетĕп этеме,—
Сăмах куç пăврĕ,—тейĕн.

„...Ёлĕк-авал темле патша
(Пĕлместĕп—темĕскершĕн?)
Пит юратман тет чăваша,
Шутланă вĕлермешкĕн.
Чăваш кăтартнă тамаша
Патшан чуннех витет-мĕн.

Патши вут ыйтнă та ара,
Леш—манашкал чĕртет-мĕн.
— Вăл чĕрнинчен вут кăларать,
Ăçтан ăна çĕнтерĕн!—
Тесе каларĕ тет вара
Патша, килне çитсессĕн...“

Лăх-лăх кулать ват чĕлĕмçĕ:
„Юмах ĕнтĕ, мĕн калăн!
Кашни ват супнă кĕлĕмçĕ
Хăйне маттур курасшăн,
Тен, çавăнпах та, тейĕн çав,
Хевти пĕтмен чăвашăн...“

1948

## Тăван уй-хир

*(„Тăван сăмах" валли çырнă)*

Тикĕс тырă тинĕс пек,
Пĕр йăран та курăнмасть.
Кунĕ шăрăх та тӳлек,
Пĕр пучах та хусканмасть.

Ав — комбайн хир тавра
Карап пек ишсе пырать.
Вăл вырать, çапать тырра,
Пит тирпейлĕ пуçтарать.

Комбайнёрăн умĕнче
Ылттăн çăлтăр курăнать.
Ялкăшать хĕвел çинче,
Уй-хире вăл çутатать.

Тăрăшса ĕçленĕрен
Çын çӳрет çăлтăрпала.
Вăл—герой. Эп те ӳссен
Çавăн пек тăрăшмалла.

1950

## Халăх чунĕ

Колхоз клубĕнче эпĕ сăвă каларăм,
Итлерĕ ватти, вăйпитти, çамрăкки.
Сасартăк хам çырнă сăвваха манса кайрăм,
Тăк такăнтăм пĕр саманта тем пирки.

Унччен те пулмасть—маларах ларнă каччă
(Каччи тин пĕтернĕ пуль çиччĕмĕш класс)
Эп маннă сăвва чиперех астутарчĕ,
Каларĕ те—хăй те именчĕ пулас:

Питне çаннипе хупласа, пуçне усрĕ.
Анчах манăн куçăм умне çав самант
Пĕр харăс—çĕршер çулхи тӳсĕм те тухрĕ,
Малашлăх та çутрĕ сӳнми асамат.

Чĕрем, савăнса, хăвăртрах тапса илчĕ:
Çав шкул ачине, çӳлелле çĕклесе,
Мĕнпур тĕнчене кăтартассăм ман килчĕ—
Ак—вилĕмсĕр халăхăн чунĕ!—тесе.

1950

## Салам

Куйбышев облаҫӗнчи
Чаллӑпуҫ районӗнчи
„Ленин ҫулӗпе“ хаҫат
Ҫакнашкал салам кӑҫал
Пичетлерӗ манӑнне,
Кӗртес пуль кӗнекене?

Инҫетри Шупашкартан,
Хамӑр Автономирен
Саламлап чунтан-вартан!
Пырса курӑп—ӳлӗмрен.
Тен, хӑна та пулӑп эп
Туслӑ, ырӑ йышӑрта.
Чаллӑпусӗн чапӗпе
Ҫырӑп ҫӗнӗ сӑвӑ та.
Сирӗн „Ленин ҫулӗпе“
Халь те ман умрах выртать.
Чыслӑ ят, мухтавлӑ ят!
Ҫирӗм ҫул тӑван хаҫат
Ленин—Сталин шухӑшне
Сарчӗ халӑх хушшине.
Ҫав ӗҫе тата аван
Ӑнтармашкӑн шырӑр май:
Пӗр сӑмах сая ан кай!
Ырлӑх-сывлӑх сунакан
Ват хаҫатҫӑ—Хусанкай.

1951

## Атӑл куҫӗ

Хӑш ҫул хӗлле, шыв-шур шӑнсассӑн,
Пӑрланнӑ Атӑл анинче
Ҫавра кӳленчӗк асӑрхатӑн,
Вӑл ҫап-ҫутах хӗл каҫиччен.

Пӑр хулӑн—аршӑн пур, виҫсессӗн.
Кӳленчӗк парӑнмасть пӗччен.
Вӑл—Атӑл куҫӗ: халӑх темшӗн
Ҫапла калакӑ ун ҫинчен.

Ҫил уртӑр, шартлама кастартӑр—
Вӑл кӑчӑр та пулмасть иккен,
Чӳхенкелет кӑна хуллен.

Ҫапла, ҫул иртнине пӑхмасӑр,
Хавхалану ман чӗрере
Тапса тӑринччӗ ӗмӗре!

1949

## КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ

* * *

Шупашкара çитсе пыруçăн
Тинкертĕм тăрă Атăла:
Сана асилтĕм, чакăр куçăм,
Санпа çĕклерĕм кăмăла.

Силлерĕ-çке пире шăпамăр,
Силлерĕ Атăл хумĕ пек.
Салантăмăр та пухăнатпăр
Чун патĕнчи ĕмĕтсемпе.

Вĕçет ман шухăш Атăл урлă,
Çумма хушăйăттăм çунат!..
Паян санпа ларса эп юрлăп,
Чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

1945

* * *

Чечек çуратчĕ çуркунне,
Юрлатчĕ кайăк юрă.
Мана савниййĕм ун чухне
Пĕрремĕш хут чуптурĕ.

Сасартăк улшăнчĕ тĕнче:
Ялтрать вăл асаматлăн;
Çиçет, вылять куç умĕнче
Йăлт симĕсĕн-кăвакăн.

Кĕвĕçнĕ пек ман куçăмран
Чечек пăхса сăнарĕ.

Пыл хурчĕ хăй çине ларсан,
Чечек вара... пăхмарĕ.

1945

* * *

Мĕскер, мĕскер эс ман куçран
Чĕнмесĕр тинкерсе пăхатăн?
Мĕскер курасшăн ăнсăртран
Куçхӳрипе сăнатăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

Мĕскер, мĕскер эс кулянан,
Сисмесĕрех сывлатăн ассăн?
Е, пысăк хурлăх курнăран,
Савăнăçна шанмастăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп—санăн.

1945

* * *

Ах, эп курсаттăм мăшăр куç—
Хура та мар, кăвак та марччĕ.
Мĕскер-ши ку, мĕскер-ши ку?—
Пĕрре пăхсах вăл пăхăнтарчĕ.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Сăхлантарать те илĕртет,
Кӳлештерет те шантарать вăл.
Лăплантарать те тилмĕртет,
Çут тĕнчене йăлт мантарать вăл.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Хăш чух ачаш, хăш чух хаяр,
Хăш чух тӳлек, хăш чух кăварлă;
Хура та мар, кăвак та мар—
Юратупа вăл пĕр сăнарлă.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

1945

* * *

Аталтан тухать çур уйăх
Парăс евĕр карăнса.
Час кураймăп сана урăх,
Час манаймăп парăса.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Хум çĕклерĕ, хум сиплерĕ
Манăн пĕчĕкçĕ кимме.
Куçна ан шăл эс, чиперĕм,
Эп каймастăп-çке вилме.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Йăлăмра ем-ешĕл улăх,
Çутă-çутă кӳлĕсем.
Киммĕм таварăнĕ тулăх,
Эс мана кĕте пĕлсен...

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

1946

* * *

Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл!
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Ман юррăма пулсам эс хапăл—
Самант кăна, самант кăна,
Уç кантăкна!

Итле, мĕнле тӳлек шыв анĕ:
Пĕр хум та çук, пĕр хум та çук.
Ман кăмăлăм хăçан лăпланĕ?
Лăпланас çук вăл сансăр чух,
Лăпланас çук.

Шыва кĕрет чипер хĕр-уйăх,
Сар çивтине вăл сапалать.
Ман чунăмра пĕр çутă хурлăх:
Ялан пуласчĕ санпала,
Ялан çапла.

Пире пиллет пур çутçанталăк,
Хуп кантăкна, хуп кантăкна.
Çак юррăм юлтăр асăнмалăх—
Сана кăна, сана кăна.
Хуп кантăкна...

1946

* * *

Шупашкар çăкисем чечекре,
Урамра пыл шăрши, пыл шăрши
Ман курасчĕ сире кĕçĕрех,
Пахчана пымăр-ши, пымăр-ши?

Пахчара уллах мар-çке, тесе,
Пĕрĕнсессĕн хура куçхарши,
Манăн пĕчĕк кимме ĕненсе
Йăлăма каçмăр-ши, каçмăр-ши?

Шăпчăксем юрлама пуçласан—
Атăл тăрăх каять ши те ши.
Саварах çавăрса юрласан—
Ман сасса илтмĕр-ши, илтмĕр-ши?

Шупашкар çăкисем чечекре,
Чечекре пĕтĕм аслă çĕршыв.
Юратасшăн çунсассăн чĕре,
Мĕнле шыв сапăр-ши? Сапăр-ши?!

1951

* * *

Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ,
Яр уçатăп кантăка.
Вĕçрĕ кĕчĕ пĕр чĕкеçĕ,
Чĕртрĕ манăн шанчăка.

Эреветлĕ те теветлĕ —
Ачаран астунă пек.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтетрĕ
Хăйĕн çепĕç чĕлхипе.

Виççĕ çаврăнчĕ те тухрĕ,
Уçă юлчĕ чÿрече.
Тав юрри хавассăн юхрĕ
Янкăр пĕлĕт айĕнче.

Манăн чунăм çунатланчĕ,
Тем çĕклерĕ кăмăла.
Чĕкеç пек вĕçет ман шанчăк
Çÿлелле те малалла.

1952

* * *

Пăлтăра шăналăк карнă
Шăнасем аптратасран.
Тÿшекне хăпартса сарнă.
Минтерсем — мачча таран.

Кирлĕ мар мана минтерĕ,
Сăхланмастăп тÿшеке,
Ма тесен сăмах чĕнмерĕ
Эп пуплес текен пике.

Юрĕ, юрĕ, ăш хыптармăш.
Çаплалла иккен телей.
Час ăсанăп акăш-макăш
Атăлпа эп вирелле.

Урăха чĕрем иленмĕ...
Тавтапуç, ытарлă куç,
Ик кун çурăлăх илемлĕ
Асапушăн тавтапуç!

1950

* * *

Шурă-шурă Шупашкар,
Шутламанччĕ килессе.
А-а-ах, апла мар:
Кĕтрĕм Атăл тинĕсе.

Çӳлĕ-çӳлĕ Шупашкар,
Çĕлĕк ӳкрĕ пуç çинчен.
А-а-ах, апла мар:
Пуçа тайрăм чĕререн.

Аслă-аслă Шупашкар,
Асăнмашкăн та хăйман.
А-а-ах, апла мар:
Асăмран та вăл кайман.

1952

# ЛАТВИРЕ ÇЫРНИСЕМ

## 1. Тахçанхи тăван

Хум шавне куллен тăнлатăп,
Тинĕс аллă утăмра.
Гончаров „Фрегат Паллада“
Çырнă, теççĕ, çак çуртра.

Ун ятне кун-çул сыхланă:
Гончаров урамĕ пур.
Латышсем ăна ăнланнă:
Пур çĕрте те пĕр хĕн-хур.

Типнĕ те ешернĕ сачĕ;
Тинĕс тулнă, иксĕлнĕ;
Тӳннĕ патшасем... Писатель
Тунă хăйĕн ĕç-хĕлне.

Ав Аа çырми. Унта-мĕн
Вилнĕ Писарев путса.
Унăн шухăшĕ путаймĕ,
Илтнĕ халăх çав сасса...

Тахçанхи тăван-çке Латви!
Хăйĕн аслă килйышне
Таврăнса, халь тав тăвать вăл
Аслă вырăс халăхне.

## 2. Пулăçăсем

Пĕçтĕп таран резин пахилккепе
Пулăçăсем тухаççĕ кимĕрен.
Качаллă якăр анчĕ ерипе,
Ким лекрĕ хăйăра сăмсипелен

Кӗрхи çанталăк сĕврĕнкĕ, йĕпе,
Ана-кăна туймасть хастар ĕçчен:
Шултра тарпа вĕт çумăр пĕрлешсен —
Чухах ăна, пăсланать çех кĕпе.

Панамине ĕнси çине сирсе,
Çын тинкерет сивлек тинĕселле,
Те тав тăвать, те хăтăрать хăйле?

Кимми çине пăхать, пирус чĕртсе,
Унта йăшăлтатать ав ким тулли
Планран иртсе тытан эртел пулли.

## 3 Тунсăх

Шултра вăрманлă вашăк çыр,
Вак хăйăр—йăлăм хăйăрех,
Çил тапрансассăн—ланкнă хыр
Кушлавăшри пек çĕхĕрет.

Хумсем шавлаççĕ кун каçа.
Пĕлетĕн тинĕс иккенне.
Куçа хупсан, çавах та çав
Илтетĕн Атăл кĕввине.

Хура уралла шур чарлан
Асилтерет вирьял хĕрне...
Тăван çĕре тунсăхлакан
Курать ăçта та ун сăнне.

Анчах тăван çĕр чиккине
Çуралнă çĕр çеç ан кĕтĕр:
Тăван çĕршыв вăл ку чухне —
Пăшалпалан сыхланă çĕр.

## 4 Пакшасем

Хĕрлĕ çыр хĕрринче
Хĕрлĕрех хыр вулли.
Пакшасем ир çинче
Хыр турачĕ тулли.

Хыр вулли çийĕпе
Унталла-кунталла

Тем патне çитнĕ пек
Мăшăр чун кумкалать.

Ним те мар пĕр хĕрсен
Тункату, турату,
Хăлаçшар пулĕ, тен,
Ыткăнать юрату.

Çавнашкал: пур чунтан
Тухакан сăмаха
Чару çук нихăçан,
Вăл яланлăх паха.

## 5. Мĕнле-ши?

Пĕрремĕш сарă çулçăсем
Чăпарлатаççĕ вăрмана.
Кĕрхи вăрман, саралнăçем,
Пĕртте илемсĕр мар мана

Пĕрремĕш шурă пĕрчĕсем
Чăпарлатаççĕ пуçăма.
Чăнне пĕлесшĕн ман чĕрем:
Мĕнле-ши эпĕ тусăма?

## 6. Емет

Пите лăпка, питĕ,
Тинĕс тилĕрмест.
Хырăн пĕр йĕппи те
Хускалса илмест.

Тавракурăм çĕтрĕ:
Çутă шывпалан
Уйрăлми ун йĕрĕ
Хутăшрĕ паян.

Ак çапла, тăванăм,
Пĕтĕм чунпала
Хутăшасчĕ манăн
Ĕмĕр санпала.

## 7. Сарă сăва

Сарă хăйăр, сарă Балти,
Хĕррипе—сап-сарă хум.
Ыттинчен ытла пулатчĕ
Пляж çинче те сарă тум.

Пĕлĕте те сарă ернӗ,
Калăн—сарă çу сĕрнĕ...
Ахаль мар янтарлă теççĕ
Латышсем хăйсен çĕрне.

Сарлака çынсем ĕçеççĕ
Сарă Рига сăрине:
— Астивсе пăхсамăр, теççĕ,
Мĕн тути каланине!—

Чăваша тĕлĕнтереймĕн
Сăрапа эс ĕмĕрне.
Тытрăм лăпкăн та тирпейлĕн,
Вĕртĕм сарă кăпăкне.

Сар курка тĕпĕнче куртăм
Сарă çÿçлĕ сар хĕре.
Темле тунсăх, темле туртăм,
Темшĕн çуннă пек чĕре...

Аслă çĕр, этем çĕршывĕ!
Пĕр хĕвел те çав тĕнчен,
Хамăр ен тени пит çывăх,
Çÿç шуралнăçем чечен.

## 8. Хуракăшсем

Хуракăшсем вĕçеççĕ кăнтăра,
Хури пĕри те çук, йăлт шурă.
Карта, канма ларсан ман çĕршывра,
Хура хуракăш пек хĕр курĕ.

Кайăксенчен мĕскер ăна калам?—
Манман вăл, астăвать вăл, тейĕр.
Çунатсерен хĕстерĕр пĕр салам,
Ах, тинĕсе ан ÿкерсемĕр!..

## 9. Лăплану

Тăрса юлчĕ аякка
Савнă сăн-сăпат.
Хыр çинче улатакка
Телеграм çапать.

Пăнчă-пăнчă е тире,
Сăмахпа тулса,
Мĕн кӳрет каçа-ире
Аякран ку сас?

Эп ăна вулап иккен
Ак çапла ку чух:
Юратать, теп, ма тесен —
Унсăр пурнăç çук.

## 10. Шăнкăрчăсем

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă
Çунат çапрĕ, шăхăрчĕ.
Пурнăç çитнĕ-шим? — Юрлать
Кĕркунне те çурхи пек.
Вăл иккен савса ырлать
Çак çĕре хăй юррипе.
Вăл разведчик пек иккен
Килнĕ хăйĕн пулккинчен.
Акă ларчĕç, куртăм тин:
Пĕрре мар, çĕр мар, тен, пин!

Сырса илчĕç йывăçа,
Сăрса илчĕç çереме.
Кĕç тапратрĕç явăçса
Йăпăр-йăпăр çӳреме.

Курнине пĕрне сăхать
Выçнă ушкăн çĕр çинче.
Вăй хушас пулать çав-ха,
Çулĕ-йĕрĕ пит инçе.

Савăнса та, пĕр-пĕрне
Йăпатса хăй чĕлхипе,
Ăманне-кăпшанкине
Иртрĕç пинĕ-пинĕпе.

Пилеше те ăнсăртран
Сăхса пăхрĕ пĕр пуçтах.
Йÿçĕ туйăнчĕ, куран,
Вĕçсе анчĕ çавăнтах.

Ак хуралçă шăнкăрчă,
Хыр çинче ларакансĕр,
Чăрăлтатрĕ чăр-чăр-чăр,
Хыпарларĕ темĕскер.

Ушкăн харăс пухăнчĕ,
Вăрр çĕкленчĕ пĕлĕте.
Хурт марти пек курăнчĕ
Пĕр самант вăл ман тĕлте.

Балти тинĕс хĕррипе—
Пĕр хăйсем кăна чухлан
Кайăк-кĕшĕк йĕрĕпе
Вĕçрĕç... çĕтрĕç ман куçран...

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă!
Ман çĕрте те канăрччĕ,
Киллĕ-çуртлă çынсене
Хапăл тăвăр çитсенех:
Анине те çаранне,
Пахчине те вăрманне
Пулăшсамăр тасатма.
Эп сире ăсатнă пек,
Тен, ман тус унта ирпе
Тухĕ тăрĕ ăсатма:
— Лайăх таврăнăр!—тесе
Алă сулĕ, тем кĕтсе.
Ун арки çине сиртен
Эп ăна савни çинчен
Пĕлтерен кĕвĕпелен
Çак ман сăввăм пĕлĕтрен
„Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă“
Тенĕ пек тăкăнтăрччĕ!

## 11. Рак хуранĕ

Кукăр-макăр рак хуранĕ
Парнелерĕ тус мана.

Асăнмалăх вăл упранĕ
Ман патра халь яланах.

Чăвашра эп пурăнатăп,
Пирĕн çĕрĕн тинĕс çук.
Тунсăхлас пулсан—кунта та
Маншăн тинĕс пур ку чух.

Рак хуране çеç тытатăп
Эп хăрах хăлха патне,
Килĕмрех вара тăнлатăп
Аслă тинĕсĕн шавне.

Сарă кăпăк чашкăрни те,
Хум çапни те, тăвăл та,
Тус кулни те, йыхăрни те—
Йăлт çитет халь ман пата.

Эп шутлатăп: тен, лере те
Хăй панчи рак хуранне
Манăн тус тытать пуль, тетĕп,
Кичемрен хăлхи çумне.

Вăл та, тен, туять пуль халĕ,
Курмасассăн та хама,
Ман канусăр чун хавалĕ
Вĕрекен çак сăввăма...

## 12. Турпас

Çаврака, яка, çап-сутă,
Чул пуль терĕм, вăл—турпас.
Тен, пиншер çулхи çак „чудо“,
Кам ун ĕмĕрне чухлас?

Тен, карап юпи вăл пулнă,
Тен, ким пуçĕ, тен, кĕсмен...
Йĕрĕлче пек тăрса юлнă,
Авăра пырса лексен.

Хум ăна куллен çуланă
Шар тăварлă чĕлхипе.
Чăмăрланнă вăл, чулланнă,
Халь хĕвел çинче типет.

Ак çапла: пин-пин сăмахлăн
Шавлакан этемлĕхре
Пĕр сăмахăм сыхлансассăн —
Эп ахаль пусман çĕре.

Дубулты. 1947, август—сентябрь

# ÇУК ÇАКНА
# ЧАРАС ХĂВАТ

## Çуллахи талăк

Эп çӳреп çĕршывăм тăрăх
Сулхăн каç, тăр кăнтăрла.
Ăшă çумăр, пăчă шăрăх,
Сиплĕ сывлăм манпала.

Çумăр кирлĕ ӳстермешкĕн,
Ăшă кирлĕ пултарма.
Сывлăм кирлĕ, пит типсессĕн,
Нӳр тытмашкăн тыррăма...

Çĕмелсем кăçал пит йывă,
Туй та йышлă пулмалла.
Пурăнать чăваш çĕршывĕ,
Шав утать вăл малалла.

Тин кăна эп кайса куртăм
Пур район пек районах.
Вакунтан тухайрăм—утрăм,
Лав кĕтмесĕр çуранах.

Çĕрĕ аслă çул хĕрри те,—
Пĕр-пĕр почта, МТС
Е кино тавраш̆ĕ çитĕ
Хыççăн, терĕм, мĕн кĕтес?

Чăнласах та: пилĕк çухрăм
Утаймарăм та-и, тен,—
Шăлтăр-шăлтăр турĕ, пăхрăм—
Урапа хыçрах иккен.

Лавçă чарчĕ, йĕкĕлтерĕ:
„Мĕн эс, пĕтнĕ этем пек,

Ик уран çӳретĕн?—терĕ,—
Лар, каятпăр кӳмепе!"

Шӳт тăван сынпа, пĕлетĕп,
Вăрăм çул та кĕскелет.
Лартăм.—Каç пулать-çке,—тетĕп.
„Ан шарла, çитетпĕр,—тет.—

Сарăп çук тимĕр кăвакăн,
Айăр мар та... как калас—
Урисем çапах тăваттăн".
— Хăш ялсем пулан?—„Малкас.

Çак çула хутлатăп эпĕ
Каллĕ-маллĕ... суяс мар...—
Çирĕм икĕ çул хисепĕ,
Ху куратăн: эп—пуштар.

Пуштă, пуштă турттаратăп
Чугун çул хывиччене...
Халĕ, станци çывăхра та,
Усăлса çӳренĕнех."

— Мĕнлерех йӳнеçтеретĕн?—
„Пĕр ĕçкунĕ кунсерен.
Ĕçĕ çăмăл та... отвечĕн
Виçине хăвах пĕлен.

Ну, сынна та ыр тăвап çав—
Е посылка, е хаçат...
Çавăнпа сума сăваççĕ,
Ятлă çын та калаçать.

Шутласан, мĕскер-ха çитĕ
Çынпа çын калаçнине?.."
Лавçă—кăшт философ, питĕ
Юратап ун йышшине.

Юратап, кăшт ывăнсассăн,
Çуллахи уяр кунта
Урапа çине лармашкăн:
Тăсăлса выртатăн та—

Калаҫса кăна пыратăн,
Ҫулăн ик енне пăхса.
Сăмах йышлă манăн лавҫăн—
Пĕтерейме чăх сăхса.

„...Эс ҫĕмел пит йышлă, тетĕн,—
Терĕ вăл,—мĕскер калам?
Халь ҫĕмел, итем, пӳлме те
Трактортан килет, ачам!

Трактор тарăн сухалать те,
Нӳр тытса юлать тăпра.
Асаттех ăна калатчĕ:
Тĕш пăхать вăл тымара...

Мĕн тен эс! Авал пĕлмен-им
Тарăн сухалассине?
Анчах пит сĕтĕрттереймĕн
Ҫинчĕк улăм кĕсрине.

Виҫҫĕ сывлăш кăларать те
Кĕсререн хуплу юлать.
Трактор—ку вара карахтĕр!
Кунпала тума пулать...

Халь лару-тăру мĕнле-ши?
(Хаҫатне ман ҫыхнă-ха).
Кранклатать-им-ха ҫав лешĕ...
Леш—пуҫне пулман ҫăхан?..

Леш, Америкре-и ҫавă,
Англире-и .. у р н ă й ы т
Тенĕ пек сăмахчĕ-ха вăл...
Халь те вăл урать-им пит?“

— Уолл-стрит-и?—„Ҫавă пулĕ,
Кам пулас тата ку чух!
Хăҫанччен вăл вĕрĕ, улĕ?
Халăх пур унта, ай ҫук?

Хамăр пек ахаль ҫынсем те
Тинĕс урлă пур пуль-ҫке?
Ну, апла пулсассăн, ĕнтĕ
Ҫăткăнсен кун-ҫул кĕске...“

Çaплалла калаçса пычĕ
Ахаль çын, хăй пит япшар.
Каç та пулчĕ. Ултă-çичĕ
Помидор, ик-виç хăяр,

Çăкăрпа тăвар, сухан кăшт —
Пулчĕ шеп кăна апат.
„...Шăрттанне, ачам, пусман-ха, —
Тет ман лавçă вашават. —

Ĕлĕк шав чăхкуç пулатчĕ,
Эс курман-и? Çук пуль çав...
Халь ак çак пахча апачĕ
Усрĕ ячĕ куç-пуçа.

Хам эп, утмăлта пулин те,
Никаккуй та аптраман.
Ма тесессĕн — витамин, тет
Пирĕн тухтăр. Чăн, куран...“

Тĕттĕмленчĕ. Сулхăн витрĕ.
Çыхрĕ çын хутаççине,
Пеккине хутласа чикрĕ,
Кăшт хистерĕ лашине.

Района çитсессĕн, пирĕн
Пулчĕ икĕ çул вăра.
Мĕн пулсан та, хире-хирĕç
Теççĕ çăкăр-тăвара.

Хам чухланă пек чыс турăм
Эпĕ те çул çыннине.
Тавтапуç, терĕм те утрăм
Сукмакпа анат енне.

* * *

Çынсене чăрмав тумарăм, —
Çитнĕ халь чăрманмалли.
Ни машина эп ыйтмарăм,
Ни лаша çав каç валли.

Чул çурт умĕн шăппăн иртрĕм,
Çап-çутахчĕ кантăксем.

Уçӑ кантӑк витӗр илтрӗм—
Калаçатчӗ пӗр этем.

Телефонӗ шӑнкӑр-шанкӑр:
„Çутталла“ колхоз-и ку?
Ну, хӑçан çапма пуçлатӑр?
Ха, мӗнле çанталӑку!..“

Чӑн, çанталӑкӗ илемлӗ—
Лӑпкӑ, ӑшӑ та уяр.
Пӗлӗтрен кусна илеймӗн,
Çӑлтӑрсем пӑхаççӗ чар.

Ӗмӗрхи Хуркайӑк Çулӗ
Пӗлӗте урлах выртать.
Кайӑксем канаççӗ пулӗ,—
Йӑмрасем шӑп-шӑпӑртах.

Çӳлте çеç ав кӑлтӑр-кӑлтӑр
Самолёт вӗçсе иртет.
Çӗнӗ çӑлтӑр—виçӗ çӑлтӑр
Курӑнать тӳлек çӗрте.

Алтӑр çӑлтӑр кӑштименчӗ,—
Кӗвенте çӑлтӑр енне
Аврине тӑсса чӗтренчӗ,
Леш—систерчӗ Алине.

Çын кӑна сиксе тӑмарӗ
Тутлӑ, ӑшӑ ыйхӑран:
Ни вӗри çӗлен курмарӗ,
Ни эсрел вӑл, ни шуйттан.

Çӑлтӑр ӳкрӗ; кӑшт тӑрсассӑн—
Кӗç тепре, унтан тепре...
Таçта илтӗнчӗ пӗр сасӑ:
— Манӑн çӑлтӑр тӳпере!—

Хӗрача пуль. „Çамрӑк чуншӑн
Çул-йӗр çутӑ“ тенӗ пек
Янӑрарӗ сасӑ уççӑн
Пархатарлӑ ӗмӗтпе.

Эп Патмар ялне кӗретӗп.
Ял канать. Анчах клубра
Ҫап-ҫутах-ха, вӑл пӗрре те
Ҫывӑрман пек ку хутра.

Купӑс, юрӑ, вӑйӑ-кулӑ,
Курӑнать хисеп хӑми.
Аякра-ха манӑн ҫулӑм,
Эп иртеп пӑхи-пӑхми.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр, шӑнкӑр-шӑнкӑр...
Ҫывхарать пӗччен шӑнкрав.
Хирӗҫ пулчӗ. Лаши мӑнтӑр.
Тен, мана юрать ку лав?..

Тарантас хыҫне таяннӑ
Туй каччи пырать иккен;
Пӗккинчен вӑл ҫакса янӑ
Пурҫӑн лента тӗслӗрен.

— Каялла ҫавратни?—терӗм.
Каччӑ пӑхрӗ ман ҫине.
„Ҫитнӗ...“ терӗ те, лӳпперрӗн
Сулчӗ сылтӑм аллине.

Сасси тытӑннӑ-мӗн каччӑн,
Миҫе каҫ юрланӑ пуль!
Ҫул каларӗ, ӑнлантарчӗ,
Шӑхӑрчӗ те—„Сывӑ пул!“

Уттарса кӑна вӑл кайрӗ,
Ма тесен ӗнтӗ—килте.
Хӑй камне вӑл шарламарӗ,
Шарламарӑм эпӗ те.

Ҫӗмелсем кӑҫал пит йывӑ,
Туй та йышлӑ пулмалла.
Пурӑнать чӑваш ҫӗршывӗ,
Шав утать вӑл малалла.

* * *

Малаллах эп те утатӑп,
Тухса кайрӑм Патмартан.

Кушкалла эп çул тытатăп,
Сасă пачĕ пĕр автан.

Те сехет çитсех ку тапхăр,
Те ăшша вăл аватать?
Хура пусă. Таçта трактор
Çĕрĕпех тăрăлтатать.

Утрăм, утрăм—тухрĕ тулă,
Кăшт кайсан ыраш курап.
Çĕмелсем—кашни пĕр улăп,
Çар пекех каçхи уйра.

Укăлча хыçне çывхартăм.
Тимĕр çекĕллĕ хапха.
Уçса кĕтĕм те çаклатрăм,
Ялпала пыратăп-ха.

Кĕпер урлă иккĕн каçрĕç.
Ик хĕрарăм.—Хăш ял?—теп.
„Саманак“ терĕç пĕр харăс,
Именсе кăшт кулчĕç те.

Сăмах хушрĕç пĕчченшерĕн:
— Каçа юлнă-çке эсир...—
Тет пĕри. Тепри шўтлерĕ:
„Те халь каç ĕнтĕ, те ир?

Киноран килетпĕр,—терĕ,—
Халăх час пымасть: ĕççи“.
— Мĕн кăтартрĕç?—„Китай хĕрĕ“
— Эп Кушка çитейĕп-ши?—

„Инçех мар та... выртса кайăр,—
Хăрах çын утти вăрах.
Пит ан тиркĕр ĕнтĕ, канăр,
Ялĕ пирĕн ял майлах.

Каясах тесен—ан ятлăр,
Уйăх çук та... ав унти
Свет çути тĕлне тухайăр,
Çап-çутах вăл—свет çути...“

Поэтсем электăр тенĕ
Электричество вăйне
Свет çути теме пикеннĕ,—
Мĕн тăвайăн çынсене!

Малтанах аса килеççĕ
Тĕрлĕ хутăш сăмахсем.
Анчах халăх—хăй чĕлхеçĕ,
Эс ăна та итлесем.

Ахаль мар (эп хам вуланă
Электро-лампа çутса)
Вырăссем ăна Светлана
Теççĕ-мĕн ачашласа.

Свет çути... Пĕлсессĕн эс пĕл
Харăс икĕ чĕлхене.
Свет çути—ку маншăн штепсель
Чăлт туни пек илтĕнет.

Тен, мана нумай вĕреннĕ
Тĕпчекен, вуласанах,
Хăтăрмашкăн та пикенĕ:
„Тупнă,—тейĕ,—пĕр сăмах!“

Тавлашас килмест пĕрре те
Пысăк ăслă çынпала.
Пысăк ăссăрах пĕлетĕп:
Чĕлхе чĕрĕ япала.

---

Те Çавал, та Шетмĕ пулчĕ,—
Кĕпер урлă каçсанах
Сылтăма пĕр улăх юлчĕ,
Свет çути çунать чăнах.

Катăк уйăх, хĕрлĕ уйăх
Вутпуççи пек чашкăрса
Тухрĕ, улăхрĕ те—улăх
Янк çуталчĕ кăшт тăрсан.

Уйăх хăй те шупкаланчĕ,
Вĕтĕрех çăлтăрĕсем
Имене чăл-пар саланчĕç,
Курăнмарĕç тек вĕсем.

Свет ҫути ханк та тумарӗ:
Тухрӗ те ту хыҫӗнчен—
Хытӑрах вӑл ялтӑрарӗ,
Унтан ҫӗтрӗ ҫӗнӗрен.

Чӑваш ҫӗрӗ варлӑ-сырлӑ,
Свет ҫути тухать, чӑмать.
Асӑмра „Вут ҫути“ сырнӑ
Короленко ҫав самант.

Хуп-хура чернил пек ҫул та
Хуплайман ҫунан вута.
— Мал енче ҫапах та ҫутӑ!—
Тенӗ сын хутран хутах.

Сӳнми шанчӑк хал-хавалӗ
Ӑшӑтсах тӑнӑ чуна...
Свет ҫути—умрах вӑл халӗ
Ҫитнӗ ӗмӗт пек ҫунать.

* * *

Кушкӑ марччӗ манӑн тӗлӗм,
Ҫитес ҫӗрӗм—малалла.
Ҫула май кунта эп кӗтӗм.
Ҫурҫӗр ҫитнӗ. Канмалла.

Эп сайхах ҫинче выртатӑп,
Типӗ утӑ ӑшӗнче.
Ах, тӗнчем! Ӑҫта выртсан та
Пурнӑҫ тутлӑ та чечен!

Анчах кам тин кушнӑ утӑ
Ӑшӗнче выртса курман,
Ҫавӑн ҫур телейӗ ҫук-тӑр
Ҫумӗнче ман шутпалан.

Ҫурӑк витӗр ялтӑрарӗ
Ҫутӑ фара—инҫех мар.
Пӗр пӳртрен илтӗнсе кайрӗ
Пин ҫулхи „Ай-яр, ай-яр...“

Кĕç машина тăрăлтатрĕ;
Тулăн-шалăн çӳрӳпе
Кĕçĕн алăк шăлтăртатрĕ;
Каччă тухрĕ хĕрĕпе.

Çавăрса юрланă майăн
Эп курмасăрах уйлап:
Хĕр каять, ялйыш сăпайлăн
Ăсатать ăна туйла.

Çĕмелсем кăçал пит йывă,
Туй та йышлă пулмалла...
— Çывăр, çывăр, çывăр, çывăр!—
Тет ман ăсăм кăмăла.

Кăмăл вĕçнĕ... Халь çула, теп,
Ĕç хĕрӳ, çĕрсем кĕске...
Ял çапах выртман: юрлать те,
Савăнать те... Ку мĕскер?

Ним туймасăр çывăратчĕ
Ĕлĕк ял ку вăхăтра.
Пурнăç, пурнăç çăмăлланчĕ,
Халăхпа ĕç ансатрах...

Ир-ирех вăрантăм, куртăм:
Сывлăм çеç хуçан пахчи.
Ав хуçи, вăл тытнă пуртă,
Тӳрлетет хăмла шалчи.

Кĕреçе сухал. Йĕс чĕлĕм
Шăвăнать айккинелле.
Вăл—малтан, эп—хыççăн чĕнтĕм
Хăнари йĕркепеле.

„Канлĕ çывăртăн-и?“—Канлĕ.—
„Сывлăм шалт тăм ӳкнĕ пек.
Сулхăн пуль? Кĕр, ăшăн калĕ,
Час эп ярăп нухрепе...

Службăран кăçал кĕтетĕп
Авланман ывăлăма.
Хăмла кирлĕ пулĕ тетĕп
Пăртакках йăла тума...“

Хуҫапа пӗрлех эп кӗтӗм.
„...Эп капан тӑватӑп хам,—
Тет вӑл халь,—ман ӗҫӗм-хӗлӗм
Вӑйӑма кура, ачам.

Халӑх ӗҫӗ те-ха пирӗн...
Урӑххишӗн мар пит эп—
Пурнӑҫне пурнасчӗ мирлӗн,
Вара сывлӑттӑмӑр, теп.

Ӗҫӗнчен хӑракан марччӗ...
Ывӑлсене мар эпир—
Ывӑлсем пире пытарччӑр,
Ҫавӑ ӗнтӗ пирӗн мир".

Аслӑ ҫын. Ҫӗр ҫул сывлатӑр
Ҫӗр ҫинче вӑл!—тетӗп эп.
Капанне тӑвать пуль, ахӑр,
Вӑл тирпейлӗ—кӑкшӑм пек

Урлӑ сак пек хулпуҫҫиллӗ,
Ултӑ пӑт йӑтать пуль-ха...
Халӑх тем те тӑвӗ, кирлӗ
Лӑпкӑ кун ҫеҫ халӑха.

* * *

Юрататӑп эп хальхаҫҫӑн
Ҫак Ҫавал таврашсене,
Ма тесен кунта хавассӑн
Свет ҫути мана чӗнет.

Кушкӑран чылай ял урлӑ.
Кушартан-мӗнрен иртсен,
Авалхи леш Хурӑн ҫулӑн
Хӗррипе утап пӗччен.

Обозсем иртеҫҫӗ тачӑ
Малтанхи тӗштырӑпа.
Грузовик тусан кӑларчӗ,
Кӑлтӑртатрӗ урапа.

Моторсем ҫинче вӗҫеҫҫӗ,
Пӗкӗсем ҫинче те ав

Пысăкрах та пĕчĕкçеççĕ—
Темиçе хĕрлĕ ялав...

Кăнтăрла. Ыраш выраççĕ
Самоход-комбайн çÿрет.
Вар енчен касса пыраççĕ
Çурлапа та виçĕ рет.

Кăшт шырланлă та-мĕн хирĕ,—
Çын машинăна упрать.
Пĕлнĕ пек пĕр тикĕс, ирĕк
Çĕрпеле комбайн утать.

Пĕлессе пĕлет те пулĕ...
Комбайнĕрĕ ăçталли?
Хĕр пулас... Лисук е Юля?
Е ман пĕлĕш Натали?

Чăн та Аптраман тавраш-и?
Кам пулсан та, умри çын—
Çĕнĕ ĕмĕрĕн чăвашĕ,
Çутçанталăкăн хуçи.

Юмахра авал юптарнă
Кăлтăрттин арман çинчен:
Хăй вăл аварнă, лăканă,
Хăй пĕçернĕ тет иккен.

Ку та халь—вырать, çапать те,
Сăвăрать те тĕш тăвать.
Çын çурла çине пăхать те
Комбайна вăл куç хывать

Кам этем ăсне тав тумĕ?
Юмахра **курпун сысна**
Теекен çурла тек пулмĕ,
Курпунлатмĕ вăл çынна.

Пилĕк-çурăм тÿрĕленчĕ,
Ĕлĕкхи тар-шур тек çук,
Çук асап, уйри тĕрленчĕк—
Урăх кăмăлла ку чух.

Астăвап интеллигенци
Теекен этемсене
Виртлесе „сиккелекенски“,
„Тÿрĕ пилĕк“ тенине.

„Вăл пуçпах ĕçлет те...“ тетчĕç
Тепĕр чух тĕрте-тĕрте.
Пуçсăр ту-ха ку чухне ĕç!
Çук ун пек ĕçсем пирте.

Сарлака хальхи каçалăк!
Утрăм-утрăм—çитме çук.
Яшкана ларать-мĕн халăх
Эп унта çывхарнă чух.

— Апата!—тесе сас пачĕ
Шур калпаклă кинемей.
Тутлă пулмалла апачĕ,
Кирлĕ мар тепре чĕнме.

Илтрĕ пур ана. Çук: пусă
Мĕн ани халь пулмалла!
Халăх пухăнчĕ. „Клуб“ уçă.
Мĕн калассу пур—кала.

„Акă,—терĕ бригадирĕ,—
Килнĕ сăвă калама...“
— Каласан калатăр, ирĕк,
Эпир хатĕр тăнлама...

— Ларса çитĕр-ха пăртакçă,
Выçнă пулĕ çул килсе...—
Кĕç пырать пĕр мыскараçă
Кинемей патне çиçсе:

„Сан çикчен мĕн тет бригада,
Эс пĕлетĕн-и çавна?
Вăл патшалăха тытма та
Пултарать!—тет“.—Кам ăна? –

„Эсĕ, эс ĕнтĕ—кухарка“.
— Ас çитсессĕн—тытăн та...—
„Çулăраххине тултар-ха,
Кур—хăна пур ав унта...“

Çăкăртан аслах пулаймăн,
Эп ларатăп тĕм çине.
Леш шутник каллех хăй майăн
Çаптарать сăмаххине:

„...Стариксем кăçал шÿтлеççĕ:
Техника тырра-пулла
Хуса çитеймерĕ, теççĕ".
— Епле, мĕншĕн-ха апла?—

„Мĕншĕнне хăвах куратăн:
Пĕкĕ çÿлĕш те ыраш,
Вăй килет самохода та,
Çурлана çеç мар, юлташ!"

Кĕç тепри хушать çав майăн
Шухăшлană шухăшне.
Тишкĕрсе пăхать комбайнăн
Анлăшне те çÿлĕшне:

„Ман шутпа куна халь тунă
Çуртырри пусси валли.
Ыраша лартсассăн—унăн
Пур-ха, пур юсамалли.

Тен, конструктор чухлайман-тăр:
Çĕклеме е антарма
Кирлĕ пĕр-пĕр регулятор,
Йывăр мар пуль-çке тума?

Ман куç-пуç пăртак курать те
(Эп механикчĕ çарта),
Кăшт майларăм-ха, пырать, тет
Комбайнĕрĕ халь тата.

Ну, тулла тесен—ан пĕшкĕн.
Çурлуна пуçтар вара...
Техника! Алла илмешкĕн
Ăс та кирлĕ çав пуçра".

Эп итлеп те тĕлĕнетĕп:
Кам-ши ку? Хресчен çаплах
Е ку халь интеллигент-и?
Пуççăр—алă та чăлах!

Шут тăвĕç, хисеп те тăвĕç,
Танлаштарĕç кирлĕ чух.
Чăвашри пек йышлă сăвăç
Ман шутпа ниçта та çук.

Ним хушмасăр, каппаймасăр,
Евит пултăр тĕнчене:
Пирĕн сăвă каламасăр
Кун иртмест вăл ку чухне.

Сăввине ăна калатпăр
Çичĕ кун та эрнере.
Анчах пит хĕрӳллĕ тапхăр
Çигрĕм эпĕ çав хире.

Бригадирăн ал сехечĕ
Шав çиçтерчĕ хĕвеле.
Хуçи шав ăна тинкерчĕ
Вăрттăн куç хӳрипеле.

Эп сĕвем-сĕвемĕн сӳтрĕм
Чăмăр сăвă çăмхине;
Пăртак чарăнтăм та илтрĕм
Бригадирăн сăмахне:

„Майлă пек-и? Мĕнле картăр?
Ман шутпа, леш сăвăра
Пĕр рифми пит аплах мар та,
Ну, пырать... хăйне кура“.

— Айтурух! Аван-çке питĕ,—
Тет пĕри, хута кĕрсе.
„Аванни сахал та çитĕ,
Теççĕ мар-и вырассем?“

— Ĕлĕкхи сăмах ку!—терĕç
Хыçалтан бригадира,—
Лайăх та нумай, вăт тĕрĕс!
Сахалли халь—начара...—

Кĕç-вĕç тем тĕрлĕ дискусси
Пуçланас пек çын кĕрлет.
Бригадирăн чее куçĕ
Питсене пăхса йĕрлет.

„Юрĕ,—терĕ вăл,—халь вырăр,
Каç клуба чĕнĕпĕр-ха.
Ялĕ япăх мар, вăл пырĕ,—
Туп-ха эс ку халăха!“

* * *

Çĕмелсем кăçал пит йывă,
Туй та йышлă пулмалла...
Эп утатăп çамрăк йывăç
Лартнă ешĕл çулпала.

Туйĕ-шыльăкĕ вăл маншăн
Иртнĕ ĕнтĕ тахçанах.
Мĕншĕн хатĕр-ши утмашкăн
Çĕрĕн-кунĕн эп çапах?

Ытларах пĕлесчĕ тетĕп,
Манăн тивĕç çаплалла:
Хăлхапа итлемелле те
Курмалла хам куçпала.

Мĕн шухăшласа кăларĕ
Килĕнчен тухман юлхав?
Бригадир юлташ кăларĕш—
Туп-ха эс ку халăха!

---

Пилĕк-ултă кĕпер урлă
Каçрăм пулĕ кунĕпе.
Çикелерĕм „швеши“ пулă
Вата пулăçăсемпе.

Сыпкаларăм тутлă турăх,
Çырткаларăм эп шăрттан.
Сар урпа сăри те тулăх
Юхрĕ аварлă чăмран.

Ку каллех ĕнтĕ каçпаччĕ,
Хĕвел ăшă-ха самай
Хăш çĕрте—с е п п е р а п а ч ĕ,
Хăш çĕрте пулать—я в к а й,

Е—Энтри апачĕ теççĕ:
Уй-хирте чĕре сури
Тунă пек çисе илеççĕ
Канмалла сынсем юри.

Ял енчен ак йăлтăр-ялтăр
Тухрĕ пĕр велосипед.
Вĕлтĕр-велтĕр, кукăр-макăр
Çаврăнса кунта килет.

Пĕр старикĕ тинкерет те
Ал тупанĕ айĕнчен,
„Ха, епле ĕрĕхтерет!—тет,—
Сĕлĕ лашиех иккен".

— Почтальон!—тет йыш хаваслăн.
Çитрĕ, анчĕ, „лашине"
Çавăтса кĕрет мăнаçлăн
Сар ача хăмăл çине.

„Çыру пур-и, Сантăр?"—теççĕ
Хĕрлĕ питлĕ хĕрĕсем.
Е çартан хыпар кĕтеççĕ,
Е флотран салам вĕсем.

Хуларан ответ илесчĕ,
Теççĕ шкул пĕтернисем.
Шупашкар, Канаш пичечĕ—
Çул уççи кăçал вĕсен.

Хусантан та хут килет-тĕр,
Горькирен те Мускавран...
Хут мĕн тутине пĕлетĕр,
Çамрăксем, эсир аван!

Сантăр шăппăн таянтарчĕ
„Лашине" çĕмел çумне;
Сумкине уçса кăларчĕ
Çырусем ялйыш умне.

Тем çитмен пек пулчĕ, ахăр,
Сырса илчĕç кайнă чух:
„Тăван Атăл" çук-им, Сантăр?
„Ялав" çук-им? Мĕншĕн çук?—

„Халлёхе—хаҫат..: Тем пулнӑ?—
Терӗ Сантӑр халӑха,—
Журналсем пиртен кӑшт юлнӑ.
Мӗншӗнне эп пӗлӗп-ха...“

Ҫавӑтса тухса утланчӗ
Сантӑр хӑйӗн „ҫӑрхине“.
Леш бригадӑна кустарчӗ,
Тусан тухрӗ ҫул ҫине.

Ак ҫынсем хаҫат вулаҫҫӗ,
Уй-хирти ӗҫсем ҫинчен
Ҫырнӑ сводкӑна пӑхаҫҫӗ:
Район шав малтах иккен.

Савӑнаҫҫӗ, хӗпӗртеҫҫӗ:
„Хамӑр ял та кайрах мар,
Райхаҫат ҫырсаччӗ,—теҫҫӗ,—
Халь мӗнле-ха? Чим, пӑхар...“

— Чӑнласах та: колхоз ячӗ
Пур хисеп хӑми ҫинче..—
„Ах, апла хуратас марччӗ,
Атьӑр-ха эппин касчен!..“

Ӑмӑрту! Ӗҫчен бригада
Ӗҫченреххине курать,
Ял—яла; кирек ӑҫта та
Пирӗн ӗҫ ҫапла пырать.

Ӑмӑрту! Пӗр татӑлмасӑр:
Ял, район, республика,
Пур ҫӗршыв!.. Епле ку тапхӑр
Урӑхла эп пуплӗп-ха?

---

Шӑкӑл-шӑкӑл, чӗвӗл-чӗвӗл
Калаҫать ха хир ҫынни.
Илтӗнех каять пӗр кӗвӗ—
Шупашкар юрлаканни.

Юрӑ—чун уҫҫи вӑл ҫыннӑн,
Хӑлха чанк тӑрать илтсен.
Сикрӗ тухрӗ пӗр машина
Сӑрт хысакӗ хысӗнчен.

Грузовикпала килеççĕ
Юрласа та вирхĕнсе
Шупашкарăн çулçӳревçĕ
Ывăнми артисчĕсем.

Пăнтăр-пăнтăр тутараççĕ
Вунă алă харăсах:
Шофера чарма калаççĕ,
Таçтанах мана курса.

Чарчĕç, лартрĕç кăпăр-капăр
Ещĕксем çине мана.
— Чим-ха, теп, ăçта каятпăр?—
„Пĕрех мар-и? Лар кăна!“

* * *

Хир те ту, çырма та улăх,
Шав вĕçет-ха грузовик.
Янраса каçать шыв урлă
Федор Павловăн „Сăвви“.

„...Кĕтĕм кайрăм пĕр киле те
Амăшшĕн мар—хĕрĕшĕн...“

Ял хапхи. Чупса килет те
Яр уçать çиччĕри çын.

Шакла пуçлă, хура куçлă,
Шăнкăрав пекех сасси.
— Ку хăш ял?—тет пирĕн пуçлăх
„Ку-и? Ку—Карук касси“.

Ялĕ тахçанах-мĕн илтнĕ,
Ав пуплет хай шакла пуç:
— Академтеатр килнĕ!
Аки, пар-ха аллă пус.

Алла пуслăх эп курам-ха
Тухъя пуçлă Нарспине...—
„Колхозпах куратпăр, кам халь
Кăтартать пуль пĕччене?..“

Клуб. Машина сасӑ пачӗ.
„Ак,—тет шофер,—мӗнле чыс
Тырӑ леҫрӗм, парса ячӗҫ
Кашни центнершӑн артист!“

„Чим-ха,—тет ӑна пӗр карчӑк,—
Пӳрни пӳрт хыҫнех килет...
Асли хӑшӗ-ши?.. Хӑварччӗ
Ман валли те пӗр билет“

— Юрӗ,—тет кӳпшек портфеллӗ,
Шур шлепкеллӗ пӗр ҫынни;
Хӑй типтерлӗ те йӗркеллӗ.
Те „асли“, те кӗҫӗнни.

— Юрӗ,—тет вӑл,—хӑваратпӑр,
Старикне чӗнме ан ман.
Ялӗпех кӗҫӗр куратпӑр.—
„Тавтапуҫ, апла пулсан“

Кинемей утать хаваслӑн,
Шӳт тума та пит ӑста:
„Старикки юлмасть вӑл манӑн,
Йӗп ӑҫта—ҫиппи унта...“

Клуб умне тӑваҫҫӗ сцена,—
Ҫын шала шӑнӑҫас ҫук.
Вылятать колхоз ӗҫченӗ
Пуртӑ, пӑчкӑ, мӑлатук.

Ав хайхи ача, куратӑп,
Юпаран вӑл уртӑнчӗ:
— Эп чаршав кантри туртатӑп,
Пӗркунне те туртнӑччӗ.—

Ав тепри—чӗвен тӑрать те
Клуб чӳречинчен пӑхать:
„Пӗр камичӗ ҫывӑрать,—тет,—
Пуҫласси час мар пуль-ха“.

Хӗвел анчӗ, сулхӑнланчӗ,
Халӑх тин уйран кӗрет.
Ял ҫыннин каҫхи апачӗ
Кӗттерет тепрер сехет.

Артистсем те ав лараççĕ
Тăрăхла сĕтел тавра.
Ялтилле—яшка сыпаççĕ
Тĕттĕм пулнă вăхăтра.

— Яшка тутлă-çке паян!—тет
Астивсе пĕри малтан.
Халлĕхе вăрçмасть никам та,
Ни ўпкев çук, ни ылхан.

Тăхтаманĕ те, Нарспи те,
Яш Сетнер те Михетер—
Пурте лăпкă, мирлĕ питĕ,
Килĕшўллĕ çав хатер.

Кашăк çеç шăлт-шăлт лекет те
Илĕнет сĕтел çинчен.
Кăшт тăрсан хаяр трагеди
Тухмалла çак сынсенчен.

Таçта тепĕр чăваш ялĕ,
Тен,ăша сĕре-сĕре
Кулмалли комеди халĕ
Курать пуль çак сехетре.

Иртнине те, хальхи паттăр
Ĕçсене те куç умне
Кăларатăн эс, театр,
Эс çĕклен çын кăмăлне.

Тав тăвас килет сан пысăк,
Йывăр ĕçлĕ ушкăнна,
Чун илемĕн, вăйĕн, чысĕн
Вăрлăхне акакана.

Çу каçа мĕскер курмастăр?
Автопа та лашапа,
Хăш чухне çуран утатăр,
Шăрăх е йĕпе-сапа—

Каçсерен, хăш каç икшер те—
Явăн, сўтĕл, хып та çун.
Чăн ăсталăх—тар та, терт те,
Кĕрешў те кашни кун!

Тав сире пĕтĕм чун халлĕн,
Алексеевпа Ырсем,
Шорникова та Ургалкин,
Молодовпа ыттисем.

Тав сире, мĕнле пулсан та,
Ĕçлеме юратакан
Пĕр саманари, пĕр тантăш,
Пĕр ĕмĕтлĕ сăвăçран!

* * *

Шăнкăравĕ шăнкăртатрĕ,
Чи малтан коммунистсен
Витерўллĕ секретарĕ
Сăмахне калать кĕскен:

„Ак спектакль кăтартатпăр...
Ну, ыран ирех—хире.
Тырпула тăккаламасăр
Вăхăтра пухса кĕрер.

Хăвăрах пĕлетĕр, халăх:
Çуллахи пĕр лайăх кун
Тăрантать пире çулталăк,
Çавнашкал чăн хакĕ ун.

Кăçалхи çанталăк—мул вăл:
Пĕрчĕ ылттăн пек кĕрет.
Ырашпах ак пулчĕ тулă.
Сĕлĕ, ясмăк ĕлкĕрет.

Çинерех тăрса майлар та,
Тен, автан яшки тĕлне
Килсе çитĕ çак бригада
Кăтартмашкăн çĕннине.

Курмалла та, пĕлмелле те,
Халь эпир тасти тем мар,
Ыттисем пекех пуль, тетĕп:
Çăкăр пур—ыйтан юр-вар.

Ял юр-варсăр мар, каласшăн
Ак çапла эп сăмаха:
Халăх халь туллин пурнасшăн,
Тем те кирлĕ халăха.

Шухăшне те шухăшлатпăр.
Чун та, кăмăл та ыйтать,
Паян кун—мире сыхлатпăр
Уй-хирте эпир йăлтах.

Мирлĕ ĕç кӳрет культура,
Ӳстерет пуянлăха...“
Эп леш сăмахах астурăм:
Туп-ха эс ку халăха!

---

Халăх шăпăрт. Çурçĕр çитрĕ.
Нарспи лекрĕ асапа.
Талăк çеç тенĕ пек иртрĕ
Эп çула тухнăранпа.

Анчах мĕн кăна курмарăм
Эп çав талăк хушшинче!
Çуррине те калаймарăм
Ун çинчен эп хут çинче.

Кăвакарчĕ август касĕ
Кăвакарчăн шусăмпа.
Артистсем шав пуç таяççĕ,
Халăх халь те ал çупать.

— Килĕрех тепре, кĕтетпĕр!—
Теççĕ, куç шăлса, хĕрсем,
Нихăçан та Нарспи евĕр
Хĕн курман, курмасскерсем.

Куç шăлаççĕ те кулаççĕ:
Ку спектакль-çке йăлтах!
Саламат та тек курмаççĕ,
Сурпансем те çук ялта

Çăлтăрсем—йĕс шăнкăравăн
Чĕтренет тӳпе маччи.
Таçта илтĕнчĕ янравлăн
„Тухать-и те тухмасть-и..“

Пĕлĕт кĕçĕр кӳме евĕр,
Уйăх кĕçĕр—параппан.
Ав, чăнах иккен, атьсемĕр,
Пăнтăр-пăнтăр тет таçтан.

Çĕмелсем кăçал пит йывă,
Туй та йышлă пулмалла.
Пурăнать чăваш çĕршывĕ,
Шав утать вăл малалла.

Çĕкленет ман ирĕк халăх,
Ма вăл ан çĕклентĕр-ши?
Çĕкленмелĕх, ыр курмалăх
Вăй парать Тăван çĕршыв.

Аслă çĕрĕн аслă йышĕ
Ĕç ĕçлет те мул тăвать—
Пурнăçпа телейшĕн, миршĕн.
Çук çакна чарас хăват!

Каçхине çутатĕ уйăх,
Кăнтăрла хĕртĕ хĕвел.
Ывăл-хĕрĕн пулĕ туйĕ,
Килйышпа кĕрлĕ тĕпел.

Вылĕç-кулĕç, ĕçĕç-çиййĕç,
Сар сĕтелĕ сарлака.
Чăп тултарĕ пĕрлехи ĕç
Тав курки—çавра курка.

Аслă çыннăн аслă ячĕ,
Чĕлхесем çинчи пĕр ят—
Пирĕн хӳтлĕх, пирĕн шанчăк...
Çук çакна чарас хăват!

1951

## Тури Вылта туй сикет

Сасăран сăмах пулать,
Тет вĕреннĕ çын вара.
Сăмахпа уртмах тулать,
Теççĕ пирĕн таврара.
Кам пĕлет: хăш чух сăмах
Çитерет те пуль çăмах...

Автономлă Чăвашра
Ман пирки çак хушăра
Сарăлать иккен пĕр сас,
Хăлат пек вĕçет хыпар:
„Ватсене сума сумасть,
Юррисем юравлă мар,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене
Куракла карлаттарать,
Чун чĕмне уçас чухне
Параппан патлаттарать..."
Çапларах мана пĕрре
Сехреметлĕ сехетре
Тарăхса тиркенĕ тет
Пĕр чĕлхеçĕ пĕр тĕлте.

Тавтапуç, тăванăмсем!
Урăх кĕвĕ кĕвĕлем.
Ăçтарах-ши ман кĕслем?
Ăçтарах кĕсле уççи?
Ырлĕç-и, ырламĕç-и—
Хĕнтерех-ха калама.
Çитĕнсе çитен улма
Татмасан хăех ӳкет,
Сăвă та çаплах ӳсет.

Поэтсем каль пёлём пек
Пёçерен ямбсем çинче
Кивёрех çак кёввёмпе
Пулмăп-ши эп пёр пёччен?
Тантăш-тусăм тиркекен
Çичё сыпăк çеммипе
Çичё пушăт çăпатин
Кунне курмăп-ши халь тин?—
Çăпата ку чух сайра,
Ата-пушмак урара.

Мён пулать те мён килет,—
Виçё ят мана пиллет:
Хурапха Хёветёрён
Михалин мехелёпе,
Çарăмсан саркайăкён—
Шелепийён шайёпе,
Пушкăртри Пăртта йăхён
Кёçтентинён кёввипе
Калаçам-ха эп каллах,
Халлаплам-ха пёр халлап.
Чыс тăвар календаре:
Чăвашсем çак хисепре
Пин те тăхăрçёр алла
Çитсе ёлкёрнё тёле
Шартлама уяр хёлле
Шупашкар урамёнчен
Шухăш тытнă еннелле
Ирхи çăлтăр сӳниччен
Тухрё пёр лашасăр лав
Кăсăк пулё ман калав.

Лав тесе юптарнине,
Юптару юмах марне
Пёлтёр пулё малтанах,
Лав—машина вăл, паллах
Анчах, темшён, хуларан
Уялла тухса кайсан,
Çил вёрсессён пёр самант.
Килчё манăн асăма
Арçури аташтаран
Мёскён, чухăн та йăваш,
Пуринчен те хăракан,

Тĕттĕм, тĕшмĕшлĕ чăваш
Çавăн чух чунтан-вартан
Хисеплессĕм килчĕ ман
Авалхи асапранах
Такмаксем кăларакан,
Хĕн-хура манасшăнах
Юмахсем юптаракан,
Халлапсем те хайлакан
Хамăр харсăр çынсене.
Çавăн чух сăввămпалан
Ӳкрĕм эп çак йĕр çине

Хĕвел тухрĕ хĕрелсе,
Сулахай енче çунать;
Кантăк витĕр вăл кĕрсе,
Йăпатса пырать чуна.
Ман шоферăм, шеремет,
Пăхрĕ те хĕвел çине—
„Сар хĕр пулĕ куç тĕлне;
Ку çавна пĕлтерĕ“—тет,
Хушарах парать газне,
Васкатать вăл такçине,
Вĕçтерет те вĕçтерет:
Тумхахне те такăнмасть,
Çырмине те çакланмасть,
Пăр-шурне те вăл пăхмасть
Хăвăртрах çитме хавас.
Каччă çыннăн çавă-çке—
Касакра та уллахра.
Вăрăм çулĕ те кĕске
Ун чухне пире вара.
Ман шоферăм... (ун ятне
Пит пĕлес теекене
Пĕлтерес халех эппин:
Ячĕ пултăр ун Якку,
Хушамачĕ Тапаккух)
...Ман шоферăм—чапла çын,
Маçтăр хăйĕн ĕçĕнче,
Ун Чăваш çĕршывĕнче
Пĕр çырма, пĕр ял, пĕр вар
Пĕр кĕпер пĕлменни çук,
Унпала çул кайнă чух
Кулянмасăр эсĕ лар,

Нихăçан та курмăн шар.
Халиччен вăл, йытта мар,
Шăшие те таптатман,
Хăй те пит вара хăстар,
Çаврăнкалăш та вăр-вар,
Уттипе те утаман,
Вăйĕпе те вăкăр пек.
Ыттипе те ытарма
Çук çав ман шоферăма.
— Пулĕ-пулĕ те Якку,—
Тет пĕр пĕлĕш вара ман,—
Ну ак ку тесен, ак ку —
Такамран та Тапаккух! —

Эп, пăртак пуçа пĕксе
Силленсе пынипелен,
Кăтăш пулнă пек сĕнксе
Курнă тĕлĕк те иккен:
Хĕл кунех пек; çул яка,
Тăсăлать пит аякка;
Çутă йĕрлĕ çулпалан
Пĕр çуна килет тапăртан;
Туртине туртса çыхса
Çÿлелле тăратнă та,
Утсăр-мĕнсĕрех шуса
Вăл анать-мĕн аната.
Пăхрăм эп çуни çине—
Куртăм леш хайхисене:
Сар чăпта сăрнă хыçне
Таянса аран-аран,
Ав ларать пĕр асанне —
Пин çулхи Ашапатман,
Йăнăшмастăп, çавă вăл:
Хуп-хура çăварĕпе
Темĕскер кавленĕ пек,
Курăнать шăпах пĕр шăл...
Хайĕн тимĕр тыллипе
Вупăр карчăкĕ те ав.
„Шалт-шалт, тыллăм!“ тенĕ пек
Янаххи сикет ун шав;
Куçĕ кайнă чалăрса,
Пĕлĕм пит, хăях сăмса.
Ав, куратăп, арçури,

Качака сухалласкер;
Алли ҫӑмлӑ, ик ури—
Ик карлав пек, пит тискер!
Хӗрлӗ куҫлӑ йӗрӗхсем,
Симӗс куҫлӑ иесем,
Вӑрӑм ҫӳҫлӗ вутӑшсем—
Пуҫӗсене пӑр шӑннӑ;
Йыт хӳреллӗ, ҫын сӑнлӑ,
Кушак пуҫлӑ тӑмана...
Хӑш тӗнче? Хӑш самана?

Лайӑхрах пӑхатӑп та—
Те ырра ку, те мура—
Ларкӑчи ҫинче тата
Пӗр этем ларса ырать,
Хӑй ярать кӑна юрра.
Ҫӗлӗк илчӗ—ҫын ҫынах,
Хушмаллах пулать сӑмах:
— Ӑҫталла каян капла?—
Терӗм эп, этем калать:
„Ҫакӑ пухӑ-пӗрӗке,
Ӑҫтиҫук ҫак йӗксӗке,
Инкеке те синкеке
Шупашкар театрне
Туянтарӑп тетӗп-ҫке,
Унта пур тет ырӑнӗ.
Ахалех выртать тавар;
Илмесен, вара лава
Кӳртӗп эп музей килне
Е тӗпчев институтне
Ҫавӑрма пулмасть-ши теп,
Хаклӑ ыйтмӑттӑмччӗ эп,
Аппаланччӑр ҫавӑнта!“
— Ху эс кам пулан тата?—
Ыйтрӑм эпӗ сых ятне.
Ҫын кӑшт пӑхрӗ ман ҫине:
„Эп-и? Эпӗ—Хӗветӗр,
Эсир мана пӗлетӗр!“
Терӗ ҫын кулкаласа...

Кӗҫ таҫтан темле сӑпса
Вӗҫрӗ кӗчӗ хӑлхана,
Сӑрлатать, сӗрлет кӑна!

Вăранатăп, вăл иккен—
Ман такçи юрлать хитрен
Тĕлĕнтермĕш тĕлĕке
Эп курса пĕтереймен—
Кĕнĕ кайнă Элĕке.
Чарăнтăмăр, тухрăмăр,
Акă мĕн-мĕн куртăмăр.

Кăтра сурăх тирĕпе
Хăнтăрланă кĕрĕкпе,
Саррипе те хурипе,
Вĕтĕ-вĕтĕ пĕрмепе
Ашăнса, саркаланса,
Хăшĕсем йӳле ярса,
Тутăр çиййĕн тăхăннă
Çавракa çĕлĕксемпе,
Пасара пуçтарăннă
Паярсен майрисем пек
Кинемейсем килеççĕ,
Именмесĕр иртеççĕ.
Эпĕ ыйтрăм: — Аçталла
Çул тытатăр-ха капла?—
Кăвак куçлă кукамай
Чарăнать ак утнă май:
Путек тирĕ пуçĕнче,
Çĕнĕ кĕрĕк çиййĕнче,
Çаннисем те çыруллă,
Аркисем те çыруллă,
Кăшт вуласа пăхрăм та—
Пархатар çук мар кунта!..
„Ара эсĕ, ар тăван,
Астумашкăн маннă тем?
Суйлав кунĕ-çке паян,
Шкулалла пирĕн çулсем“—
Терĕ карчăк тĕртнĕ пек
Ушкăн кулчĕ ерипе,
Кулнине кăтартмасса—
Тутине кăшт тутăрпа,
Алсапа хупăрласа
Хăвăрт утрĕç ĕç пурпа

Ак унччен те пулаймасть—
Янраса каять пĕр сас,

Сас енне пăхса илеп...
Ма художник мар-ши эп?!
Мĕнлерех пĕлсе сăрлас
Хам куçпа хам курнине?
Хуткупăсне хутлатса,
Перчетке пӳрнисене
Чĕлĕхсем çине лартса,
Пĕр авса, пĕр вылятса,
Кăчăк туртнă пек туртса
Тухрĕ урлă урамран
Çамрăк купăсçă, атьсем!
Хыçĕнчен картан-картан
Сар хĕрсем те йĕкĕтсем.
Алăран алла тытса,
Шăлт та шăлт мăйăр катса,
Çул тытаççĕ пĕр енне,
Ахăрнех çав шкул патне.
Шĕкĕл-шĕкĕл шӳтлешсе,
Иртĕнмесĕр виртлешсе
Вылятаççĕ кăмăлне,
Çитнĕ, тейĕн, çуркунне.
Чакăр куçлă пĕр пике
Маншăн пулчĕ мур пекех:
Яш пăхрĕ те куçăмран,
Тăп чарăнтăм ун тĕлне,
Кăн хытса тăрап, айван.
Шур кăçатă уринче,
Çут калушĕ ун çинчен,
Пурçăн тутăр пуçĕнче;
Çурхи кăчăк çăмĕнчен
Çыхнă шурă перчетке
Унăн тăп тăп аллинче.
Аш хыптармăш çав пике
Юлчĕ чунăм тĕпĕнче.
Çавăнтан вара ман темшĕн
Пĕр юрра чĕрем усрать:
„Эп каламăп, эс пĕлместĕн —
Чунăм çулăмсăр çунать“.
Мĕн тăвар-ха, мĕн тăвар?
Эп чăваш та, кунти мар —
Аслă Атăл хĕрринчи,
Шупашкар патнерехри...
Çитĕ, çитĕ, çитĕ, чим,

Лăплансам, поэт чĕри,
Иртнĕскерĕ ирттĕри!

Элĕк шкулĕ пит ĕлккен,
Иван Яккăльч ячĕпе
Хисепре тăрать иккен.
Такçие чаратăп эп,
Çĕлĕке хыватăп эп,
Шалалла кĕреп хуллен,
Ирткелеп çын хушшинчен
Пысăк залăн варринче
Урна тенĕ ешчĕк пур,
Çăрапах питĕрнĕ, кур,
Пур пичет те ун çинче.
Яшшисем те ваттисем,
Вăкăр пек вăйпиттисем
Шав тухаççĕ пĕр класран
Бюллетень хутне тытса,
Урна сывăхне пырса
Вăш яраççĕ çурăкран.
Бюллетенĕсем çине
Çырнă сумлă ятсене,
Кам-камне кала-кала
Ăнлантарнă чăвашла.
Пĕр стена çинчен, çӳлтен,
Ачасем ăсталаса
Ешĕл чăрăш лăссинчен
Çавăрса-явкаласа
Тунă рама хушшинчен
Шур сухаллă çын пăхать
Уншăн—халăх аллинче
Кĕнеке пурри паха.
Сакăрвунă çул малтан
Çав старик (ун чух яшскер)
Пит тертпе, асаппалан
Хăйĕн аллипе çырса
Малтанхи букварь парсан,
Пирĕн халăх ку хатер
Çĕкленсе каяссине
Чухлайман та пулмалла.
Чăн-чăн аслă çул çине
Халăх тухрĕ урăхла.
Ав ăна çĕклекенсем,

Чăн телей кӳрекенсем:
Тĕпелти стена çинчен,
Ешĕл Горки пахчинчен
Иккĕш харăс тинкерсе
Пăхрĕç, кăмăллăн кулса,
Пур çынна та пил туса.
Çавă ик сăнра кăна
Пирĕн аслă саманан—
Ăшшĕсен, ывăлĕсен
Ĕмĕрхи ĕмĕчĕсем
Сыпăнса, çитсе пыран
Саманан—вăйне куран.

Ак хайхи коридорта
Ячĕç леш хуткупăса.
Тăпăр-тăпăр-тăпăр та
Чăнкăр-чăнкăр тутарса
Виçĕ мăшăр харăсах
Орденне те медальне,
Хутăш—кĕмĕл тенкине
Çиçтереççĕ çаврăнса,
Хушăран çын хушшине
Сапалаççĕ такмакне:

„Сăмахне сăмахлăр та,
Халĕ ирĕк хамăрта:
Ялта ят яракана
Суйламастпăр Совета!

Наяна та кахала
Пур çĕртен те хăвала!
Килте ахаль лариччен
Кĕрĕк арки йăвала.

Самокритик мĕн тени?
Тĕкĕр витĕр тинкерни.
Пит-куçу хура пулсан,
Супăнь пĕтнĕ тетĕн-и?.."

Кулнă сас каять таçта.
Пĕр-пĕрне тĕрте-тĕрте,
„Пултарать, ача-васка!"
Тет каччи те, хĕрĕ те.

Çитрĕ манăн та черет,
Хăлхана хам ят кĕрет:
— Сăвăçа итлесчĕ!—тет
Малтанхи пĕр виçĕ рет.
Йăлăна та йăлăна
Çук вăл ман ыйттарасси.
Пирĕн сăвă каласси
Кĕрсе кайрĕ й ă л а н а.
(Хаçатла каларăм та,
Пит ан тиркĕр хаçата.)

Тухрăм сăвă калама,
Пăхса илтĕм хам умма:
Карчăк тутăр айĕнчен
Хăлхине кăларкалать,
Старик чĕлĕм чĕртнĕччĕ—
Халь хыпи-хыпми ларать;
Урхамах пек йĕкĕтсен
Куçĕ мăч та хупăнмасть,
Пăрчăкан пек хĕрĕсен
Кăкăрĕ те хусканмасть.
Пур вĕт-шак ушкăнпала
Ларчĕ, тӳнчĕ чи мала.
Сак çитмест, пукан çитмест,
Урайне те тиркемест.
Ма вĕсен куçĕнче вут?
Мĕн кĕтет çак пин чĕре?
Эп ăнлантăм тепĕр хут:
Сăвă – кирлĕ тĕнчере.
Кирлĕ витĕр витекен
Чăн сăмах кунта тухма,
Сăвăçран çавна илтсен
Халăх хатĕр тем тума.
Чăн сăмах ялан пыл мар,
Хăш чухне—сухан, кикен,
Хăш чухне вăл шар тăвар:
Йӳçĕ те—кирлех иккен!
Пĕрин хыççăн теприне
Хамăн пуç кушелĕнчен
Кăларап сăввăмсене,
Тĕрĕслеп çын хушшинче.
Хăшĕ вăрăм ытлашши:
Хăлчăк-хывăх ăшĕнче

Çухалса каять тĕшши,
Хăш сăввин çитмест ăшши,
Хăш сăмахĕ—кĕленче
Айĕнчи çеçке йышши:
Тĕсĕ пур та, çук шăрши!
Хăш сăмахĕ—пуш чечек,
Хăшĕ—шăши вучĕ пек:
Çутатать те—хĕмленмест...
Пĕтĕмпех куратăн эс
Аслă халăх куçĕнче.
Пĕр сăмахсăрах сана
Пĕлтерет вăл ун çинчен—
Асăрха кăна, сăна...

Вăхăт кайрĕ вăраха:
Хал кĕртсе те култарса,
Шухăш шухăшлаттарса,
Кăмăлне те тултарса,
Аллине те çуптарса
Эп хăвартăм халăха.
Ман шоферăм, шеремет,
Такçине пăрахнă та
Чиперех иккен итлет
Ман сăвва коридорта.
Иксĕмĕр те тухрăмăр,
Лартăмăр та вĕçрĕмĕр.
Çывăх марччĕ çулăмăр,
Тури Вылччĕ тĕлĕмĕр.

Тукташ юлчĕ ту хыçне,
Тавăт пулчĕ куç тĕлне.
Суйлав кунĕ ячĕпе
Клубĕнче буфет ĕçлет.
— Черккисем пăхма чипер,
Тытма та çаплах-ши?—тет
Ман шоферăм, çивчĕскер.
Тытса пăхрăмăр пĕрер—
Чиперех пек туйăнать.
Ак ялйыш та пухăнать—
Суйлани, суйламанни—
Клуб тулли колхоз çынни.
Пур пичче те пур инке,
Кĕр те шав тăвать иккен.

— Камит мар вĕт, мĕн кĕрен?—
Тет пĕри шалтан, лерен—
Çĕмĕрлеççĕ çĕрĕн, тен:
„Кай-ха эсĕ камитпе!
Сăвăç килнĕ, амикке!“
(Шупашкар камичĕсем!
Айăп ан тăвăр мана:
Халăхра мĕн илтнисем
Кĕрсе юлнă хăлхана).
Тавăтсене тав туса,
Синерсене систерсе,
Хитексене хĕтĕртсе,
Ураскилт урлă каçса
Тури Выла тухрăмăр,
Акă мĕн-мĕн куртăмăр.

Çимĕк мар, çула та мар—
Шартлама хĕл уйăхĕ.
Чĕрере çунсан кăвар,
Сивĕ пысăк хуйăх-им?
Пăнтăр-пăнтăр параппан
Илтĕнсе каять таçтан.
Камăн туйĕ-шыльăкĕ?
Кам телейĕ-ырлăхĕ?
Авăнас-тăк авăнас,—
Тенĕ çĕмĕрт пĕкечи.
— Авланас-тăк авланас!—
Тенĕ Тури Выл ачи.
Çимĕкчен-ха тем пулас:
Те писес, те куçăхас,
Те тата хитре хĕре
Тепĕр каччă куç хывас...
Чўпĕк мар-çке-ха чĕре!
Халь шăпах тата суйлав,
Шăп праçник те шăп уяв.

Хĕлĕн кунĕ—хĕр ыйхи:
Анасларĕ, карăнчĕ,
Куçне хупрĕ те хайхи
Тĕттĕме вăл парăнчĕ.
Уйăх çулă чăкăт пек
Пĕлĕтри кĕрекере.
Алтăр çăлтăр, аврипе

Çавăнса, чĕнет пирĕ:
Тытăр, ăсăр-ха сăра,
Сывлăх сунăр мăшăра!

Ак сасартăк илтĕнчĕ
Хĕрĕн ашшĕ килĕнче
Ĕмĕрхи, тен, пин çулхи
„Тухать-и те тухмасть-и“.
Туй çынни карташ тулли:
Çамрăк-кĕрĕм те ватти,
Вĕтĕр-шакăр, вăйпитти,
Авалхи пек каласан—
Куçĕ-пуçĕ куракан,
Урипеле утакан,
Шуç чуманпа шăвакан,
Сăмсипеле сывлакан—
Пурте пынă туй курма.
Хĕрĕ тухрĕ пӳрт умне
„Хĕр йĕрсе“ йăла тума,
Пурте пăхрĕç ун çине:
Авалхи пĕркенчĕк мар—
Пурçăн тутăр варкăшать.
Пичĕ-куçĕ—пархатар
Курмалла пек ялкăшать.
Хĕрçумми хĕрсен юрри
Йăпатать те çупăрлать:
„Макăр, макăр, ай, Мари,
Макăрмасăр кам каять?..“
Мари тутăр айĕнчен
Йăл кулса илет чеен.
Кĕреке кăшт тăсарах
Янратать çавра-çавра:
„Хĕртен арăм пулнă чух
Макăрни те килĕшет...“
Çук! Ку хĕрĕн куççуль çук,
Ан та пултăр!—тес килет.

Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать,
Туй лаши пуçне ухать,
Кукалет те—çĕр тухать.
Пĕвĕ-сийĕ пит капмар,
Яш та мар, ватах та мар,

Хулĕ урлă çакнă хăй
Те сурпан, те питшăлли,
Куçĕнче курнать-ха вăй,
Аллинчи курки—тулли,
Те туйпуç, те мăнкĕрӳ—
Пычĕ тăчĕ ман пата,
Сăмахне çапать хĕрӳ,
Вăтантарчĕ тупата:

„Эс те—эсĕ, эп те эп,
Тахçанах сана пĕлеп.
Эс çыран хушамата
Илтменни те çук кунта;
Митрахван мучи кăна
Илтеймен пуль халь ăна.
Айăп тумăн старике,
Вăл—хăлхасăр хĕрĕх çул.
Эс эппин? Хăвах иккен?
Пирĕн савнă хăна пул.
Указне те куртăмăр,
Вуласа та тухрăмăр:
Эсĕ—халăх сăвăçи,
Халăхпа халь ĕç те çи.
Пирĕн халăх туй тăвать,
Туй тăвать те çуй тăвать;
Пăх та кур, пăхмалăх пур,
Юратсассăн—юрă хур.
Кăрнатир пек каччăмăр
Куçпа çиçĕм çиçтерет.
Хăй те çав, пытармăпăр,
Служить тунă гвардире.
Чыслă тăнă салтакра,
Пиллĕк пулнă парадра
Шăп Мускавăн чĕринче,
Хĕрлĕ площадь варринче.
Мĕн каласси пур ара!
Хĕрĕ те хĕрех вара,
Эс асту-ха ун умне:
Тенкинчен те йывăрах
Çакнă орден-медальне,
Мĕн тесси ĕнтĕ хĕре!—
Касра мар, ялта пĕрре.
Вăрламан, тухса кайман,

Çураçман, укçа паман,
Саламат та, евчĕ те
Кирлĕ мар халь йĕкĕте.
Кăшт, илемшĕн тенĕ пек,
Савăнатпăр çаплалла.
Туй та тумасан, мĕнпе
Çак куна асăнмалла?
Икĕ чун пĕр чĕм пулса
Пĕрлешет-çке юратса.
Кун пекки хĕрпе качча
Тивĕçет пĕрре анчах.
Эсĕ, халăх сăвăçи,
Мăшăра кăмăлласа
Кăшт кăна такмакласан,
Сана айăп тăвĕç-и?.."

Халăх, халăх тенĕрен
Хал çĕкленчĕ çĕнĕрен.
Тăтăм эп çуна çине,
Куртăм çын пичĕсене,
Сисрĕм сăввăм кирлине.
Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать,
Туй лаши пуçне ухать,
Кукалет те—çĕр тухать.
Туй çынни мана тăнлать,
Мав такмак çапла пулать:

— Тавсси, тантăш-тăвансем!
Авалхи йăлапала
Ман кунта каламалла
Саламалик сăввисем.
Утмăл çухрăм сĕм вăрман,
Çитмĕл çухрăм çеçенхир...
Халиччен килсе курман
Çĕршывра паян эпир.
Эсир курнă курасса,
Эпĕ—килтĕм пуçласа.
Айăп ан тăвăр мана:
Тĕнче пысăк, çĕр çавра,
Çитменне пăртак кăна
Çул та пулчĕ пуль тавра...
Вăрманпа эп иртнĕ чух

Тĕл пулмарăм такмакри
Каçăр пуçлă пăлана,
Амăрткайăкĕ те çук:
Пуртăпа пăчкă юрри
Кĕрсе кайрĕ хăлхана.
Илтрĕм эп п ă л а н, п ă л а н
Тенине те хушăран.
— Ăçта?—терĕм те, айван,
Кулчĕ ман шофер манран.
Юмахра йăпанмалли
Мар иккен вăл, чăн-чăнах
Çĕршыва вăйлатмалли,
Халăха пуйтармалли,
П ă л а н мар-мĕн—п л а н сăмах
Çеçенхирĕн варринче
Эп курмарăм урхамах
Çак „Победа“ ăшĕнче
Ялти ăшă пӳртри пек
Иртрĕм эп çеçенхирпе.
Çитрĕм пулĕ вăхăта?
Çапла мар-и, эй, хăта?!—
„Вăхăта-çке! Лăп та шай!“
Тет ялйыш унтан-кунтан
Ман сăмах лăпланнă май
Илтĕнет юрри шалтан:

„Кĕлту, кинĕм, апуна
Сарă, вăрăм тунăшăн
Пил ту, амăш, ачуна
Ырă ятлă пулнăшăн

Шурă-шурă çăмарта
Шуратрăмăр—çирĕмĕр
Ах, кинĕмĕр Мари пур,
Юратрăмăр—илтĕмĕр..“

Карташне пĕр кĕтессе
Ĕмĕрхи туйарăмсем
Сикрĕç тухрĕç хĕрĕнсе
Сĕрме купăс сĕрнĕçем.
Умĕ сумĕ—йăтсан йăт!—
Çутă кĕмĕл çуршар пăт.

— Чимĕр-ха! Калана чух
Сăвăҫа итлемелле!..
Тет пĕри таҫтан каллех
Мĕн калас халь тин кунта?
Халăх — вĕркĕч, эп — кăвар.
Ытлашши хĕрсе тата
Кăвартан кĕл пулас мар
Асилер те поэта,
Туй тăвар та шеп тăвар!

Ҫавраҫил пек пĕр матка
Вĕҫрĕ тухрĕ варрине;
Ҫаптарать хăй такмака
Йĕкĕлтет ҫĕнĕ кине:

„Эс те ҫын та эп те ҫын,
Кĕпӳне кăтарт-ха, кин, —
Крепдешин та файдешин!
Кăмăл тулчĕ ĕнтĕ тин“

Пĕр старик патне пырать
Каҫăр карчăк варкăшса,
Шурă тутăр ҫавăрать
Кăшт хăяккăн чалкăшса:

„Кăчăк туртрăм — пымарăн,
Алă сĕлтрĕм — юлмарăн,
Хĕрĕх те пĕр хĕр ҫинче
Мансăр пуҫсăр тупмарăн.

Эх, старикĕм — ҫумҫакки!
Пур-ши урăх сан пекки?
Татăп ывăтăп тесех
Ҫирĕпленчĕ йăлмакки.

Сакăр улăм — сарă ул,
Тăвăп тăххăр та, ан кул,
Хăвăнта хевте пулсан —
Эпĕ хатĕр, илтнĕ пул!

Эпир апла марччĕ-ҫке,
Эпир капла марччĕ-ҫке.
Маххă памăпăр, старик:
Пулсан пултăр теҫетке!“

Ав, атьсемĕр, пăх та кур:
Те пуса каччи, те мур,
Те ахаль ялти маттур,
Ах тур-тур ташлать сатур,
Такмакки те хăйĕн пур:
„Пăнтăр-пăнтăр параппан,
Параппанне çапакан
Пархатарне курĕ-ши?
Курĕ-ши те курмĕ-ши,
Пире пултăрччĕ ташши...“

Ак унпа ăмăртмалла
Тухрĕ нар пек сăнпала
Ман шоферăм, яш Якку,
Урăм-сурăм Тапаккух,
Пычĕ тăчĕ хĕр умне,
Тарăс тапрĕ урине:

„Арăм çук—парăм çук,
Хуньăм çук—хуйхăм çук.
Пуç тавра шухăшласан,
Санран савнă çыннăм çук.
Тух, тух, тух, тух!

Çул çук, йĕр çук,
Ни урапа, ни çуна.
Эпĕ çитмен çĕр çук,—
Ман машшинĕ—çилçунат.
Тух, тух, тух, тух!

Ах чух, эпĕр чух,
Йĕкĕт чух, хĕр чух,
Икĕ чун пĕр чух,
Пўрне тулли çĕрĕ чух!
Тух, тух, тух, тух!
...Ух!!“

Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать...
Туйĕ каирĕ хускалса
Çĕрĕпех çывăрмасса.
Çĕр иртет те кун иртет,
Тепĕр кас пулса çитет—
Тури Вылта туй сикет:

Выласене вылятса,
Янкураса янратса,
Асамата астарса,
Хирлепсене хиртерсе,
Пинерсене пĕлтерсе,
Шĕнтрешсене шĕвĕртсе,
Йăлкăшсене йăпатса,
Хутарсене хускатса
Тури Вылта туй сикет,
Ман çапла калас килет
Аллă çыннăн аллипе,
Хĕрĕх çын хĕрĕвĕпе,
Вăтăр çыннăн вăйĕпе
Тунă туйăн сăрипе
Выла йышĕ вăйлантăр,
Саватерĕ савăнтăр,
Мулкач касси муллантăр,
Ырлăх пĕтĕм таврипе
Сар хăмла пек сарăлтăр,
Ярапа пек явăнтăр!
Çĕр иртет те кун иртет.
Тури Вылта туй сикет,
Пĕтĕм халăх туй тăвать,
Туй тăвать те çуй тăвать,
Çук ăна чарас хăват!

Çитрĕ пуле. Çырлахсам,
Çичĕ сыпăклă сăвва
Авалтан сума сăван
Юрă ашшĕ! Эпĕ сан
Аруна, йăхна-тĕпне,
Тавращна та несĕлне
Пĕлейместĕп, ан ятла
Йăпанап çакăнпала:
Сакăрвунă самана,
Тăхăрвунă тамаша
Курнă халăхăм мана
Ăнлансассăн—мĕн нуша
Эп камран вĕреннине
Тĕпчемешкĕн пит ăна?
Хăварар ыттисене
Çав чăнах та н у ш а н а
Тен, Сироткин çырĕ-ха—

Якку ывӑль Михала,
Сӑвапа та ҫылӑха
Виҫӗ вӑл мӑскалпала.
Тен, мана, екки ярсан,
Яланхи пек юпкурсан,
-Авалхи ятсемпеле
Танлаштарӗ Таниле—
Хветӗр ывӑль Микула:
Эп пит тусчӗ унпала,—
Гусӑн тустарас пулать.
Тен, Чарлан Раисӗ те
Сыпӑнтарӗ ӗмӗте.
Е вӑл ҫивчӗ перипе
„Апла мар та капла мар!"
Тесе туртӗ чӑр та чар
Эпӗ халӗ ҫӗрӗпе
Ёҫлесе ларан сӑвва.
Вӑл вут чуль ҫинчи ӑвва
Чакмапа ҫапса кӑвар
Чӗртесси ҫеҫ мар-ҫке-ха:
Чултан мар, чунтан чӑл-пар
Сирпӗнсе хӗлхем тухать!
Тен, Якку Наумӗ те—
Леш Любим тавраш ачи—
Мана кӳртӗ ӳкӗте
„Чим-ха,—тейӗ,—чим-ха, чим,
Лар-ха парттӑ хушшине,
Пӑх-ха эсӗ ху ҫине,
Ёлӗкрех мӗнлеччӗ те,
Халь мӗн евӗр упӑте!"
Тен, эпир хисеплекен
Петӗр ывӑлӗ Ҫемен—
Горски тухтӑр та часах
Чухлӗ манӑн чир-чӗре:
„Кай-ха,—тейӗ,—лекӗре,
Чӗлхӳне пӑртак юса..."

Тайӑн, пуҫӑм, тав сире!
Тӗрлӗрен пулать ӗҫре.
Мӗн пулсан та, тусӑмсем,
Вӗҫленеҫҫӗ ку ӗҫсем.
Ҫитменнине ҫитерӗр,
Тессӗм ҫук эп, пӗлетӗр:

Хамӑнах ҫитермелле.
Халлӗхе пӗр мехеле
Чарӑнатӑп пупleme,
Чарӑнап та—ӳлӗме
Ҫӗнӗ хут листи сиреп...

Тайӑн, пуҫӑм, тав сире!

1951

# Тӗнчере мӗн вайларах?

*Юмах*

*Н. Р. Романова*

Халӑх ӑсӗн ҫӳпҫинче
Тупнӑ эсӗ ҫак ӗнче.
Эс курман пулсан, хальччен
Пӗлес ҫук ӑна тӗнче.

Якатмах ҫитмерӗ хал,
Тен, ӑсталӑх та сахал
Пӗчӗк ӗҫӗм те пулин
Пултӑрах сана халал!

* * *

Пӗр патшан хӑй килӗнче
Пӗлес килнӗ пӗринче:
Пуринчен вӑйлӑраххи
Мӗн-ши пирӗн ҫӗр ҫинче?

Кам та кам чӑнне калать
Ҫав ҫынна патша паратъ
Ҫур патшалӑхне,—тесе
Халӑхра вӑл сас саратъ.

Ак хайхи патша патне
Унӑн чаплӑ кил-ҫуртне
Тӑхӑр ҫын пуҫтарӑнать
Ҫав хавас хыпар ятне

Пырса ҫитрӗ чи малтан
Ҫил арманӗ пӑхакан,

Мелник тейĕпĕр кĕскен
Пит сăмах вакланасран.

Иккĕмĕш—вутран-хĕмрен
Инкек курнă çын иккен.
Виççĕмĕшĕ—пулăçă
Сĕреки-атмипелен.

Тăваттăмĕш—тимĕрçĕ,
Килсерен вăл кирлĕ çын;
Пиллĕкмĕш—çар пуçлăхĕ,
Витĕмлĕ те вирлĕ çын.

Улттăмĕшĕ—яш кăна
Сарă каччă. Мĕн ăна?
Сарă хĕр савать пулсан,
Мĕн çитмен-ши ачана?

Çиччĕмĕш—чыса пĕлмен
Выçă куç усламçă-мĕн.
Саккăрмĕшĕ—евчĕскер
Йăпăлти чĕлхипелен.

Тăххăрмĕш çынни камне,
Вăл мĕскер ĕçленине
Пĕлеймерĕмĕр эпир,
Тамаша тенĕ хăйне.

Те виртленĕ чăваша
Те юптарнă пĕр кукша,
Те ку ят, те хушамат?—
Пирĕн çук-ха вăл нуша.

Ак патша çав сынсене
Лартрĕ хăйĕн çывăхне:
„Пуринчен вăйли мĕскер?
Калăр,—терĕ,—тĕрĕсне!“

Сăмаха мелник пуçлать:
„Чи вăйли вăл çил пулать,
Ху пĕлен—мĕн йывăрăш
Чулсене вăл çавăрать.

Урăм-сурăм тапрансан,
Тӳс кăна вара арман!
Çунатне те шарт хуçать
Хăш чухне вăл пит ассан..."

Çуннă çын тăнларĕ те,
Хаш кăна сывларĕ те,
Хушрĕ хăйĕн сăмахне:
„Чи вăйли çил мар-ха,—тет,—

Çил часах вăл ывăнать,
Ывăнать те чарăнать.
Çуната хуçса кайсан,
Тӳрлетме пулать ăна.

Пуринчен вăйли вăл—вут,
Акă çунчĕ те ман çурт—
Çӳпĕ те юлмарĕ!" тет
Хуйхăрса вăл тепĕр хут.

Пулăçа ку килĕшмест,
Вăл калать: „Вут, тетĕн эс,—
Вăл часах çунса пĕтет,
Шыв-шура мĕн çĕнтерес?!

Шыв вута та сӳнтерет,
Пĕвене те çĕмĕрет,
Кӳлĕрен тухса тарать,
Тĕпсакай тĕпне кĕрет.

Шыв хăватлă пуринчен!"
Тет çаксквр юлашкинчен.
Акă тимĕрçĕ тăрать,
Пурте пăхрĕç кусĕнчен.

Вăл калать хăй шухăшне:
„Шыв хăватлă—çуркунне,
Çĕкленсе таçта-таçтах
Сарăлать вăл ун чухне.

Çăва тухрăн—шăрăхра
Вăл типме те пултарать.
Шартлама хĕлле тата
Пăрлансах каять вара.

Тимĕр—вăйлă чăн-чăнах,
Çитекенĕ çук ăна.
Тимĕр пуртă ÿкерет
Виç ытамлă юмана.

Тимĕр тупă инçене
Çитерет етресене,
Тимĕр вут та кăларать
Перĕнсессĕн чул çумне.

Тимĕр хĕç, кирлех пулсан,
Тиркемест, шăлмасть пуçран:
Улпутне те чиперех
Вăл касать, пĕлсе сулсан".

Ак çар пуçлăхĕ пуплет:
„Тимĕре ман çар пĕлет—
Тупă та, пăшал та пур,
Хĕç те, сăнă та пур,—тет.—

Анчах акă мĕн пăсать:
Тимĕр-тăмăр тутăхать.
Паттăр вăйлă пуринчен!
Ман сăмахăм чăн пулать.

Эпир паттăр пулнăран
Хирĕнет, ÿкет тăшман.
Кам патшалăха сыхлать?
Кам иртейĕ паттăртан?

Паттăр вăрçă та вăрçать,
Ĕçĕ те ун ăнăçать,
Паттăра хисеп те чыс!"
Халĕ каччă калаçать:

„Паттăр—вăйлă, ку паха,
Тиркеместĕп сăмаха.
Сарă хĕр çав паттăра
Илĕртсен, мĕн калăн-ха?

Ытарма çук хĕр çине
Кам хурайтăр аллине?
Хĕр пултарĕ çавăрма
Патшана та хăй енне!

Пăхса илĕ те пĕрре—
Тапса сикĕ те чĕре.
Тем тесен те, чи вăйли—
Хĕр илемĕ тĕнчере".

„Ха-ха-ха!—кулса ярать:
Ват усламçă, ахăрать:—
Сарă, хӳхĕм хĕрсене
Кĕмĕл сум пăхăнтарать.

Тĕнчере вăйли—укçа!
Вăл пурне те хăй хуçа.
Укçапа ухмах та халь
Улпутла ухать пуçа.

Пĕлмесен укçа пухма,
Ыр улпут та—тăр ухмах
Пуп укçашăн пултарать
Икĕ хут венчет тума.

Укçапа упа ташлать,
Тĕрме алăк уçăлать.
Вăр-хурахăн мăйĕнчи
Тимĕр сăнчăр татăлать.

Çав укçасăр—мĕн калас!—
Патша хăй те пурнаймасть"
Çын силлерĕ енчĕкне,
Чăнкăр-чăнкăр турĕ сас.

Усламçа итле-итле,
Евчĕ хушрĕ кăшт шӳтле:
„Укçа вăйлă та, анчах
Вăл пымасть-çке пур тĕле

Укçан кусĕ çук, тесе
Сăмахлаççĕ этемсем.
Пĕлмелле ăна тупма,
Кĕт-ха эс вăл кĕрессе!

Шăмăсăр чĕлхе—ак мул!
Парăнми пĕр паттăр пул,
Касăр каччă, хӳхĕм хĕр—
Чĕлхе çавăрĕ, ан кул!

Усламҫа усламҫӑ та
Чӗлхепе часах лартать.
Кӗҫӗнни асла тухма
Чӗлхепех йӑпӑлтатать.

Пуҫлӑхсем пур халӑха,
Патшасем патшалӑха
Чӗлхепе пӑхӑнтарса
Тыткалаҫҫӗ мар-и-ха?

Вӑй вӑл—шӑмӑсӑр чӗлхе,
Ҫав хуҫа ӗмӗрлӗхех
Ҫакӑ пирӗн тӗнчене,—
Пӗл, патша, тӗрӗслӗхе!"

Сакӑр ҫын ҫапла пайтах
Тӑкрӗ, авӑртрӗ сӑмах.
Патша уйрӑм уҫҫине
Тупаймарӗ-ха ҫапах.

Тамаши шарламанран
Ыйтрӗ вӑл Тамашаран:
„Кам каларӗ тӗрӗсне?
Мӗн вӑйли сан шутпалан?"

Пуҫне хыҫрӗ Тамаша,
Пӑртак кайрӗ шухӑша,
Вара хушрӗ ерипен:
„Чӑн сӑмах вӑйлӑ, патша.

Чӑн сӑмах ҫил пек вӗҫет,
Чӑн сӑмах хӗҫ пек витет,
Ҫурхи шыв пек сарӑлса
Пур ҫӗре те вӑл ҫитет.

Чӑн сӑмах вӑл паттӑра
Чӗрӗ вай парса тӑрать,
Халсӑра вӑл хал кӳрет,
Сар хӗре ӑслантарать.

Чӑн сӑмахӑн хӑватне
Пӗтерес теекене
Ҫакӑн пек усламҫӑсем
Йӑлт параҫҫӗ усламне.

Чăн сăмах суеçĕсен—
Çакăн евĕр евчĕсен—
Суйине те кăларать,
Итлеме пăртак пĕлсен.

Чăн сăмах вутра çунмасть,
Кивелмест, шывра путмасть,
Тутăхмасть, çĕрте çĕрмест,
Ĕмĕрне те ватăлмасть.

Чăн сăмахсăр халăх та
Саланса каять таçта.
Ман сăмахăм чăн, патша.
Сан мĕнле-ши-ха тата?

Сăмаху çине тăрсан,
Сăмахна тытан пулсан,
Çур патшалăхна мана
Памаллах пулать халь сан“.

Ку патша иккен хайхи
Пулнă евчĕ хăраххи.
Талпаса çапма кăна
Пĕлнĕ ун чее чĕлхи.

Нимĕн те памарĕ вăл,
Хуралне каларĕ вăл:
„Хăвалас та кăларас!“
Çаврăнчĕ те кайрĕ вăл.

Анчах çав Тамашанне
Халăх илтрĕ сăмахне:
Патшаран вăл çавăнтах
Туртрĕ илчĕ çĕршывне.

Кĕç хăйне те патшана
Кайса ячĕ катана,—
Çичĕ тинĕс уттинче
Тăна кĕртрĕ вăл ăна.

Юмахне юптарнă чух
Шав пырать пĕр калаçу:
Тĕрĕс çав, чăн сăмахран
Хăватли тек ним те çук!

1952

# ТУПМАЛЛИ

Стр.

*И. В. Сталина* . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Сталиншăн, Тăван çĕршывшăн, миршĕн!**

Халăхсен Ашшĕне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Ватă колхозник юрри . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Тавтапуç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Мухтав аслă Ленина! Мухтав аслă Сталина! . . . . . . . 11
Суйлавра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Çамрăксен маршĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Студентсен ăсату юрри . . . . . . . . . . . . . . . 15
Пурлăх юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Мухтав юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Тăван çĕршыв . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Кĕреке юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Эпир Российăра пурнатпăр . . . . . . . . . . . . . 21
Аслă çулпа . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Салам, Мускав! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Эп—Советлă Союз гражданинĕ . . . . . . . . . . . . 25
Çĕнтерӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Миршĕн! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Пултăр мир! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Мир юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Тинĕсрен тинĕсе . . . . . . . . . . . . . . . . . . 34
Репродуктор умĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Урама тухар хаваслăн . . . . . . . . . . . . . . . 37
Чарар! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Çак кунсенче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Горкăри çуртра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 46
Чĕре юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 59
А. А. Жданова асăнса . . . . . . . . . . . . . . . 81

Клара Цеткина асăнса . . . . . . . . . . . . . . . . . 82
Сен Катаямăна асăнса . . . . . . . . . . . . . . . . . 83
Никос Белоянниспа ун тусĕсем çинчен . . . . . . . . . 84

## Ăсталăх ячĕпе

Аван-и, Пушкин! . . . . . . . . . . . . . . . . . . 87
Максим Горькие . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 92
Колонлă залра аса илни . . . . . . . . . . . . . . . 93
Федерико Гарсия Лорка . . . . . . . . . . . . . . . 95
Мицкевич . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 97
Павло Тычинăна . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 98
Николай Тихонова . . . . . . . . . . . . . . . . . . 99
Сулейман Стальский . . . . . . . . . . . . . . . . . 100
Поль Робсон . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 101
Джамбул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 102
Гади Такташа . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 103
Константин Иванова . . . . . . . . . . . . . . . . . 105
Нарспи çĕршывĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . . 107
Пирĕн Çеçпĕл Мишши . . . . . . . . . . . . . . . . 113
Поэт тăпри çинче . . . . . . . . . . . . . . . . . . 115
С. В. Эльгере . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 116
О. И. Ырсеме . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 118
Художнике . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 119
Скульптора . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 121
Композитор патĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . . 122
Асилӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 123
Кимĕпе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 124
Бакен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 125

## Вутра шăраннă кăмăл

Салампи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 129
Аннене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 134
Тĕлĕк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 136
Çиле хирĕç çӳрен ут юртать . . . . . . . . . . . . . 138
Салтак фляги пуш-пушах . . . . . . . . . . . . . . . 139
Харсăр ăмăрткайăк . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
Орден . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 142
Манăн çăлтăр тӳпере! . . . . . . . . . . . . . . . . 147
Шинель . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 148
Сăпка юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 150

## Хамăр ялтан


Кĕрхи кĕреке . . . . . 153
Уняхви . . . . . 156
Çунатлă хĕр . . . . . 159
Тавлашу . . . . . 162
Юлашки . . . . . 168
Каллех ак эп çуралнă çĕршывра . . . . . 177


## Çулсем-йĕрсем

Çулсем-йĕрсем


Хура каç. Шурă юр. . . . . . 185
Тинĕс çинче . . . . . 187
Сăвă мĕнле çитĕнет . . . . . 189
Муза . . . . . 191
Икĕ сăн . . . . . 192
Шурă каç . . . . . 193
Хĕвел ури . . . . . 195
Археолога . . . . . 196
Савăш курки . . . . . 197
Вирьял хĕрĕсем . . . . . 199
Тăвата пĕр тăвана . . . . . 200
Тĕтĕм . . . . . 201
Тăван уй-хир . . . . . 203
Халăх чунĕ . . . . . 204
Салам . . . . . 205
Атăл кусĕ . . . . . 206


Кĕвĕленмен юрăсем


Шупашкара çитсе пыруçăн . . . . . 207
Чечек çуратчĕ çуркунне . . . . . —
Мĕскер, мĕскер эс ман куçран . . . . . 208
Ах, эп курсаттăм мăшăр куç . . . . . —
Атăлтан тухать çур уйăх . . . . . 209
Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл . . . . . —
Шупашкар çăкисем чечекре . . . . . 210
Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ . . . . . —
Пăлтăра шăналăк карнă . . . . . 211
Шурă-шурă Шупашкар . . . . . —


Латвире çырнисем


Тахçанхи тăван . . . . . 213
Пулăçăсем . . . . . —

Тунсăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 214
Пакшасем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Мĕнле-ши? . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 215
Ĕмĕт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Сарă сăвă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 216
Хуракăшсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Лăплану . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 217
Шăнкăрчăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Рак хуранĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 218
Турпас . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 219

## Çук çакна чарас хăват

Çуллахи талăк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 223
Тури Вылта туй сикет . . . . . . . . . . . . . . . 247
Тĕнчере мĕн вăйлăрах? . . . . . . . . . . . . . . . 268

П. Хузангай

# ПЕСНЬ СЕРДЦА

на чувашском языке

Цена 7 руб. 60 коп.

Редактор *Н. Ильбеков.*
Тех. редактор *И. Григорьев.*
Худож. редактор *М. Силкина.*
Художник *Л. Осинский.*
Корректор *И. Иртышев.*

НТ 00910. Подписано к печати 8-I-1953 г.
Объем 13,35 п. л. Бумага 84×108 1/32.
Тираж 5 000 экз. Заказ № 2638.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата
при Совете Министров Чувашской АССР

*г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*